Моисейӗн пӗрремӗш кӗнеки

ПУЛТАРНИ

1 [1]Пуçламăшӗнче Турă тӳпепе çӗре пултарнă. [2]Çӗрӗн сăнӗ-тӗсӗ те, нимӗн те пулман, тӗпсӗр шыв тӗлӗнче тӗттӗм тăнă, шыв çийӗн Турă Сывлăшӗ варкăшнă.

[3]Турă каланă: çутă пултăр, тенӗ. Çутă пулса тăнă. [4]Турă çутă аваннине курнă та, Турă çутта тӗттӗмрен уйăрнă. [5]Турă çутта — кун, тӗттӗме каç тенӗ. Каç пулнă, ир пулнă: пӗрремӗш кун.

[6]Турă каланă: шыв хушшинче тӗрек пултăр, вăл шыва шывран уйăрса тăтăр, тенӗ. [Çапла пулса тăнă.] [7]Турă тӗрек туса карнă та тӗрек айӗнчи шыва тӗрек тӗлӗнчи шывран уйăрнă. Çапла пулса тăнă. [8]Тӗреке Турă тӳпе тенӗ. [Турă ку аваннине курнă.] Каç пулнă, ир пулнă: иккӗмӗш кун.

[9]Турă каланă: тӳпе айӗнчи шыв пӗр çӗре пухăнса тăтăр та, типӗ вырăн тухтăр, тенӗ. Çапла пулса тăнă. [Тӳпе айӗнчи шыв хăйӗн вырăнне пухăнса тăнă та, типӗ вырăн тухнă.] [10]Типӗ вырăна Турă çӗр тенӗ, пухăнса тăнă шывсене тинӗссем тенӗ. Турă ку аваннине курнă. [11]Турă каланă: çӗр ешӗлӳсен, [хăй йышши, хăй евӗрлӗ] вăрлăх сапакан курăксем, çӗр çинче хăй йышши çимӗç туса, ăшӗнче вăрлăхӗ пулакан çимӗçлӗ йывăçсем ӳстертӗр, тенӗ. Çапла пулса тăнă. [12]Çӗр ешӗлӳсен, хăй йышши, [хăй евӗрлӗ] вăрлăх сапакан курăксем, [çӗр çинче] хăй йышши çимӗç туса, ăшӗнче вăрлăхӗ пулакан [çимӗçлӗ] йывăçсем ӳстерсе кăларнă. Турă ку аваннине курнă. [13]Каç пулнă, ир пулнă: виççӗмӗш кун.

[14]Турă каланă: [çӗре çутатса тăма тата] куна каçран уйăрса тăма, хăватсем кăтартма тата вăхăта, куна, çулталăка палăртса тăма тӳпе тӗрекӗ çинче çутăсем пулччăр; [15]çӗр çине çутă ярса тăмашкăн вӗсем тӳпе тӗрекӗ çинчи çутаткăçсем пулччăр, тенӗ. Çапла пулса тăнă. [16]Турă икӗ пысăк çутă тунă: пысăкрах çутине куна тытса тăма, пӗчӗкрех çутине каça тытса тăма тунă, çăлтăрсем те тунă; [17]Турă вӗсене тӳпе тӗрекӗ çине лартнă: çӗре çутатса тăма, [18]кунпа каça тытса тăма, çутта тӗттӗмрен уйăрса тăма лартнă. Турă ку аваннине курнă. [19]Каç пулнă, ир пулнă: тăваттăмӗш кун.

[20]Турă каланă: шывра чӗрӗ чунсем кӗшӗлтетчӗр; çӗр çийӗн, тӳпе тӗрекӗ айӗн вӗçен кайăксем вӗçсе çӳреччӗр, тенӗ. [Çапла пулса тăнă.] [21]Шывра пулса тăнă мăн пулăсене, шывра кӗшӗлтетекен пур тӗрлӗ чӗрӗ чуна Турă ăрăвӗ-ăрăвӗпе пултарнă, ăрăвӗ-ăрăвӗпе тӗрлӗ вӗçен кайăк пултарнă. Турă ку аваннине курнă. [22]Турă вӗсене пилленӗ: хунăр, йышлăланăр, тинӗс шывӗсене тулăр, çӗр çинче вӗçен кайăксем ӗрчеччӗр, тенӗ. [23]Каç пулнă, ир пулнă: пиллӗкӗмӗш кун.

[24]Турă каланă: çӗр ăрăвӗ-ăрăвӗпе чӗрӗ чунсем кăлартăр, выльăхсем, çӗлен-калтасем, тискер кайăксем ăрăвӗ-ăрăвӗпе кăлартăр, тенӗ. Çапла пулса тăнă. [25]Çӗр

Асăрхаттарни. Çак Кӗнекесене Синод авалхи еврей чӗлхинчен вырăсла куçарттарнă Библирен илсе куçарнă. Тăваткал скобкăра вырăсла куçаракансем Христос çураличчен III ӗмӗрте çитмӗлӗн грекла куçарнă Библирен илнӗ сăмахсене кăтартнă.

1-мӗш сыпăк. [1] Пс 88:12–13; 135:5; 145:6. Сир 18:1. Ин 1:3. Ап ӗçс 14:15. Евр 11:3. Ӳлӗм 14:7. **[3]** Пс 32:9. **[6]** Пс 32:6; 135:5; 148:4. Иер 10:12; 51:15. **[9]** Пс 32:7; 135:6. **[14]** Пс 135:7–9. **[16]** Аст 4:19. Иер 31:35. **[18]** Пс 103:19–20. **[21]** Иов 40:20. Пс 103:25. **[22]** Пулт 8:17. **[24]** Иов 12:7. Сир 16:31.

çинчи тискер кайăксене Турă ăрăвё-ăрăвёпе пултарнă, выльăхсене те ăрăвё-ăрăвёпе пултарнă, пур çёлен-калтана та ăрăвё-ăрăвёпе пултарнă. Турă ку аваннине курнă.

26Турă каланă: Хамăр сăнарлă, Хамăр евёрлё этем тăвар, вёсем тинёсри пулăсене, тӳпери вёçен кайăксене, [тискер кайăксене,] выльăх-чёрлёхе, пётём çёре, çёр çийён шуса çӳрекен мёнпур çёлен-калтана пуç пулса тăччăр, тенё. 27Турă вара Хăй сăнарлă этем пултарнă, ăна Турă евёрлё пултарнă; вёсене арçыннине, хёрарăмне пултарнă. 28Турă вёсене пилленё, Турă вёсене каланă: хунăр, йышлăланăр, çёре туллиех тулăр, ăна тытса тăрăр; тинёсри пулăсене, [тискер кайăксене,] тӳпери вёçен кайăксене, [пур выльăх-чёрлёхе, пётём çёре,] çёр çумён çӳрекен мёнпур чёрчуна пуç пулса тăрăр, тенё. 29Турă тата каланă: акă Эпё сире пётём çёр çинчи мёнпур курăка, вăрлăх сапакан тёрлё тёслё курăка тата йывăç çимёçё кӳрекен, вăрлăх сапакан тёрлё йывăç патăм,— çакă сире апат валли пулё; 30пётём чёрё чуна — çёр çинчи пур тискер кайăка, тӳпери мёнпур вёçен кайăка, çёр çийён шуса çӳрекен пур [çёлен-калтана] — апат валли Эпё пётём ешёл курăка патăм, тенё. Çапла пулса тăнă. 31Турă Хăй пултарнине пурне те курнă та: акă питех те аван. Каç пулнă, ир пулнă: улттăмёш кун.

2 1Тӳпепе çёре тата вёсен мёнпур çарне çапла йёркелесе туса çитернё. 2Хăй тăвакан ёçёсене Турă çиччёмёш кун тёлне туса çитернё, тумалли пётём ёçне туса çитерсе, çиччёмёш куна Вăл канлёхлё тунă. 3Турă çиччёмёш куна пилленё, ăна сăваплă тунă, мёншён тесессён Хăйён тумалли, пултармалли пётём ёçне туса çитерсе, Вăл çав куна канлёхлё тунă.

4Тӳпепе çёр çапла пулса кайнă, вёсене çапла пултарнă, çавăн чухне, Çӳлхуçа Турă çёрпе тӳпене пултарсассăн, 5çёр çинче нимёнле ӳсентăран та, нимёнле курăк та ӳсмен-ха, мёншён тесессён Çӳлхуçа Турă çёр çине çумăр çутарман, çёр ёçлесе тăма этем те пулман, 6анчах çёр çинчен пăс тухса тăрса пётём çёр питне шăварса тăнă. 7Çӳлхуçа Турă этеме çёрти тăпраран тунă, унăн ăшне чёрёлёх сывлăшё вёрсе кёртнё, этем вара чёрё чунлă пулса тăнă. 8Хёвелтухăç енче, Эдемра, Çӳлхуçа Турă рай пахчи лартса ӳстернё, Хăй пултарнă этеме çавăнта вырăнаçтарнă. 9Çӳлхуçа Турă çёртен тёрлё йывăç ӳстерсе кăларнă: пăхма — илемлё, апат валли лайăх пулнă вёсем; рай варринче вара чёрёлёх йывăçё тата ырăпа усала пёлтерекен йывăç ӳстернё.

10Рая шăварса тăмашкăн Эдемран юханшыв юхса пынă; унтан вăл туратланса тăватă юханшыв пулса кайнă. 11Пёри Фисон ятлă пулнă, вăл пётём Хавила çёрё тавра юхса выртать, унта ылтăн пур; 12çав çёрти ылтăн паха; унта бдолах тата оникс чулё пур. 13Иккёмёш юханшывён ячё Гихон [Геон]: вăл пётём Куш çёрё тавра юхса выртать. 14Виççёмёш юханшывён ячё Хиддекель [Тигр]: вăл Ассири умёнчен юхса иртет. Тăваттăмёш юханшывё — Евфрат.

15Çӳлхуçа Турă [Хăй пултарнă] этеме ертсе пынă та ăна Эдем пахчине — çавăнта ёçлесе тăма, пахчана сыхласа тăма — вырăнаçтарнă. 16Çӳлхуçа Турă этеме çапла вёрентсе каланă: эсё пахчари пур йывăçăн çимёçне те çийён, 17анчах ырăпа усала пёлтерекен йывăç çимёçне ан çи: унăн çимёçне çинё кун эсё вилмелле пулăн, тенё.

18Çӳлхуçа Турă тата каланă: этеме пёччен пурăнма аван мар; ăна пулăшса тăма хăй евёрлёскернех пултарар, тенё. 19Хирти мёнпур чёрчуна, тӳпери пур вёçен кайăка Çӳлхуçа Турă çёртен тунă, унтан, вёсене мёнле ят панине курас

[26] Пулт 5:1. Ăсл 2:23. Сир 17:3. **[27]** Пулт 5:1–2. Мф 19:4. Мк 10:6. 1 Кор 11:7. Кол 3:10. **[28]** Пулт 8:17; 9:1, 7. **[29]** Пулт 9:3. **[31]** Пс 110:3. Сир 39:21.
2-мёш сыпăк. [1] Ис 45:12. **[2]** Тух 20:11; 31:17. Евр 4:4. **[7]** 1 Кор 15:45. **[8]** Пулт 4:16. **[9]** Ӳлём 2:7; 22:2. **[11]** Сир 24:27. **[14]** Дан 10:4. **[17]** Рим 5:12; 6:23. **[18]** Еккл 4:8–9.

тесе, чӗрӗ чунсем хӑйсене этем мӗнле ят парӗ, çавӑн ятлӑ пулччӑр тесе, [вӗсене] этем патне ертсе пынӑ. [20]Этем пур выльӑх-чӗрлӗхе, тӳпери пур вӗçен кайӑка, хирти пур тискер кайӑка ят хурса тухнӑ; анчах этем валли ӑна пулӑшса тӑма ун евӗрлӗскерӗ тупӑнман. [21]Çӳлхуçа Турӑ этем çине тарӑн ыйхӑ янӑ; вӑл çывӑрса кайсассӑн, унӑн аяк пӗрчисенчен пӗрне кӑларса илнӗ те çав вырӑна ӳт илтернӗ. [22]Этемрен илнӗ аяк пӗрчинчен Çӳлхуçа Турӑ арӑм тунӑ та ӑна этем патне ертсе пынӑ. [23]Вара этем каланӑ: акӑ ку — манӑн шӑммӑмран илнӗ шӑмӑ, манӑн ӳтӗмрен илнӗ ӳт; артан, [хӑй] упӑшкинчен, илнӗрен ӑна арӑм тейӗç, тенӗ. [24]Çавӑнпа ӗнтӗ этем хӑйӗн ашшӗпе амӑшне пӑрахӗ те арӑмӗ çумне çыпçӑнӗ; вара [иккӗшӗ] пӗр ӳт пулӗç. [25]Вӗсем иккӗшӗ те — Адам та, арӑмӗ те — çарамас пулнӑ, пӗр-пӗринчен вӑтанман.

3 [1]Çӳлхуçа Турӑ пултарнӑ хир кайӑкӗсенчен çӗлен пуринчен те чеерех пулнӑ. Çӗлен арӑма каланӑ: Турӑ чӑнах та: райри нихӑш йывӑçӑн çимӗçне те ан çийӗр, тесе каларӗ-и? тенӗ. [2]Арӑм çӗлене каланӑ: эпир йывӑçсен çимӗçӗсене çиме пултаратпӑр, [3]Турӑ: рай варринчи йывӑçӑн çимӗçне çеç ан çийӗр, терӗ, вӗсене ан тӗкӗнӗр, сирӗн вилмелле ан пултӑр, терӗ, тенӗ. [4]Çӗлен арӑма каланӑ: çук, вилместӗр, [5]Турӑ пӗлсе тӑрать: эсир çав çимӗçе çисе пӑхнӑ кун сирӗн куçӑрсем уçӑлӗç те, вара эсир ырӑпа усала пӗлекен турӑсем пек пулатӑр, тенӗ. [6]Йывӑçӗ апат валли те лайӑх иккен, куçпа пӑхма та хитре иккен, пӗлӳ парассипе те сӑхлантарать иккен,— арӑм çакна курнӑ та унӑн çимӗçне татса çинӗ; тата упӑшкине те панӑ, вӑл та çинӗ. [7]Ӗнтӗ иккӗшӗн те куçӗсем уçӑлнӑ, вӗсем хӑйсем çарамас пулнине пӗлнӗ; вара смоква йывӑçӗн çулçисене сыпа-сыпа çӗлесе пилӗкӗнчен çакса янӑ.

[8]Вӗсем кун сулхӑнлатнӑ вӑхӑтра райра çӳрекен Çӳлхуçа Турӑ сассине илтнӗ; Адампа унӑн арӑмӗ Çӳлхуçа Турӑ умӗнчен райри йывӑçсем хушшине пытаннӑ. [9]Çӳлхуçа Турӑ Адама чӗнсе: [Адам,] эсӗ ӑçта? тенӗ. [10]Вӑл: эпӗ Санӑн сассуна райра илтрӗм те хам çарамас пулнипе хӑраса пытантӑм, тенӗ. [11][Турӑ] каланӑ: эсӗ çарамассине сана кам каларӗ? Эпӗ çиме хушман йывӑçӑн çимӗçне çимерӗн-и эсӗ? тенӗ. [12]Адам каланӑ: йывӑç çимӗçне мана çав арӑм, Эсӗ панӑскер, пачӗ те — эпӗ çирӗм, тенӗ. [13]Çӳлхуçа Турӑ арӑма каланӑ: эсӗ капла мӗн турӑн? тенӗ. Арӑм: мана çӗлен илӗртрӗ те — эпӗ çирӗм, тенӗ. [14]Çӳлхуçа Турӑ çӗлене каланӑ: çакна тунӑшӑн эсӗ мӗнпур выльӑх-чӗрлӗх умӗнче, хирти пур тискер кайӑк умӗнче ылханлӑ пулӑн; эсӗ хырӑмупа шуса çӳрӗн, хӑвӑн ӗмӗрӳ тӑршшӗпех тӑпра çисе пурӑнӑн; [15]санпала арӑм хушшине, сан вӑрлӑхупа* арӑм вӑрлӑхӗн хушшине тӑшманлӑх хурӑп; арӑмран çураласси санӑн пуçна çапса çӗмӗрӗ, эсӗ ӑна ури тупанӗнчен сӑхӑн, тенӗ**. [16]Арӑма каланӑ: эсӗ йывӑр çын чухне санӑн асапна ӳстернӗçемӗн ӳстерсе пырӑп; ачусене тертленсе çуратӑн; эсӗ упӑшкушӑн тӗмсӗлӗн, вӑл вара санӑн хуçу пулӗ, тенӗ. [17]Адама вара çапла каланӑ: арӑмун сӑмахне итленӗшӗн, Эпӗ сана «ан çи» тесе каланӑ йывӑçӑн çимӗçне çинӗшӗн çӗр сан пирки ылханлӑ пулӗ; ӗмӗрӳ тӑршшӗпех эсӗ, асап курса, çӗртен тӑранса пурӑнӑн; [18]çӗр сана йӗплӗ курӑксемпе çумкурӑкӗсем ӳстерсе парӗ; эсӗ хирти курӑкпа тӑранса пурӑнӑн; [19]çӗртен пулнӑскер, эсӗ каялла çӗре кӗричченех çӑкӑрна тар юхтарса ӗçлесе çийӗн: эсӗ — тӑпра, каллех тӑпра пулӑн, тенӗ.

---

* Йӑху.

** Тепӗр тӗрлӗ ӑнлантарнинчен: арӑм Вӑрлӑхӗн хушшине; арӑмран Çураласси санӑн пуçна çапса çӗмӗрӗ, эсӗ Ӑна ури тупанӗнчен сӑхӑн.

[22] 1 Тим 2:13. **[23]** 1 Кор 11:8. **[24]** Мф 19:5. Мк 10:7–8. 1 Кор 6:16. Эф 5:31.
3-мӗш сыпӑк. [1] Ӑсл 2:24. **[4]** Ин 8:44. 2 Кор 11:3. **[6]** Сир 25:27. 1 Тим 2:14. **[7]** Пулт 2:25. Ӳлӗм 3:17. **[8]** Пс 137:6. Ам 9:2. **[11]** Пулт 2:17. **[13]** 2 Кор 11:3. **[14]** Пс 71:9. **[15]** Пулт 14:18. Пс 111:1, 2, 4. Зах 6:13. Пулт 22:9. Пс 22. Пс 70. Зах 12:10. Ин 3:14. **[16]** 1 Кор 14:34. **[17]** Пулт 4:12; 5:29. **[19]** Пс 127:2. Еккл 12:7.

20Адам хăйĕн арăмне Ева* ятлă хунă,
мĕншĕн тесессĕн вăл пĕтĕм пурăнакан-
сенĕн амăшĕ пулса тăнă. 21Çăлхуçа Турă
Адампа унăн арăмĕ валли тир тумтирсем
туса вĕсене тăхăнтартнă.
22Çăлхуçа Турă каланă: акă Адам, ырă-
па усала пĕлсе, Пирĕнтен пĕри пек пулса
тăчĕ; халĕ ĕнтĕ вăл тата, аллине тăсса,
чĕрĕлĕх йывăçĕн çимĕçне те татса ан çи-
тĕр, ĕмĕрех пурăнмалла ан пултăр, тенĕ.
23Çĕртен илнĕскер çĕр ĕçлесе пурăнтăр
тесе Çăлхуçа Турă ăна Эдем пахчинчен
кăларса янă. 24Адама хăваласа янă та
чĕрĕлĕх йывăçĕ патне пыракан çула сых-
ламашкăн Эдем пахчи умне, тухăç енне,
Херувима тăратнă тата çавăрăнса тăракан
вутлă хĕç хунă.

4 1Адам хăйĕн арăмĕпе Евăпа хутшăн-
нă; Ева йывăр çын пулса Каина çу-
ратнă, вăл: эпĕ Çăлхуçаран çын тупрăм,
тенĕ. 2Тата унăн шăллĕне, Авеле, çурат-
нă. Авель — сурăх кĕтекен çын, Каин
çĕр ĕçлекен çын пулнă. 3Кăштах вăхăт
иртсессĕн, Каин Çăлхуçана çĕр çимĕçĕ
парне кăнĕ, 4Авель те хăйĕн кĕтĕвĕнчи
малтан çуралнă путексене, чи самăрри-
сене, парне кăнĕ. Çăлхуçа Авеле те, унăн
парнине те кăмăл тунă, 5Каина вара хăй-
не те, унăн парнине те кăмăл туман.
Каин питĕ тарăхнă, пуçне чиксе çăренĕ.
6Çăлхуçа [Турă] Каина каланă: эсĕ мĕн-
шĕн тарăхрăн? мĕншĕн эсĕ пуçна чикрĕн?
7ырă тунă чухне пуçна çĕклеместĕн-и?
ырă тумастăн пулсассăн, алăку умĕнче
çылăх выртать; вăл сана хăй патне тур-
тать, анчах эсĕ ăна пăхăнтар, ăна пуçлăх
пул, тенĕ.
8Каин хăйĕн шăллĕне, Авеле, каланă:
[атя хире каяр,] тенĕ. Хире тухсассăн, Ка-
ин хăйĕн шăллĕне, Авеле, хирĕç тăрса ăна
вĕлернĕ. 9Çăлхуçа [Турă] Каина каланă:
Авель шăллу ăçта санăн? тенĕ. Вăл: пĕл-
местĕп; эпĕ шăллăма хуралçă-им? тенĕ.
10[Çăлхуçа] каланă: мĕн турăн эсĕ? санăн
шăллу юнĕн сассийĕ Мана çĕр çинчен
кăшкăрса чĕнет; 11санăн аллу тăкнă юна,
санăн шăллун юнне, çăтнă çĕр халĕ са-
на ылханчĕ; 12эсĕ çĕр ĕçленĕ чухне вăл
сана текех хăйĕн вăйне парса тăмĕ, çĕр
çинче эсĕ хăваласа янă çын, çапкаланчăк
çын пулăн, тенĕ. 13Каин Çăлхуçа [Турра]
каланă: ман çине хунă хаса чăтас чăтăм-
ран та пысăкрах: 14акă Эсĕ халĕ мана çĕр
çинчен хăваласа яратăн, эпĕ Санăн куçу
умĕнчен çухалăп, çĕр çинче эпĕ хăваласа
янă çын, çапкаланчăк çын пулăп; мана
тĕл пулакан кирек кам та мана вĕлерĕ,
тенĕ. 15Çăлхуçа [Турă] ăна каланă: кам
Каина вĕлерĕ, ăна уншăн çичĕ хут та-
вăрмалла, тенĕ. Каина тĕл пулса никам
та ан вĕлертĕр тесе, Çăлхуçа [Турă] ăна
паллă тунă. 16Вара Каин Çăлхуçа умĕнчен
пăрахса кайнă, вăл Эдемран тухăçалла,
Нод çĕрне, кайса вырăнаçнă.
17Каин хăйĕн арăмĕпе хутшăннă; арăмĕ,
йывăр çын пулса, Еноха çуратнă. Каин
хула лартнă; хулине ывăлĕн ячĕпе Енох
тенĕ. 18Енохăн Ирад [Гаидад] çуралнă;
Ирадран Мехиаель [Малелеил] çуралнă;
Мехиаелĕн Мафусал çуралнă; Мафусал-
ран Ламех çуралнă. 19Ламех хăй валли
икĕ арăм илнĕ: пĕри Ада ятлă, тепĕри
Цилла [Селла] ятлă пулнă. 20Ада Иавала
çуратнă: вăл кĕтӳ кĕтсе чатăрта пурăна-
кансенĕн ашшĕ пулнă. 21Унăн шăллĕн
ячĕ Иувал: вăл пĕтĕм кĕслеçĕсен, шăх-
лич калакансен ашшĕ пулнă. 22Цилла
та Тувалкаина [Фовела] çуратнă: вăл
пăхăртан тата тимĕртен тĕрлĕ япала туп-
таса тăвакан ăста пулнă. Тувалкаинăн
йăмăкĕ — Ноема.
23Ламех хăйĕн арăмĕсене каланă: эй
Ада, эй Цилла! итлĕр эпĕ каланине; эй
Ламех арăмĕсем! тăнлăр ман сăмахсене:
суранăмшăн эпĕ ар пулнă çынна вĕлер-
тĕм, хама амантнăшăн яш ачана вĕлер-
тĕм; 24Каиншăн çичĕ хут тавăрас пул-
сассăн, Ламехшăн çитмĕл çичĕ хут та-
вăрĕç, тенĕ.

* Пурăнăç.

[22] Пулт 1:27. 1 Ин 5:7. Пулт 2:9.
4-мĕш сыпăк. [4] Евр 11:4. **[5]** Ытар 15:8. Ис 1:13. **[6]** Мф 20:15. **[7]** Рим 6:16. **[8]** Гал 5:17. Ăсл 10:3. Мф 23:35. 1 Ин 3:12. Иуд 1:11. **[9]** Пс 9:13; 115:6. **[10]** Евр 12:24. Ӳлĕм 6:10. **[14]** Пулт 9:6. **[19]** Пулт 2:24.

[25]Адам татах хăйĕн арăмĕпе, [Евăпа,]
хутшăннă, Ева ывăл ача çуратнă, вăл
ăна Сиф ятлă хунă, [вăл каланă:] Каин
вĕлернĕ Авель вырăнне Турă мана тепĕр
вăрлăх пачĕ, тенĕ. [26]Сифăн та ывăл ача
çуралнă: вăл ăна Енос ятлă хунă; çавăн
чухне вара Çӳлхуçа [Турă] ятне асăнса
чĕне пуçланă.

5 [1]Адамăн йăхĕ-кăкĕ çакă: Турă этеме
пултарнă чухне, Вăл ăна Хăй евĕрлĕ
тунă чухне, [2]Вăл вĕсене арçыннине тата
хĕрарăмне пултарнă, вĕсене пилленĕ, вĕ-
сене пултарнă кун вĕсене «этем» тесе ят
хунă. [3]Адам çĕр вăтăр [230] çул пурăннă
та, унăн хăй евĕрлĕ, хăй сăнарлă ывăл
çуралнă, вăл ăна Сиф ятлă хунă. [4]Сиф
çуралнă хыççăн Адамăн кунçулĕ сакăр-
çĕр [700] çула пынă, унăн ывăлсемпе
хĕрсем çуралнă. [5]Адам пурăннă кунçул
пурĕ тăхăрçĕр вăтăр çул пулнă; вара вăл
вилнĕ.

[6]Сиф çĕр пилĕк [205] çул пурăннă та,
унăн Енос çуралнă. [7]Енос çуралнă хыççăн
Сиф сакăрçĕр çичĕ [707] çул пурăннă,
унăн ывăлсемпе хĕрсем çуралнă. [8]Сиф
пурăннă кунçул пурĕ тăхăрçĕр вуникĕ
çул пулнă; вара вăл вилнĕ.

[9]Енос тăхăрвунă [190] çул пурăннă та,
унăн Каинан çуралнă. [10]Каинан çуралнă
хыççăн Енос сакăрçĕр вунпилĕк [715] çул
пурăннă, унăн ывăлсемпе хĕрсем çурал-
нă. [11]Енос пурăннă кунçул пурĕ тăхăрçĕр
пилĕк çул пулнă; вара вăл вилнĕ.

[12]Каинан çитмĕл [170] çул пурăннă та,
унăн Малелеил çуралнă. [13]Малелеил çу-
ралнă хыççăн Каинан сакăрçĕр хĕрĕх
[740] çул пурăннă, унăн ывăлсемпе хĕр-
сем çуралнă. [14]Каинан пурăннă кунçул
пурĕ тăхăрçĕр вунă çул пулнă; вара вăл
вилнĕ.

[15]Малелеил утмăл пилĕк [165] çул пу-
рăннă та, унăн Иаред çуралнă. [16]Иаред
çуралнă хыççăн Малелеил сакăрçĕр вăтăр
[730] çул пурăннă, унăн ывăлсемпе хĕр-
сем çуралнă. [17]Малелеил пурăннă кунçул
пурĕ сакăрçĕр тăхăрвун пилĕк çул пулнă;
вара вăл вилнĕ.

[18]Иаред çĕр утмăл çул пурăннă та,
унăн Енох çуралнă. [19]Енох çуралнă хыç-
çăн Иаред сакăрçĕр çул пурăннă, унăн
ывăлсемпе хĕрсем çуралнă. [20]Иаред пу-
рăннă кунçул пурĕ тăхăрçĕр утмăл икĕ
çул пулнă; вара вăл вилнĕ.

[21]Енох утмăл пилĕк [165] çул пурăннă
та, унăн Мафусал çуралнă. [22]Енох Турă
умĕнче çӳренĕ, Мафусал çуралнă хыççăн
вăл тата виççĕр [200] çул пурăннă, унăн
ывăлсемпе хĕрсем çуралнă. [23]Енох пурăн-
нă кунçул пурĕ виççĕр утмăл пилĕк çул
пулнă. [24]Енох Турă умĕнче çӳренĕ; унтан
вăл курăнми пулнă, мĕншĕн тесессĕн
Турă ăна Хăй патне илнĕ.

[25]Мафусал çĕр сакăрвун çичĕ çул пу-
рăннă та, унăн Ламех çуралнă. [26]Ламех
çуралнă хыççăн Мафусал çичçĕр сакăр-
вун икĕ çул пурăннă, унăн ывăлсемпе
хĕрсем çуралнă. [27]Мафусал пурăннă кун-
çул пурĕ тăхăрçĕр утмăл тăхăр çул пулнă;
вара вăл вилнĕ.

[28]Ламех çĕр сакăрвун икĕ [188] çул пу-
рăннă та, унăн ывăл ача çуралнă, [29]хамăр
ĕçе тунă чухне, Çӳлхуçа [Турă] ылханнă
çĕре хамăр аллăмăрпа ĕçлесе тăнă чухне
пире çакă лăплантарĕ тесе, Ламех ăна
Ной ятлă хунă. [30]Ной çуралнă хыççăн Ла-
мех пилĕкçĕр тăхăрвун пилĕк [565] çул
пурăннă, унăн ывăлсемпе хĕрсем çурал-
нă. [31]Ламех пурăннă кунçул пурĕ çичçĕр
çитмĕл çичĕ [753] çул пулнă; вара вăл
вилнĕ.

[32]Пилĕкçĕр çула çитсессĕн Нойăн [виçĕ
ывăл] Сим, Хам тата Иафет çуралнă.

6 [1]Çĕр çинче этемсем ĕрче пуçласассăн,
вĕсен хĕрĕсем те çуралсассăн, [2]Турă
ывăлĕсем этем хĕрĕсем илемлине курнă
та вĕсене кам хăшне суйланă, çавна хăй
валли качча илнĕ. [3]Çӳлхуçа [Турă] кала-
нă: çак çынсем Манăн Сывлăшăма ĕмĕрех
хирĕç тăраймĕç, мĕншĕн тесессĕн вĕсем
ӳт анчах; вĕсен кунçулĕ çĕр çирĕм çул

[25] Пулт 5:3.
5-мĕш сыпăк. [1] 1 Çулс 1:1. Пулт 1:26–27; 9:6. Ăсл 2:23. Сир 17:3. **[3]** Лк 3:38. 1 Кор 15:48–49. **[24]** Сир 44:15; 49:16. Евр 11:5. **[29]** 1 Пет 3:20. Евр 11:7. Пулт 3:17. **[32]** 1 Çулс 1:4.
6-мĕш сыпăк. [2] Аст 14:1. 1 Ин 3:1. Мф 24:38. **[3]** Ап ĕçс 7:51. Гал 5:16. 1 Пет 3:20.

пултăр, тенё. [4]Çав вăхăтра çёр çинче улăпсем пулнă, уйрăмах вёсем Турă ывăлёсем этем хёрёсем патне кёре пуçласассăн, кусем вёсем валли ача çурата пуçласассăн нумайланнă: вёсем паттăр çынсем, мён авалтанпах чаплă çынсем пулнă.

[5]Çӳлхуçа [Турă] этемсем çёр çинче питех те аскăнланса пурăннине курнă, вёсен пётём шухăшё, чёринчи пётём ёмёчё кирек хăçан та усал пулнă; [6]çёр çинче этеме пултарнăшăн Çӳлхуçа ӳкённё, Хăй ăшёнче хытă куляннă. [7]Вара Çӳлхуçа каланă: Хам пултарнă этемсене Эпё çёр çийёнчен пётеретёп, этемрен пуçласа выльăх-чёрлёх, çёлен-калта, тӳпери вёçен кайăк таранах пётеретёп, вёсене пултарнăшăн Эпё ӳкёнтём ёнтё, тенё. [8]Ной вара Çӳлхуçа [Турă] умёнче тивлетлё пулнă.

[9]Акă Нойăн пурăнăçё: Ной хăйён ăрăвёнче тӳрё çын, айăпсăр çын пулнă; Ной Турă умёнче çӳренё. [10]Нойăн Сим, Хам тата Иафет ятлă виçё ывăл çуралнă.

[11]Ёнтё Турă куçё умёнче çёр ирсёрленсе çитнё, çёр усал ёçпе тулнă. [12][Çӳлхуçа] Турă çёр çине пăхнă та — акă çёр пётёмпе ирсёрленнё, пурте хăйсен çёр çинчи çулне пăсса пётернё. [13][Çӳлхуçа] Турă Ноя каланă: пётесси çитрё, мён пурри Манăн умăмра пётё, мёншён тесессён çёр вёсенён усал ёçёсемпе тулса çитрё; акă Эпё вёсене çёр çинчен пётерёп. [14]Ху валли гофер йывăçёнчен карап ту; карап ăшёнче пӳлёмсем ту, унăн шалашне те, тулашне те сăмалапа сёрсе тух. [15]Ăна çапла ту: карапăн тăршшё виççёр чике, сарлакăшё аллă чике, çӳллёшё вăтăр чике пултăр. [16]Карапунта шăтăк туса хăвар, тăррине пёр чикене çити ансăрлат, карапа кёме унăн айккине алăк ту; пурăнмашкăн ун ăшёнче аялти хутне, иккёмёш тата виççёмёш хутне ту. [17]Акă Эпё ӳтёнче чёмё пуррине, тӳпе айёнчине, пурне те пётермешкён çёр çине шыв тултарăп; çёр çинче мён пурри йăлтах вилсе пётё. [18]Анчах Эпё санпала халал хывăп: эсё ху та, санăн ывăлусем те, арăму та, ывăлусен арăмёсем те санпа пёрле карап ăшне кёрёç. [19]Çавăн пекех карап çине тата [пётём выльăх-чёрлёхе, пётём çёлен-калтана тата] пётём чёрчуна пёрер мăшăр илсе кёр, вёсем санпа пёрле чёрё юлччăр; вёсем açаллă-амаллă пулччăр. [20]Санпа пёрле чёрё юлмашкăн сан патна вёçен кайăксен кашни ăрăвёнчен, выльăх-чёрлёхсен кашни ăрăвёнчен, çёр çийён шуса çӳрекенсен кашни ăрăвёнчен açаллă-амаллă пёрер мăшăр кёччёр. [21]Эсё ху валли çиме юрăхлă тёрлё çимёç ил, ăна хăв патна пухса хур; вăл саншăн та, вёсемшён те апат пулё, тенё. [22]Ной пётёмпех тунă: [Çӳлхуçа] Турă ăна мёнле хушнă, вăл çапла тунă.

7 [1]Çӳлхуçа [Турă] Ноя каланă: эсё ху та, санăн мёнпур кил-йышу та карап ăшне кёрёр, мёншён тесессён çак ăру хушшинче эсё Манăн умăмра тӳррине Эпё куртăм; [2]пур таса выльăхран çичшер açапа çичшер ама, таса мар выльăхран икшер açапа икшер ама ил; [3]çавăн пекех тата пётём çёр валли йăх упраса хăвармашкăн [таса] вёçен кайăксенчен çичшер açапа çичшер ама, [пур таса мар вёçен кайăкран икшер açапа икшер ама] ил, [4]мёншён тесессён çичё кунран Эпё çёр çине хёрёх кун та хёрёх каç хушши çумăр тăкăп; Хам мён пултарнине пурне те çёр çинчен пётерёп, тенё. [5]Çӳлхуçа [Турă] хăйне мён хушнине Ной пётёмпе тунă.

[6]Çёр çине шыв тулнă вăхăтра Ной ултçёр çулта пулнă.

[7]Ной хăй те, унпа пёрле унăн ывăлёсем те, арăмё те, ывăлёсен арăмёсем те çёр çине шыв тулас умён карап ăшне кёнё. [8][Таса вёçен кайăксем те, таса мар вёçен кайăксем те,] таса выльăхсем те, таса мар выльăхсем те, [тискер кайăксем те,] çёр çийён шуса çӳрекенсем те — [9]пурте, [Çӳлхуçа] Турă Ноя хушнă пек, Ной патне карап ăшне мăшăрăн-мăшăрăн açаллă-амаллă кёнё. [10]Çичё кунран çёр çине талай çитнё.

[5] Пулт 8:21. Мф 15:19. Мк 7:21. **[6]** Йыш 23:19. 1 Пат 15:11. **[9]** Сир 44:16. **[13]** 2 Пет 2:5. **[14]** Евр 11:7. **[17]** Пс 28:10. **[19]** Пулт 7:9. **[22]** Пулт 7:5.
7-мёш сыпăк. [1] 1 Пет 3:20. **[5]** Пулт 6:22. **[7]** Мф 24:38. Лк 17:27. 1 Пет 3:20. **[9]** Пулт 6:19.

11Ной пурăнăçĕн ултçĕрмĕш çулĕнче,
иккĕмĕш уйăхра, çак уйăхăн вунçиччĕ-
мĕш [27] кунĕнче, шăпах çав кун, аслă
тĕпсĕр авăрсен пур çăлĕ те уçăлса кайнă,
пĕлĕт чӳречисем те уçăлнă; 12вара çĕр
çине хĕрĕх кун та хĕрĕх каç çумăр çу-
нă. 13Шăп çав кун Ной карап ăшне кĕ-
нĕ; Ной ывăлĕсем те,— Сим, Хам тата
Иафет,— Ной арăмĕ те, унăн ывăлĕсен
виçĕ арăмĕ те унпа пĕрле кĕнĕ. 14Хăйсем
те кĕнĕ, вĕсемпе пĕрле ăрăвĕ-ăрăвĕпе çĕр
çинчи пур тискер кайăк, ăрăвĕ-ăрăвĕпе
пур выльăх, çĕр çинче шуса çӳрекен пур
çĕлен-калта та ăрăвĕ-ăрăвĕпе, вĕçсе çӳ-
рекенсем, пур вĕçен кайăк, пур çунатлă
кайăк та ăрăвĕ-ăрăвĕпе 15Ной патне карап
ăшне кĕнĕ, ӳтĕнче чĕмĕ пуррисем пурте
аçаллă-амаллă, мăшăрăн-мăшăрăн кĕнĕ;
16Ной патне карап ăшне кĕнĕ пур тĕрлĕ
чĕрчун, [Çӳлхуçа] Турă Ноя хушнă пек,
аçи те, ами те кĕнĕ. Çӳлхуçа [Турă] вĕсем
кĕнĕ хыççăн карапа хупса лартнă.

17Çĕр çине шыв хĕрĕх кун та хĕрĕх каç
тулса пынă, шыв хушăннăçемĕн хушăнса
пынă та карапа çӳлелле çĕкленĕ, вăл çĕр-
тен çӳлте пулнă; 18çĕр çинче шыв вăйлă-
лансах пынă, питех те тулса çитнĕ, карап
шыв сийĕн ишсе çӳренĕ. 19Шыв çĕр çине
шутсăр нумай капланса тулнă; пĕтĕм
тӳпе айĕнчи çӳллĕ тусене пурне те шыв
хупласа илнĕ; 20вĕсен тĕлĕнчи шыв вун-
пилĕк чике чухлĕ хăпарнă, çӳллĕ тусене
пурне те шыв хупласа илнĕ. 21Çĕр çинче
çӳрекен пур чĕрчун та вилсе пĕтнĕ: вĕ-
çен кайăксем, выльăх-чĕрлĕх, çĕр çийĕн
шуса çӳрекен пур çĕлен-калта, пур çын
та вилсе пĕтнĕ; 22типĕ çĕрте пурăнăç сыв-
лăшне сăмсапа сывлаканни пурте вилсе
пĕтнĕ. 23Çĕр çинче пурăнаканнисем пурте
пĕтнĕ; этемрен пуçласа выльăхĕ-чĕрлĕхĕ,
çĕлен-калти, тӳпе айĕнчи вĕçен кайăкĕ
таран — пурте çĕр çинчен пĕтнĕ, Ной çеç,
унпа пĕрле карап çинче пулнисем çеç тăр-
са юлнă. 24Шыв çĕр çинче çĕр аллă кун
тулса пынă.

8 1Турă Ноя тата унпа пĕрле карап
ăшĕнче пулнă пур тискер кайăка,
пур выльăх-чĕрлĕхе, [пур вĕçен кайăка,
шуса çӳрекен пур çĕлен-калтана] асне
илнĕ; вара Турă çĕр çине çил янă та,
шыв тулма чарăннă. 2Тĕпсĕр авăрăн çă-
лĕсем, пĕлĕт чӳречисем хупăнса ларнă,
вара тӳперен çумăр çума чарăннă. 3Шыв
майĕпен çĕр çинчен каялла кайнă, çĕр
аллă кун иртсессĕн шыв чака пуçланă.
4Çиччĕмĕш уйăхра, çав уйăхăн вунçич-
чĕмĕш кунĕнче, карап Арарат тăвĕ çине
пырса чарăннă. 5Вуннăмĕш уйăха çитич-
чен шыв пĕрмаях чакса пынă; вуннăмĕш
уйăхăн пĕрремĕш кунĕнче ту тăррисем
курăна пуçланă.

6Хĕрĕх кун иртсессĕн Ной хăй тунă ка-
рап чӳречине уçнă та 7[çĕр çинчен шыв
чакнине пĕлмешкĕн] çăхана кăларса янă;
вăл вĕçсе тухнă та çĕр çинчи шыв типи-
чченех пĕр аяккалла вĕçсе кайнă, пĕр
каялла вĕçсе килнĕ. 8Унтан çĕр çинчен
шыв кайса пĕтнине пĕлмешкĕн Ной кă-
вакарчăна кăларса янă; 9анчах кăвакар-
чăнĕ урине пусса ларса канма вырăн ту-
пайман та ун патне каялла карап çине
вĕçсе килнĕ, мĕншĕн тесессĕн çĕр çинче
пур тĕлте те шыв тăнă; Ной аллине тăс-
нă та ăна ярса тытса хăй патне карап
ăшне кĕртнĕ. 10Тата çичĕ кун кĕтсе тăнă
та карап ăшĕнчен каллех кăвакарчăна
кăларса янă. 11Кăвакарчăн ун патне каç
пуласпа каялла вĕçсе çитнĕ, акă сăмси-
пе вăл çу йывăççин ешĕл чĕрĕ çулçине
хыпса килнĕ; Ной вара çĕр çинчен шыв
чакса кайнине пĕлнĕ. 12Вăл тата çичĕ
кун кĕтсе тăнă та [каллех] кăвакарчăна
кăларса янă; кăвакарчăн вара ун патне
каялла таврăнман.

13[Ной пурăнăçĕн] ултçĕр пĕрремĕш çу-
лĕнче, пĕрремĕш уйăхăн [пĕрремĕш] кунĕ
тĕлне, çĕр çинче шыв юлман; Ной карап
тăррине уçса пăхнă та — акă çĕр çийĕ ку-
шăхнă. 14Иккĕмĕш уйăхра, уйăхăн çирĕм
çиччĕмĕш кунĕ тĕлне, çĕр пĕтĕмпех типсе

[11] Иов 38:8. Ытар 8:29. 4 Пат 7:2. **[16]** Пулт 6:19–20. **[23]** Ăсл 10:4. Мф 24:39.
8-мĕш сыпăк. [1] Пс 111:6. **[2]** Пулт 7:11. **[4]** Иер 51:27.

ситнӗ. 15Вара [Çӳлхуçа] Турӑ Ноя каланӑ:
16эсӗ хӑв та тух, санӑн арӑму та, ывӑлусем
те, ывӑлусен арӑмӗсем те санпа пӗрле
карап ӑшӗнчен тухчӑр; 17хӑвӑнпа пӗрле
пулнӑ пур чӗрчуна та — вӗçен кайӑксене,
выльӑх-чӗрлӗхе, çӗр çийӗн шуса çӳрекен
пур çӗлен-калтана — хӑвӑнпа пӗрле ил-
се тух; вӗсем çӗр тӑрӑх саланччӑр, çӗр
çинче ӗрчеччӗр, хунаса пыччӑр, тенӗ.
18Вара Ной тухнӑ, унпа пӗрле унӑн ывӑ-
лӗсем те, арӑмӗ те, ывӑлӗсен арӑмӗсем
те тухнӑ; 19карап ӑшӗнчен мӗнпур тискер
кайӑк, [мӗнпур выльӑх-чӗрлӗх,] мӗнпур
çӗлен-калта, мӗнпур вӗçен кайӑк — çӗр
çинче мӗн çӳрекенни пурте — ӑрӑвӗ-ӑрӑ-
вӗпе тухса кайнӑ.

20Вара Ной Çӳлхуçа валли парне выра-
нӗ тунӑ; кашни таса выльӑх ӑрӑвӗнчен,
таса вӗçен кайӑксен мӗнпур ӑрӑвӗнчен
илсе, вӗсене парне выранӗ çинче пӗтӗ-
мӗшпе çунтарса парне кӳнӗ. 21Ырӑ шӑршӑ
Çӳлхуçана кӑмӑллӑ пулнӑ, вара Çӳлхуçа
[Турӑ] Хӑй ӑшӗнче каланӑ: этем пирки
çӗре урӑх ылханмӑп ӗнтӗ, мӗншӗн тесес-
сӗн этем кӑмӑлӗ мӗн çамрӑкранах усал;
халӗ тунӑ пек тумӑп, пӗтӗм пурӑнакана
урӑх нихӑçан та пӗтермӗп: 22çӗр сывӑ
чухне акассипе вырасси, сивӗпе шӑрӑх,
çупа хӗл, кунпа каç нихӑçан та чарӑнса
лармӗç, тенӗ.

9 1Турӑ, Нойпа унӑн ывӑлӗсене пилле-
се, вӗсене çапла каланӑ: ӗрчӗр, хунӑр,
çӗре тулса çитӗр, [ӑна тытса тӑрӑр]; 2çӗр
çинчи пур тискер кайӑк, [çӗр çинчи пур
выльӑх-чӗрлӗх,] тӳпери пур вӗçен кайӑк,
çӗр çинчи пур кусан-çӳрен, тинӗсри пур
пулӑ сирӗнтен хӑратӑр, сирӗнтен чӗтресе
тӑтӑр: вӗсене сирӗн алла панӑ; 3пӗтӗм пу-
рӑнакан кусан-çӳрен сирӗн валли çимӗç
пулӗ; унччен ешӗл курӑк панӑ пек, çакна
пурне те сире паратӑп; 4анчах чунӗ-юнӗ
пур ӳте ан çийӗр; 5Эпӗ хӑвӑр юнӑра та
шыраса илӗп: сирӗн пурӑнӑçӑр — юнра,
ӑна кирек хӑш тискер кайӑкран та шыра-
са илӗп, çын чунне çын аллинчен, унӑн
тӑванӗн аллинчен те шыраса илӗп; 6кам
çын юнне тӑкӗ, унӑн юнне те çын аллиех
тӑкӗ, мӗншӗн тесессӗн этеме Турӑ сӑнар-
лӑ пултарнӑ; 7эсир ӗнтӗ ӗрчӗр, хунӑр, çӗр
тӑрӑх сарӑлӑр, çӗр çинче йышлӑлансах
пырӑр, тенӗ.

8Ноя, унпа пӗрле унӑн ывӑлӗсене Турӑ
татах каланӑ: 9акӑ Эпӗ сирӗнпе тата си-
рӗнтен кайран килес тӑхӑмӑрпа халал
хыватӑп, 10сирӗнпе пӗрле пулнӑ пур чӗрӗ
чунпа — вӗçен кайӑксемпе, выльӑх-чӗр-
лӗхпе, çӗр çинчи пур тискер кайӑкпа —
карап ӑшӗнчен тухнисемпе пуринпе те,
çӗр çинчи пур чӗрчунпа та халал хыва-
тӑп; 11урӑх нимӗнле чӗрчуна та талай
шывӗпе пӗтермӗп тесе, текех çӗре çука
хӑваракан талай пулмӗ тесе, Эпӗ сирӗнпе
халал хыватӑп, тенӗ. 12[Çӳлхуçа] Турӑ та-
та каланӑ: Манпа сирӗн хушшӑмӑра тата
сирӗн патӑрти пӗтӗм чӗрӗ чун хушшине
ӗмӗртен ӗмӗре яланлӑха хывнӑ халалӑн
палли çакӑ: 13Эпӗ пӗлӗт çине асамат кӗ-
перӗ каратӑп, вӑл Манпа çӗр хушшине
[ӗмӗрлӗхе] хывнӑ халал палли пултӑр.
14Вара çапла пулӗ: Эпӗ çӗр çине çумӑр
пӗлӗчӗ ярсассӑн, пӗлӗтре [Манӑн] асамат
кӗперӗ курӑнӗ; 15вара Эпӗ Манпа сирӗн
хушшӑмӑра тата кашни ӳтри чӗрӗ чун ху-
шшине хывнӑ Хамӑн халалӑма аса илӗп;
тӗнчене шыв илсе пӗтӗм чӗрчуна пӗтере-
сси урӑх пулмӗ. 16[Манӑн] асамат кӗперӗ
тӳпере пулӗ, Эпӗ ӑна курӑп та Турӑпа [çӗр
хушшине,] çӗр çинче пурӑнакан кашни
ӳтри кашни чӗрӗ чун хушшине хывнӑ
ӗмӗрлӗх халалӑма аса илӗп, тенӗ. 17Турӑ
Ноя татах каланӑ: Манпа çӗр çинче пу-
рӑнакан кашни чӗрчун хушшине хывнӑ
халал палли çакӑ ӗнтӗ, тенӗ.

18Нойӑн карап ӑшӗнчен тухнӑ ывӑлӗсем
çаксем пулнӑ: Сим, Хам тата Иафет. Хам
вара Ханаанӑн ашшӗ пулнӑ. 19Çаксем виç-
çӗшӗ Нойӑн ывӑлӗсем пулнӑ; пӗтӗм çӗр
çинчи халӑх вӗсенчен пулса кайнӑ.

20Ной çӗр ӗçлеме пуçланӑ, вӑл иçӗм
çырли пахчи лартса ӳстернӗ; 21вӑл иçӗм
эрехӗ ӗçнӗ те ӳсӗрӗлнӗ, хӑйӗн чатӑрӗнче
çарамас выртнӑ. 22Хам, Ханаан ашшӗ,

[17] Пулт 1:28; 9:1, 7. **[21]** Пулт 6:5. Мф 15:19. Мк 7:21.
9-мӗш сыпӑк. [1] Пулт 1:28; 8:17. **[2]** Пулт 1:28. **[4]** Лев 3:17; 7:26; 17:14. **[6]** Мф 26:52. Ӳлӗм 13:10. Пулт 1:27.
[7] Пулт 1:28; 8:17; 9:1. **[11]** Ис 54:9. **[13]** Сир 43:12.

хăй ашшĕ çарамасне курнă та тухса хăйĕн икĕ тăванне каласа панă. 23Симпа
Иафет тумтир илнĕ те ăна хăйсен хул-
пуççийĕ çине хурса, кутăн кĕрсе ашшĕн
çарамасне витсе тухнă; вĕсем хыçалалла
пăхса пынă, хăйсен ашшĕн çарамасне
курман. 24Ной мухмăртан урăлса тăнă
та хăйне кĕçĕн ывăлĕ мĕн тунине пĕлсе
25каланă: Ханаан ылханлă пултăр; вăл
хăйĕн тăванĕсем патĕнче чурасенĕн чу-
ри пулĕ, тенĕ. 26Унтан каланă: Симăн
Çӳлхуçа Турри мухтавлă; Ханаан Симăн
чури пулĕ; 27Турă Иафет йăхне хушсах
пытăр, вăл Сим чатăрĕсене кĕрсе вырăнаç-
тăр; Ханаан унăн чури пулĕ, тенĕ.

28Тĕнчене шыв илнĕ хыççăн Ной виç-
çĕр аллă çул пурăннă. 29Ной пурăннă
кунçул пурĕ тăхăрçĕр аллă çул пулнă,
вăл вара вилнĕ.

10 1Ной ывăлĕсен — Симăн, Хамăн
тата Иафетăн — йăхĕ-кăкĕ çакă.
Талай хыççăн вĕсен ача-пăча çуралнă.
2Иафет ывăлĕсем: Гомер, Магог, Мадай,
Иаван, [Елиса,] Фувал, Мешех тата Фи-
рас. 3Гомер ывăлĕсем: Аскеназ, Рифат
тата Фогарма. 4Иаван ывăлĕсем: Елиса,
Фарсис, Киттим тата Доданим. 5Вĕсенчен
ĕрченĕ халăхсем утравсем çине ларса
тухнă; кашнийĕ хăйсен çĕрне, хăйсен
чĕлхипе каласакансемпе пĕрле, хăйсен
ăрăвĕнчен тухнисемпе пĕрле, хăйсен ха-
лăхĕ хушшине вырăнаçнă.

6Хам ывăлĕсем: Хуш, Мицраим, Фут
тата Ханаан. 7Хуш ывăлĕсем: Сева, Ха-
вила, Савта, Раама тата Савтеха. Раама
ывăлĕсем: Шева тата Дедан. 8Хушăн тата
Нимрод çуралнă; çавă çĕр çинче паттăра
тухнă; 9вăл Çӳлхуçа [Турă] умĕнче пат-
тăр кайăкçă пулнă, çавăнпа каласçĕ те
ĕнтĕ: Çӳлхуçа [Турă] умĕнче паттăр ка-
йăкçă Нимрод пек, теççĕ. 10Малтан унăн
патшалăхĕ Сеннаар çĕрĕнчи Вавилон,
Эрех, Аккад тата Халне хулисенчен тăнă.
11Çак çĕртен Ассур тухнă, вăл Ниневи,
Реховоф-ир, Калах хулисене туса лART-
нă, 12Ниневипе Калах хушшине Ресен
хули лартнă; ку аслă хула. 13Мицраимран
Лудим, Анамим, Легавим, Нафтухим,
14Патрусим, Каслухим çуралнă, çаксен-
чен Филисти халăхĕ пулса кайнă; Миц-
раимран тата Кафторим çуралнă.

15Ханаанран Сидон çуралнă, — ку унăн
малтанхи ывăлĕ пулнă, — тата Хет, 16Иеву-
сей, Аморрей, Гергесей, 17Евей, Аркей,
Синей, 18Арвадей, Цемарей тата Хима-
фей çуралнă. Каярахпа Ханаан ăрăвĕсем
сапаланса кайнă, 19ханаансен çĕрĕ Си-
донран пуçласа Герар еннелле Газа пат-
не çитнĕ, кунтан Содом, Гоморра, Адма
тата Цевоим еннелле Лáша патне çитнĕ.
20Кусем — хăйсен ăрăвĕсемпе, хăйсен ха-
лăхĕпе хăйсен çĕрне вырăнаçнă, хăйсен
чĕлхипе каласакан Хам ывăлĕсем.

21Симăн та ачисем пулнă, Сим вăл —
Еверăн мĕнпур ывăлĕн ашшĕ, Иафетăн
аслă пиччĕшĕ.

22Сим ывăлĕсем: Елам, Ассур, Арфак-
сад, Луд, Арам [тата Каинан]. 23Арам
ывăлĕсем: Уц, Хул, Гефер тата Маш. 24Ар-
факсадран [Каинан çуралнă, Каинанран]
Сала çуралнă, Саларан Евер çуралнă.
25Еверăн икĕ ывăл çуралнă; пĕрин ячĕ
Фалек, вăл çуралнă кунсенче çĕр уйăр-
нăран ăна çапла ят панă; унăн шăллĕн
ячĕ — Иоктан. 26Иоктанран Алмодад,
Шалеф, Хацармавеф, Иерах, 27Гадорам,
Узал, Дикла, 28Овал, Авимаил, Шева,
29Офир, Хавила тата Иовав çуралнă. Çак-
сем пурте — Иоктан ывăлĕсем. 30Вĕсем
вырăнаçнă çĕр Мешаран пуçласа тухăç
енчи Сефар тăвĕ патне çитиччен тăсăлнă.
31Кусем — хăйсен ăрăвĕсемпе, хăйсен ха-
лăхĕпе хăйсен çĕрне вырăнаçнă, хăйсен
чĕлхипе каласакан Сим ывăлĕсем.

32Ной ывăлĕсен ăрăвĕсем çаксем ĕнтĕ,
вĕсен йăхĕ-кăкĕ çакă ĕнтĕ. Талай хыççăн
вĕсенчен халăхсем ĕрчесе кайса çĕр тă-
рăх саланнă.

11 1Пĕтĕм çĕр çинче пĕр чĕлхепе, пĕр
пек каласнă. 2Тухăç енчен тапран-
са кайса вĕсем Сеннаар çĕрĕнче тӳрем-
лĕх тупнă та çавăнта вырăнаçнă. 3Вĕсем

[26] Нав 16:10. Тӳре 1:9.
10-мĕш сыпăк. [1] Пулт 5:32. **[2]** 1 Çулс 1:5. **[4]** Йыш 24:24. Ис 23:1. **[8]** 1 Çулс 1:10. Иер 16:16. **[10]** Ам 6:2. **[14]** Аст 2:23. **[22]** 1 Çулс 1:17. **[25]** 1 Çулс 1:19. Пулт 11:8. **[30]** Йыш 23:7.

пĕр-пĕрне каланă: атьăр кирпĕч тăвар та
ăна вутпа хĕртер, тенĕ. Çапла вĕсенĕн
чул вырăнне кирпĕч пулса тăнă, акшар
вырăнне çĕр тикĕчĕ пулнă. 4Вара вĕсем
каланă: хамăр валли хула лартар, тӳпене
çитекен пашне тăвар, вара хамăр ята ча-
па кăларăпăр, пĕтĕм çĕр тăрăх сапаланса
каймăпăр. 5Çӳлхуçа этем ывăлĕсем тăва-
кан хулапа пашнене пăхма аннă. 6Çӳлхуçа
каланă: акă вĕсем пĕр халăх, пуринĕн те
пĕр чĕлхе; вĕсем акă мĕн тума тытăнчĕç,
вĕсем хăйсем мĕн тума шухăш тытнине
пăрахас çук; 7анар та вĕсенĕн чĕлхине ар-
паштарса ярар, пĕри мĕн каланине тепĕри
ан ăнланайтăр, тенĕ. 8Çӳлхуçа вĕсене çав
тĕлтен пĕтĕм çĕре салатса янă; вĕсем вара
хулипе пашнине тума чарăннă. 9Çавăнпа
хулине Вавилон тесе ят панă, мĕншĕн
тесессĕн унта Çӳлхуçа пĕтĕм çĕр чĕлхи-
не арпаштарнă, Çӳлхуçа вĕсене çавăнтан
пĕтĕм çĕр тăрăх салатса янă.

10Симăн йăхĕ-кăкĕ çакă: тĕнчене шыв
илнĕ хыççăн икĕ çултан, çĕр çулта чух-
не, Симăн Арфаксад çуралнă; 11Арфаксад
çуралнă хыççăн Сим тата пилĕкçĕр çул
пурăннă, унăн ывăлсемпе хĕрсем çурал-
нă, [вара вилнĕ].

12Арфаксад вăтăр пилĕк [135] çул пу-
рăннă та, унăн [Каинан çуралнă. Каинан
çуралнă хыççăн Арфаксад тата виççĕр
вăтăр çул пурăннă, унăн ывăлсемпе хĕр-
сем çуралнă, вăл вара вилнĕ. Каинан
çĕр вăтăр çул пурăннă та, унăн] Сала
çуралнă. 13Сала çуралнă хыççăн Арфак-
сад [Каинан] тăватçĕр виçĕ [330] çул пу-
рăннă, унăн ывăлсемпе хĕрсем çурал-
нă, [вара вилнĕ].

14Сала вăтăр [130] çул пурăннă та, унăн
Евер çуралнă. 15Евер çуралнă хыççăн Сала
тăватçĕр виçĕ [330] çул пурăннă, унăн
ывăлсемпе хĕрсем çуралнă, [вара вилнĕ.]

16Евер вăтăр тăватă [134] çул пурăннă
та, унăн Фалек çуралнă. 17Фалек çуралнă
хыççăн Евер тăватçĕр вăтăр [370] çул пу-
рăннă, унăн ывăлсемпе хĕрсем çурал-
нă, [вара вилнĕ.]

18Фалек вăтăр [130] çул пурăннă та,
унăн Рагав çуралнă. 19Рагав çуралнă хы-
ççăн Фалек икçĕр тăхăр çул пурăннă,
унăн ывăлсемпе хĕрсем çуралнă, [вара
вилнĕ].

20Рагав вăтăр икĕ [132] çул пурăннă
та, унăн Серух çуралнă. 21Серух çуралнă
хыççăн Рагав икçĕр çичĕ çул пурăннă,
унăн ывăлсемпе хĕрсем çуралнă, [вара
вилнĕ].

22Серух вăтăр [130] çул пурăннă та,
унăн Нахор çуралнă. 23Нахор çуралнă хыç-
çăн Серух икçĕр çул пурăннă, унăн ывăл-
семпе хĕрсем çуралнă, [вара вилнĕ].

24Нахор çирĕм тăхăр [79] çул пурăннă
та, унăн Фарра çуралнă. 25Фарра çуралнă
хыççăн Нахор çĕр вунтăхăр [129] çул пу-
рăннă, унăн ывăлсемпе хĕрсем çурал-
нă, [вара вилнĕ].

26Фарра çитмĕл çул пурăннă та, унăн
Аврам, Нахор тата Аран çуралнă.

27Фарран йăхĕ-кăкĕ çакă: Фарран Ав-
рам, Нахор тата Аран çуралнă. Аранăн
Лот çуралнă. 28Аран хăйĕн ашшĕ Фар-
ра пурăннă чухнех хăй çуралнă çĕрте,
Халдейăри Ур çĕрĕнче, вилнĕ. 29Аврампа
Нахор хăйсем валли арăмсем илнĕ; Ав-
рам арăмĕ Сара ятлă пулнă; Нахор арăмĕ
Милка ятлă пулнă. Милка Аранăн хĕрĕ
пулнă, Аран Милка ашшĕ тата Иска аш-
шĕ пулнă. 30Сара тип варлă пулнă, унăн
ача пулман.

31Фарра хăйĕн ывăлне Аврама, хăйĕн
мăнукне — Лота, Аран ывăлне — тата Са-
рăна — хăйĕн кинне, хăй ывăлĕн Аврамăн
арăмне — ертнĕ те, вĕсемпе пĕрле Ханаан
çĕрне кайма тесе, Халдейăри Ур çĕрĕнчен
тухса кайнă; анчах Харрана çитсессĕн,
вĕсем çавăнта вырăнаçнă. 32Харран çĕр-
не çитнĕ чухне Фарра икçĕр пилĕк çулта
пулнă, Фарра Харранра вилнĕ.

12 1Çӳлхуçа Аврама каланă: хăвăн
çĕрӳнтен, тăвану-хурăнташу хуш-
шинчен, аçу килĕнчен тух та Эпĕ сана
кăтартакан çĕре кай; 2санран Эпĕ аслă
халăх кăларăп, сана пиллĕп, санăн ятна

11-мĕш сыпăк. [4] Аст 1:28. **[8]** Аст 32:8. **[10]** 1 Çулс 1:17. **[16]** 1 Çулс 1:19. **[26]** Нав 24:2. 1 Çулс 1:26–27. **[31]** Нав 24:3.
12-мĕш сыпăк. [1] Ап ĕçс 7:3.

мухтавлă тăвăп, эсё пиллёхлё пулăн; 3Эпё
сана пиллекенсене пиллёп, сана ылха-
накансене ылханăп; сан урлă çёр çинчи
пур йăх та пиллёх илё, тенё.
4Хăйне Çӳлхуçа каланă пек, Аврам
тухса кайнă; унпа пёрле Лот та кайнă.
Харранран тухса кайнă чухне Аврам çит-
мёл пилёк çулта пулнă. 5Аврам хăйпе
пёрле хăйён арăмне Сарăна, хăйён тăва-
нён ывăлне Лота, хăйсем пухнă мёнпур
пурлăхне тата Харранра чухне хăйсен
аллинче тытнă мёнпур çыннине илнё
те Ханаан çёрне кайма тухнă; унтан Ха-
наан çёрне пырса çитнё. 6Аврам çав çёр
тăрăх Сихем теекен вырăна çитиччен,
Море юманлăхне çитиччен, тăрăшшёпех
çӳресе тухнă. Çак çёрте ун чухне ханаан-
сем [пурăннă]. 7Аврама Çӳлхуçа курăннă,
каланă [ăна]: çак çёре Эпё санăн йăхна
парăп, тенё. Унта Аврам хăйне курăннă
Çӳлхуçа валли парне вырăнё тунă. 8Çав
тёлтен Аврам ту патнелле, Вефильрен
тухăç еннелле, тапранса кайнă; вăл ун-
та чатăрне çапла карса лартнă: Вефиль
чатăртан анăçалла, Гай тухăçалла пулнă;
çакăнта вăл Çӳлхуçана парне кӳмешкён
парне вырăнё туса лартнă та [хăйне ку-
рăннă] Çӳлхуçа ятне асăнса чённё. 9Вара
Аврам тапранса тухнă та малалла, кăн-
тăралла, кайнă.
10Çав çёрте выçлăх пулнă. Çав çёрте
выçлăх вăйлăланса çитнёрен Аврам Еги-
пета пурăнма кайнă. 11Египет патнелле
çывăхарса çитнё чухне вăл Сарăна, хă-
йён арăмне, каланă: акă эсё питё илем-
лё хёрарăм пулнине эпё пёлетёп; 12сана
курсассăн Египет çыннисем: «ку унăн
арăмё» тейёç; вара мана вёлерёç, сана
чёрё хăварёç; 13эсё: эпё унăн йăмăкё пу-
латăп, те, сан тёлёшпе мана аван пултăр,
сан урлă манăн чунăм чёрё юлтăр, тенё.
14Çаплах пулнă: Аврам Египета çитсес-
сён, Египет çыннисем Сара питё илемлё
хёрарăм иккенне курнă; 15ăна фараонăн
аслă улпучёсем те курнă та ăна фараон
умёнче мухтанă; вара ăна фараон çурт-
не илсе пынă. 16Ун майёпе Аврама аван
пулнă; унăн вак выльăх та, шултăра вы-
льăх та, ашаксем те, арçын чурасемпе
хёрарăм чурасем те, лашалла ашаксем
те, тёвесем те пулнă.
17Анчах Çӳлхуçа Сарăшăн, Аврам ара-
мёшён, фараона хăйне те, унăн килне
те йывăр асап кăтартнă. 18Вара фараон
Аврама чёнтерсе илнё те каланă: эсё ма-
на мён турăн капла? вăл санăн арăму ик-
кенне мана мёншён каламарăн? 19мёншён
эсё: «вăл манăн йăмăк» терён? эпё ăна
хам валли арăм тума илсеттём. Акă ха-
лё санăн арăму, илсе каях [ăна], тенё.
20Фараон хăй çыннисене хушнă та, вёсем
вара Аврама хăйне те, унăн арăмне те,
унăн мён пуррине пурне те, [унпа пёрле
Лота та] кăларса янă.

13 1Аврам хăй те, унăн арăмё те хăй-
сен мёнпур пурлăхне илнё те Еги-
петран тапранса тухса кăнтăралла кайнă,
унпа пёрле Лот та пынă.
2Аврам выльăх-чёрлёх тёлёшёнчен те,
ылтăн-кёмёл тёлёшёнчен те питё пуян
пулнă. 3Вăл, кăнтăр енчен Вефиль пат-
нелле куçа-куçа пырса, унччен хăй Ве-
фильпе Гай хушшине чатăр лартнă выр-
ăна, 4хăй малтан парне вырăнё тунă çёре,
çитнё; унта Аврам Çӳлхуçа ятне асăнса
чённё. 5Аврампа пёрле çӳрекен Лотăн та
çавăн пекех вак выльăх та, шултăра вы-
льăх та, чатăрсем те пулнă. 6Вёсене пёрле
пурăнма çёр хёсёк пулнă, пурлăхё питех
те нумай пулнăран вёсем пёрле пурăнай-
ман. 7Аврам выльăхёсен кётӳçисемпе Лот
выльăхёсен кётӳçисем хушшинче тавла-
шу тухнă; ун чухне çав çёрте ханаансемпе
ферезейсем пурăннă.
8Аврам Лота каланă: санпа манăн хуш-
шăмăрта, санăн кётӳçӳсемпе манăн кё-
тӳçёсем хушшинче хирёçӳ ан пултăр:
эпир — тăвансем; 9пётём çёр санăн умăн-
та мар-и вара? уйăрăл манран: эсё сула-
хаялла кайсассăн, эпё сылтăмалла кайăп;

[3] Пулт 18:18; 22:18; 26:4. Гал 3:8, 16. **[6]** Пулт 18:1; 33:18; 37:12. **[7]** Пулт 13:15; 15:7, 18; 26:3–4. Аст 34:4. **[8]** Пулт 13:3; 28:19. **[13]** Пулт 20:2. **[16]** Пулт 13:2. **[17]** Пс 104:14.
13-мёш сыпăк. **[1]** Пс 104:13. **[2]** Пулт 24:35. Ытар 10:22. **[3]** Пулт 12:8; 35:6. **[4]** Пулт 12:7–8. **[6]** Пулт 36:7. **[7]** Пулт 21:25. **[8]** Пс 33:15. Пулт 11:27; 14:12.

эсё сылтăмалла кайсассăн, эпё сулахаялла кайăп, тенё. 10Лот пуçне çёклесе пăхнă
та Иордан таврашёнчи пётём çёре курнă:
Çӳлхуçа Турă Содомпа Гоморрăна пётериччен çак çёр Сигор таранчченех пётёмпе
Çӳлхуçа пахчи пек, Египет çёрё пек шывпа шăварăнса-нӳрленсе тăнă; 11Лот хăй
валли Иордан таврашёнчи пётём çёре
суйласа илнё те тухăçалла тапранса кайнă. Вара вёсем пёр-пёринчен уйăрăлнă.
12Аврам Ханаан çёрёнче пурăна пуçланă;
Лот çав таврари хуласенче пурăннă, чатăрёсене Содома çитиех лартса тухнă.
13Содом çыннисем усал пулнă, Çӳлхуçа
умёнче питё çылăхлă пулнă.

14Лот Аврамран уйăрăлнă хыççăн Çӳлхуçа Аврама каланă: пуçна çёклесе пăх-ха,
халё ху тăракан вырăнтан çурçёрпе кăнтăр еннелле, тухăçпа анăç еннелле çаврăнса пăх; 15çак эсё куракан пётём çёре
Эпё сана, санăн йăхна ёмёрлёхе парăп,
16санăн йăхна çёр çинчи хăйăр пек тăвăп; çёр çинчи хăйăр пёрчине кам та
пулин шутласа кăларма пултарайсассăн,
санăн йăхна та шутласа кăларёç; 17тăр,
çак çёрён тăршшёне те, урлăшне те утса тух: ăна Эпё сана [тата санăн йăхна
ёмёрлёхе] парăп, тенё. 18Аврам чатăрне
пуçтарса хускалса кайнă та Хевронри
Мамре юманлăхне пырса ларнă; унта вăл
Çӳлхуçана парне кӳмешкён парне вырăнё
туса лартнă.

14 1Сеннаар патши Амрафел, Елласар патши Ариох, Елам патши
Кедорлаомер тата Гоим патши Фидал
пурăннă кунсенче 2çавсем Содом патшине Берана хирёç, Гоморра патшине
Биршана хирёç, Адма патшине Шинава,
Севоим патшине Шемевера тата Сигор теекен Бела патшине хирёç вăрçăпа тухнă.
3Вёсем пурте хальхи Тăварлă тинёс вырăнёнче, Сиддим ятлă айлăмра, пёр çёре
пуçтарăннă. 4Кедорлаомер вёсене вуникё çул пăхăнтарса тăнă пулнă, вунвиççёмёш çулхине вара вёсем пăлхав хускатнă.
5Вунтăваттăмёш çулхине Кедорлаомер
тата унпа пёр канашлă патшасем çитнё
те Аштероф-Карнаимри рефаимсене, Гам
хулинчи зузимсене, Шаве-Кириафаимри
эмимсене, 6хăйсенён Сеир теекен ту хушăкёсенче пурăнакан хоррейсене пушхир
çывăхёнчи Ел-Фаран патне çитичченех
çёмёрсе тухнă. 7Унтан таврăнсассăн, вёсем Мишпат çалё патне — урăхла каласассăн, Кадес патне — пынă та амаликсен
пётём çёрне çёмёрсе тухнă, çавăн пекех
Хацацон-Фамарьте пурăнакан аморрейсене те çёмёрсе тухнă. 8Содом патши,
Гоморра патши, Адма патши, Севоим
патши тата Сигор теекен Бела патши
вёсене хирёç тухнă; вёсемпе Сиддим айлăмёнче çапăçа пуçланă, 9Елам патшине
Кедорлаомера хирёç, Гоим патшине Фидала хирёç, Сеннаар патшине Амрафела
хирёç, Елласар патшине Ариоха хирёç
çапăçнă,— тăватă патша пилёк патшапа
çапăçнă. 10Сиддим айлăмёнче тикёт шăтăкё нумай пулнă. Тара пуçланă Содом
патшипе Гоморра патши çав шăтăксене
кёрсе ӳкнё, ыттисем тусем çине тарнă.
11Çёнтерекенсем Содомпа Гоморрăн мёнпур пурлăхне тата сых ятне хатёрленине
те пётёмпех илсе кайнă. 12Аврам тăванён
ывăлне, Содомра пурăнакан Лота, унăн
пётём пурлăхё-мёнёпех илсе кайнă.

13Хăтăлса юлнисенчен пёри пынă та Аврам еврее хыпар тунă; Аврам ун чухне
Мамре юманлăхёнче пурăннă. Мамре вăл
аморрей çынни, Эшколпа Анер тăванё,
пулнă, кусем Аврампа пёр канашлă тăнă.
14Аврам, хăйён йăхташё [Лот] тыткăна
çакланнине илтсессён, хăй çуртёнче çуралнă виççёр вунсакăр чурине вăрçă кăралё тыттарнă та тăшмансем хыççăн Дан
патне çитиччен хăваласа кайнă; 15вара
ушкăнăн-ушкăнăн уйăрăлса, вăл хăйён
чурисемпе пёрле вёсене çёрле тапăннă
та пётёмпех çёмёрсе тăкнă; вёсене Дамаскăн сулахай енчи Хова теекен вырăна
çитичченех хăваласа кайнă; 16вёсен пётём

[10] Пулт 2:8. Ис 51:3. Иез 28:13. **[13]** Пулт 18:20; 19:13. Иез 16:49. **[15]** Пулт 12:7; 15:18; 26:4. Аст 34:4. **[16]** Пулт 32:12. Аст 10:22. **[18]** Йыш 13:23.
14-мёш сыпăк. [1] Пулт 10:10; 11:2. **[2]** Пулт 19:22. **[13]** Пулт 17:8. Евр 11:9, 13. **[14]** Нав 19:47.

тупăшне туртса илнĕ, хăйĕн йăхташне Лота та, унăн мĕнпур пурлăхне те, çавăн пекех тата хĕрарăмĕсене те, халăхне те каялла тавăрнă.

17Вăл Кедорлаомера тата унпа пĕрле пулнă патшасене çĕмĕрсе тăкса каялла таврăннă чухне Содом патши ăна хирĕç Шаве айлăмне тухса тăнă, çав вырăна халĕ Патша айлăмĕ теççĕ; 18Салим патши Мелхиседек те çăкăрпа эрех илсе тухнă,— вăл Çӳлти Туррăн священникĕ пулнă,— 19Мелхиседек ăна пиллесе каланă: Çӳлти Турă, тӳпепе çĕр Патши, Аврама пиллĕхлĕ турĕ; 20тăшманусене хăвăн аллуна ӳкернĕ Çӳлти Турă мухтавлă, тенĕ. [Аврам] ăна хăйĕн пĕтĕм тупăшĕнчен вуннăмĕш пайне панă. 21Содом патши Аврама каланă: çыннисене мана пар, туприне хăвăн валли ил, тенĕ. 22Анчах Аврам Содом патшине каланă: аллăма Çӳлти Çӳлхуçа Турă енне, тӳпепе çĕр Патши енне, çĕклетĕп, 23санăн: эпĕ Аврама пуйтартăм темелле ан пултăр — санăн мĕнпур тупрунтан çипне те, ура сыррин чĕнне те илмĕп; 24хамăн чурасем çинисĕр пуçне, манпа пĕрле килнĕ çынсене тивĕçлĕ пайсемсĕр пуçне санăнне нимĕн те илмĕп; Анерпа Эшкол тата Мамрий хăйсен пайне илччĕр, тенĕ.

15 1Çак ĕçсем пулса иртнĕ хыççăн, [çĕрле] Аврама Çӳлхуçа Турă курăннă чухне, ăна Çӳлхуçаран сăмах пулнă, ăна каланă: Аврам, ан хăра; Эпĕ — санăн хӳттӳ; санăн тивлетӳ питех те пысăк [пулĕ], тенĕ. 2Аврам каланă: эй Çӳлхуçа Туррăм! Эсĕ мана мĕн парăн? акă эпĕ ача-пăчасăр юлатăп; манăн çуртăма çак Елиезер, Дамаск çынни, пăхса тăрать, тенĕ. 3Аврам тата каланă: акă Эсĕ мана тăхăмлă тумарăн, акă ĕнтĕ манăн еткерçĕм хам çуртăмра çуралса ӳснĕ чура ывăлĕ, тенĕ. 4Ăна Çӳлхуçаран сăмах пулнă, ăна татах каланă: вăл санăн еткерçӳ пулмĕ; кам санран çуралĕ, санăн еткерçӳ çавă пулĕ, тенĕ. 5Унтан ăна тула илсе тухнă та каланă [ăна]: тӳпе çине пăх-ха, çăлтăрсене шутласа кăларма пултараятăн пулсассăн — шутласа кăлар, тенĕ. Ăна тата каланă: санăн çавăн чухлĕ тăхăм пулĕ, тенĕ. 6Аврам Çӳлхуçана ĕненнĕ, çакна Вăл унăн сăвăплăхĕ вырăнне хунă.

7Вара ăна каланă: Эпĕ Çӳлхуçа, çак çĕре санăн аллуна еткерлĕхе памашкăн сана Халдея çĕрĕнчи Ур хулинчен илсе тухрăм, тенĕ. 8Аврам каланă: эй Çӳлхуçа Туррăм! çак çĕре хам тытса тăрассине ăçтан пĕлес манăн? тенĕ. 9Çӳлхуçа ăна каланă: Ман валли виçĕ çулхи тына пăру, виçĕ çулхи качака, виçĕ çулхи така, улатăпа тата çамрăк кăвакарчăн ил, тенĕ. 10Аврам вĕсене пурне те илнĕ те, çурмаран касса, пĕр пайне тепĕр пайне хирĕç хунă; вĕçен кайăкĕсене çеç касман. 11Çав мĕн пусни çине темĕн чухлĕ çăткăн кайăк вĕçсе аннă, анчах Аврам вĕсене хăвалахăвала янă.

12Хĕвел аннă вăхăтра Аврама тарăн ыйхă пуснă: ăна хăрушă сĕмлĕх хупăрласа илнĕ. 13Çӳлхуçа Аврама каланă: пĕлсе тăр: санăн тăхăмусем ют çĕр çине пырса пурăнакансем пулĕç, вĕсене чура тăвĕç, вĕсене тăватçĕр çул хĕсĕрлесе пурăнĕç, 14анчах Эпĕ вĕсене чура туса пурăннă халăха сут тăвăп; çавăн хыççăн вĕсем [кунта] пысăк пурлăхпа тухса килĕç; 15эсĕ вара хăвăн аçусем патне канăçлăн ăсанăн, сана ыррăн ватăлса çитсессĕн пытарĕç; 16кунта вĕсенĕн тăваттăмĕш сыпăкĕ çаврăнса килĕ, мĕншĕн тесессĕн аморрейсен йĕркесĕр ĕçĕсен виçи тулса çитеймен-ха, тенĕ.

17Хĕвел анса тĕттĕм пулса çитсессĕн, акă кăмакаран тухакан тĕтĕм пек тĕтĕм тата вут çулăмĕ касса çурнă выльăхсем хушшинчен иртсе кайнă. 18Çӳлхуçа çав кун, çапла каласа, Аврампа халал хывнă: çак çĕре Египет юханшывĕнчен пуçласа аслă юханшыв, Евфрат юханшывĕ, патне çитиччен Эпĕ санăн тăхăмна паратăп: 19ку вăл кенейсен, кенезейсен, кедмоней-

[17] 2 Пат 18:18. **[18]** Евр 7:1. **[20]** Евр 7:4. **[24]** Пулт 14:13.
15-мĕш сыпăк. [1] Ис 40:10; 41:10; 43:1. **[2]** Пулт 24:2. **[5]** Пулт 22:17. **[6]** Рим 4:3. Гал 3:6. Иак 2:23. **[10]** Иер 34:18. **[13]** Ап ĕçс 7:6. Тух 12:40. **[16]** Тух 12:41. **[17]** Иер 34:18. **[18]** Пулт 12:7; 13:15; 26:4. Аст 34:4.

сен, [20]хетсен, ферезейсен, рефаимсен,
[21]аморрейсен, ханаансен, [евейсен], гер-
гесейсен тата иевусейсен çĕрĕ, тенĕ.

16 [1]Анчах Сара — Аврам арăмĕ —
ăна ача çуратса паман. Сарăн
Агарь ятлă тарçă, Египет хĕрĕ, пулнă.
[2]Сара Аврама каланă: акă Çӳлхуçамăр
манăн варăма ача çуратмалла мар пи-
тĕрсе лартнă; эсĕ манăн тарçăм патне
кĕр: тен, манăн ун урлă ача пулĕ, тенĕ.
Аврам Сара сăмахне итленĕ. [3]Аврам Ха-
наан çĕрĕнче пурăна пуçлани вунă çул
иртсессĕн, Аврам арăмĕ Сара хăйĕн тар-
çине, Египет хĕрне Агаре, упăшки вал-
ли арăмлăха панă. [4]Аврам Агарь патне
кĕнĕ те, Агарь йывăр çын пулнă. Йывăр
çын пулнине кура Агарь хăйĕн хуçине,
Сарăна, хисеплеми пулнă. [5]Сара Аврама
каланă: эпĕ хурлăха юлнишĕн эсĕ айăп-
лă; эпĕ хамăн тарçăма санăн ытамна
кĕртрĕм, вăл вара, хăй йывăр çын пулни-
не кура, мана хисеплеми пулчĕ; манпа
санăн хушшăмăртине Çӳлхуçамăр татса
патăр, тенĕ. [6]Аврам Сарăна каланă: акă
хăвăн тарçу хăвăн аллунта; мĕн тăвас
тетĕн, çавна ту, тенĕ. Сара вара Агаре
хĕсĕрлеме пуçланă, лешĕ ун патĕнчен
тухса тарнă.

[7]Çӳлхуçа Ангелĕ Агаре пушхирте çăл
патĕнче, Сур еннелле каякан çул çинчи
çăл патĕнче, тĕл пулнă. [8][Çӳлхуçа Ангелĕ
ăна] каланă: Агарь, Сара тарçи! эсĕ ăçтан
килтĕн, ăçта каятăн? тенĕ. Вăл: эпĕ Са-
рăран, хамăн хуçамăмран, таратăп, тенĕ.
[9]Çӳлхуçа Ангелĕ ăна каланă: хăвăн хуçу
патне таврăн, ăна пăхăнса пурăн, тенĕ.
[10]Çӳлхуçа Ангелĕ ăна тата каланă: санăн
йăхна йышлăлантарнăçемĕн йышлăлан-
тарса пырăп, йышлă пулнăран ăна шут-
ласа кăларма та пулмĕ, тенĕ. [11]Çӳлхуçа
Ангелĕ ăна татах каланă: акă эсĕ йывăр
çын, эсĕ ывăл ача çуратăн, санăн асапна
Çӳлхуçа илтнĕрен эсĕ ăна Измаил ятлă
хурăн; [12]вăл çынсем хушшинче хир аша-
кĕ пек пулĕ; унăн алли пурне те хирĕç
пулĕ, пурин алли те ăна хирĕç пулĕ; вăл
хăйĕн пĕтĕм тăванĕ умĕнче пурăнĕ, тенĕ.
[13]Хăйпе калаçакан Çӳлхуçана [Агарь] «Эсĕ
мана куракан Турă» тесе ят панă. Мĕншĕн
тесессĕн вăл: эпĕ çакăнта хама Куракана
чăннипех куртăм, тенĕ. [14]Çавăнпа та çав
çăла Беэр-лахай-рои* теççĕ. Вăл Кадеспа
Баред хушшинче вырăнаçнă.

[15]Агарь Аврама ывăл çуратса панă;
Агарьтен çуралнă ывăлне [Аврам] Изма-
ил тесе ят хунă. [16]Агарь Аврама Измаила
çуратса панă чухне Аврам сакăрвун ултă
çулта пулнă.

17 [1]Аврам тăхăрвун тăхăр çула çит-
сессĕн, ăна Çӳлхуçа курăннă, ăна
каланă: Эпĕ — Пурне те Пултаракан Ту-
рă; Манăн умăмра çӳре, айăпсăр пул;
[2]Эпĕ санпа Хам хушшăма Хамăн хала-
лăма хыватăп, сана питех те, питех те
ĕрчетсе ярăп, тенĕ. [3]Аврам çĕре ӳксе пуç-
çапнă. Турă унпа калаçса ăна тата кала-
нă: [4]Манăн санпа хывас халалăм — Эпĕ
Хам: эсĕ тĕрлĕ халăхсен ашшĕ пулăн;
[5]ӳлĕмрен сана Аврам тесе чĕнмĕç, санăн
яту Авраам пулĕ, мĕншĕн тесессĕн Эпĕ
сана тĕрлĕ халăхсен ашшĕ тăвăп; [6]сана
питех те, питех те ĕрчетсе ярăп, санран
халăхсем пулса кайĕç, санран патшасем
тухĕç; [7]санпа Хам хушшăма, сан хыççăн
килес ăрăвусем хушшине Эпĕ йăхран йă-
ха пыракан халалăма хывăп, Эпĕ санăн
Турру пулассине, сан хыççăн килес ăрăву-
сен Турри пулассине çирĕплетсе ĕмĕрлĕх
халал хывăп; [8]сана тата сан хыççăн килес
ăрăвусене çак хăв çӳрекен çĕре, пĕтĕм
Ханаан çĕрне, ĕмĕрлĕхе еткерлĕхе парăп;
вĕсенĕн Турри пулăп, тенĕ.

[9]Турă Авраама тата каланă: эсĕ вара
Эпĕ хывнă халала уяса тăр, эсĕ хăв та
уяса тăр, сан хыççăн килес ăрусем те
сыпăкран сыпăка уяса тăччăр. [10]Манпа
сирĕн хушшăмăрти тата сан хыççăн ки-
лес ăрусен хушшинчи сыпăкран сыпăка
пымалли, эсир уяса тăмалли Манăн ха-
лалăм акă çакă: сирĕн пур арçын та ӳт

* Мана куракан Чĕрĕ Турăн çăлĕ.

16-мĕш сыпăк. **[14]** Пулт 24:62. **[15]** Гал 4:22.
17-мĕш сыпăк. **[1]** Пулт 12:7; 24:40; 48:15. **[2]** Пулт 12:2. **[4]** Сир 44:19–20. Рим 4:17. **[5]** Ис 51:2. **[6]** Мф 1:6. **[7]** Пулт 15:18. 4 Пат 13:23. Лев 26:12. **[9]** Ап ĕçс 7:8. **[10]** Лев 12:3. Лк 2:21. Ин 7:22.

кастарнă пултăр; [11]ӳтĕр хĕррине касăр:
çакă Манпа сирĕн хушшăмăра хывнă ха-
лал палли пулĕ. [12]Сирĕн ăрăвăрта пур
арçын ачăр та çуралсан сакăр кунран ӳт
кастарнă пултăр: хăвăр килĕрте çурални-
не те, пĕр-пĕр ют халăх çыннинчен кĕмĕл
парса туяннă таван мар ачана та ӳт касăр.
[13]Хăвăн çуртунта çуралнине те, кĕмĕл
парса туяннисене те ӳтне каснă пултăр:
Манăн халалăм сирĕн ӳтĕр çинче ĕмĕр-
лĕх халал пулĕ. [14]Ӳт кастарман арçынна,
[саккăрмĕш кунне] хĕрринчи ӳтне кастар-
манскере, çав чуна ĕнтĕ хăйĕн халăхĕ
хушшинчен пĕтермелле, мĕншĕн тесес-
сĕн вăл Манăн халала пăсать, тенĕ.

[15]Турă Авраама татах каланă: Сарăна,
хăвăн арăмна, Сара тесе ан чĕн, унăн ячĕ
Сарра пултăр; [16]Эпĕ ăна пиллĕп, унран
сан валли ывăл ача парăп; Саррăна пил-
лĕп, унран халăхсем ĕрчесе кайĕç, унран
халăхсен патшисем тухĕç, тенĕ.

[17]Авраам çĕре ӳксе пуççапнă та кулса
янă, хăй ăшĕнче вăл: çĕр çулхи çынран
ывăл пулĕ-ши вара? тăхăрвуннăри Сарра
та çуратĕ-ши вара? тенĕ. [18]Авраам Турра
каланă: эх, Санăн куçу умĕнче Измаил
сывă пулсассăн та юрĕччĕ! тенĕ. [19]Турă
[Авраама] каланă: хăвăн арăму, Сарра,
хăех сана ывăл ача çуратса парĕ, эсĕ ăна
Исаак ятлă хурăн; Эпĕ унпа [Эпĕ унăн
Турри пулăп тата] унăн килес ăрăвĕсен
Турри пулăп тесе ĕмĕрлĕхе халал хывăп.
[20]Эсĕ Измаилшăн йăлăннине те Эпĕ илт-
рĕм: акă Эпĕ ăна пиллĕп, ăна йышлă
тăвăп, питех те, питех те ĕрчетсе ярăп;
унран вуникĕ çулпуç çуралĕ; Эпĕ унран
аслă халăх кăларăп. [21]Анчах Хамăн ха-
лалăма Исаакпа хывăп; ăна сана Сарра
тепĕр çулхине шăп çак вăхăтра çуратса
парĕ, тенĕ.

[22]Вара Турă Авраампа калаçма чарăннă
та ун патĕнчен çĕкленсе кайнă. [23]Авраам
хăйĕн ывăлне Измаила, хăйĕн çуртĕнче
çуралнисене пурне те, кĕмĕлне парса су-
тăн илнисене пурне те, хăйĕн çуртĕнчи
мĕнпур арçынна, пухнă та, Турă хăйне
каланă пек, çав кунах вĕсенĕн хĕрринчи
ӳтне касса янă. [24]Хăйĕн хĕрринчи ӳт-
не каснă чухне Авраам тăхăрвун тăхăр
çулта пулнă. [25]Унăн ывăлĕ Измаил вара
хăйĕн хĕрринчи ӳтне каснă чухне вун-
виçĕ çулта пулнă. [26]Авраама та, унăн
ывăлне Измаила та пĕр кунрах ӳт касса
янă; [27]унпа пĕрле унăн çуртĕнчи пур ар-
çынна та — килте çуралнисене те, ют
халăхран кĕмĕл парса сутăн илнисене
те — ӳт каснă.

18 [1]Кăнтăрлахи шăрăхра Мамре
юманлăхĕнче хăй чатăрĕн алăкĕ
умĕнче ларнă чухне ăна Çӳлхуçа курăннă.
[2]Авраам пуçне çĕклесе пăхнă та — акă ун
умĕнче виçĕ çын тăрать. Вĕсене курсас-
сăн, вăл, чатăрĕн алăкĕ умĕнчен вĕсене
хирĕç чупса кайса, çĕре ӳксе пуççапнă
та [3]каланă: эй Патша! эпĕ Сан умăнта
ырăлăх тупрăм пулсассăн, Хăвăн чурун-
тан пăрăнса иртсе ан кай; [4]кăштах шыв
илсе килĕç, сирĕн урăрсене çăвĕç; вара
çак йывăç айĕнче канса илĕр, [5]эпĕ çăкăр
илсе килĕп, эсир вара чĕрĕрсене сыпăн-
тарăр; унтан [хăвăр çулăрпа] кайăр; эсир
хăвăр чурăр умĕнченех иртсе каятăр-çке,
тенĕ. Вĕсем: епле калатăн, çапла ту, те-
нĕ. [6]Авраам васкасах Сарра патне чатăра
кĕнĕ те каланă [ăна]: виçĕ сата паха çă-
нăхран хăвăртрах чуста çăрса тутлăлла
çăкăр пĕçер, тенĕ. [7]Авраам хăй кĕтĕвĕ
патне чупса кайнă та, лайăх çамрăк пăру
тытса, ăна тарçине панă, лешĕ ăна васка-
сах хатĕрле пуçланă. [8]Авраам вара çу, сĕт
тата пĕçерсе хатĕрленĕ пăрăвне илнĕ те
вĕсен умне лартнă; хăй вĕсен çывăхĕнче
йывăç айĕнче тăнă. Вĕсем çинĕ.

[9]Ăна: Сарра арăму ăçта? тенĕ. Вăл ху-
равланă: кунта, чатăрта, тенĕ. [10]Вĕсенчен
пĕри каланă: Эпĕ сан патна [тепĕр çулхи-
не] çак вăхăтра татах килĕп, Саррăн вара,
санăн арăмун, ывăл ача пулĕ, тенĕ. Сарра
çакна ун хыçĕнче, чатăр алăкĕ патĕнче
итлесе тăнă. [11]Авраампа Сарра ватăлса

[16] Гал 4:23. Ис 51:2. Мф 1:6. **[17]** Пулт 18:12. Лк 1:18. **[19]** Пулт 18:10; 21:1–2. Лк 1:55. **[20]** Пулт 25:13–16. **[21]** Рим 9:9.

18-мĕш сыпăк. [1] Пулт 13:18; 17:1. **[2]** Евр 13:2. **[4]** 1 Тим 5:10. **[5]** Пс 103:15. **[6]** 1 Пат 28:24. 3 Пат 17:13. **[10]** Пулт 17:19; 21:1–2. Рим 9:9. **[11]** Рим 4:19. Евр 11:11.

ситнё, çулланнă çынсем пулнă; Саррăн
хёрарăмсен пулаканни те пулма пăрахнă
ёнтё. 12«Ватăлса çитсессён манăн çав са-
вăнăçа курмалла пулё-ши? ёнтё манăн
хуçамăм та ватă» тесе, Сарра хăй ăшёнче
кулса илнё. 13Çӳлхуçа Авраама каланă:
мёншён-ха Сарра [хăй ăшёнче]: «чăнах
та, ватăлса çитсен те çуратăп-ши?» тесе,
кулса илчё? 14Çӳлхуçашăн йывăрри пур-и
вара? Каласа хунă вăхăтра, тепёр çулхи-
не, Эпё сан патна килёп, Саррăн ывăл
ача [пулё], тенё. 15Сарра вара туннă, вăл:
эпё кулман, тенё. Мёншён тесессён вăл
хăранă. Анчах Турă [ăна] каланă: çук,
эсёултăн, тенё.

16Çав çынсем тăнă та Содом [тата Го-
морра] еннелле çул тытнă; Авраам вёсем-
пе пёрле вёсене ăсатма кайнă. 17Çӳлхуçа
каланă: Хам мён тăвас тенине [Хамăн
чурамран] Авраамран пытарăп-ши вара?
18Авраамран чăннипе те аслă, вăйлă ха-
лăх тухё, çёр çинчи халăхсем пурте ун
урлă пиллёх илёç, 19мёншён тесессён Эпё
ăна вăл хăйён ывăлёсене, хăйён кил-йыш-
не хăйёнчен кайран Çӳлхуçа çулёпе çӳре-
ме, тӳррине тума, тёрёс сут тума вёрент-
се хăвартăр тесе суйласа илтём; Çӳлхуçа
Авраам тёлёшёнчен мён каланине [пё-
тёмпех] туса çитерё, тенё. 20Çӳлхуçа татах
каланă: Содомпа Гоморрăра — йёрекен
сасă, хăрушă сасă, вёсенён çылăхё питех
те йывăр çылăх; 21анам та пăхам: Ман
патăма çитекен сасă — вёсене тарăхса
йёни — тёрёсех-и, вёсем чăнах та çавăн
пек тăваççё-и, çук-и? пёлем, тенё.

22Çак çынсем çавăнтан Содомалла çав-
рăнса кайнă; Авраам çаплах Çӳлхуçа
умёнче тăнă. 23Авраам çывăхарах пынă
та каланă: Эсё тӳрё çынна та усал çын-
семпе пёрле пётерён-им вара, [тӳрё çын-
на та усал çынна мён пулниех пулё-ши
вара]? 24Тен, çак хулара тӳрё пурăнакан
аллă çын тупăнё? Эсё тӳрё пурăнăçлă
аллă çыншăн [вёсем унта пурăнаççё пул-
сассăн] çак [пётём] вырăна хёрхенмён-и,
пётерсех пăрахăн-и? 25Эсё ун пек тăвас
çук, тӳрё çынна усал çынпа пёрле пётё-
рес çук, тӳрё çынна та усал çынна мён
пулниех пулмё; Эсё ун пек тума пулта-
раймастăн! Пётём çёр Тӳри тёрёс мар
сут тăвё-и вара? тенё. 26Çӳлхуçа каланă:
Содом хулинче Эпё тӳрё çын аллă тупас
пулсассăн, Эпё вёсемшён [пётём хулана
тата] çак пётём вырăна хёрхенёп, тенё.
27Авраам хуравласа каланă: эпё — тусан,
эпё — кёл, акă эпё Патшама каламах те-
се шутларăм: 28тен, тӳрё çынсене шут-
ланă чухне аллă пулмашкăн пилёк çын
çитмё, пилёк çын çитменшён Эсё пётём
хулана пётерён-и вара? тенё. Вăл: хёрёх
пилёк çын тупас пулсассăн, пётерессём
çук, тенё. 29Авраам Унпа каласма чарăн-
масăр татах каланă: тен, унта хёрёх çын
тупăнё? тенё. Вăл: хёрёх çыншăн та çав-
на тăвассăм çук, тенё. 30Авраам татах
каланă: эпё каласнăшăн Патша Туррăм
ан çиллентёрччё: тен, унта вăтăр çын
тупăнё? тенё. Вăл: унта вăтăр çын тупăн-
сассăн, пётермёп, тенё. 31Авраам каланă:
акă эпё Патшама каламах тесе шутларăм:
тен, унта çирём çын тупăнё? тенё. Вăл:
çирём çыншăн пётермёп, тенё. 32Авраам
каланă: эпё тата тепёр хут каланăшăн
Патша Туррăм ан çиллентёрччё: тен, унта
вунă çын тупăнё? тенё. Вăл: вунă çыншăн
пётермёп, тенё. 33Çӳлхуçа Авраампа ка-
ласма чарăннă та кайнă; Авраам хăйён
вырăнне таврăннă.

19 1Лот Содом хапхи патёнче ларнă
чухне хайхи икё Ангел каçпа Со-
дома пырса çитнё. Лот курнă та вёсене
кётсе илме ура çине тăнă, вара вёсене
çёре ӳксе пуççапнă та 2каланă: ырă çын-
нăмсем! хăвăр чурăр килне кёрсемёр, çёр
каçăр, урăрсене çăвăр, ирхине тăрăр та
хăвăр каяс çула кайăр, тенё. Вёсем: çук,
эпир урамра çёр каçатпăр, тенё. 3Вăл
вёсене хистесех чённё; вёсем вара, ун
патне кайса, унăн килне кёнё. Вăл вёсе-
не хăна тунă, тутлăлла çăкăр пёçернё,

[12] 1 Пет 3:6. **[14]** Иер 32:27. Зах 8:6. Мф 19:26. **[18]** Пулт 12:3; 22:18. **[19]** Аст 4:9; 6:7. **[20]** Пулт 19:13. Иез 16:48. **[21]** Пулт 11:5. **[25]** Пс 7:9. Ин 5:27. Ап ёçс 17:31. **[27]** Пулт 2:7. Иов 30:19. Еккл 12:7. **[32]** Иак 5:16.

19-мёш сыпăк. [1] Пулт 18:2. **[2]** Евр 13:2. Пулт 18:4.

вёсем çинё. 4Вёсем çывăрма выртиччěнех Содом хулинче пурăнакан çынсем,
çамрăккинчен пуçласа ватти таранах,
пётём хула халăхё, çурта çавăрса илнё
те, 5Лота чёнсе кăларса, ăна çапла калана:
сан патна çёр выртма кёнё çынсем
ăçта? вёсене пирён пата кăлар-ха, эпир
вёсемпе выртса паллашар, тенё. 6Лот, вёсем
патне алăк умне тухса, хăй хыççăн
алăкне питёрнё те 7каланă [вёсене]: тăванăмсем,
усал ан тăвăр; 8манăн акă икё
хёрём пур, вёсем арçынпа хутшăнман-ха;
пёрех хут сирён пата çавсене кăларса
парам, вёсене хăвăр мён тăвас тетёр, çавна
тăвăр; анчах çак çынсене ан тёкёнёр: вёсем
ман килёмре чарăнса тăнă çынсем,
тенё. 9Вёсем [ăна]: кунтарах кил-ха, тенё.
Унтан каланă: акă ютран килнё çын, пире
çавă вёрентесшён-и? халё эпир сана
лешсене усал тунинчен те усалтарах тăвăпăр,
тенё. Вёсем çак çынна, Лота, тапăнмах-хёстермех
пуçланă, ёнтё алăкне
çёмёрсе кёме пырса капланнă. 10Вара леш
çыннисем аллине тăснă та Лота хăйсем
патне пӳрте туртса кёртнё, [пӳрт] алăкне
питёрсе лартнă; 11пӳрт алăкё умёнче тăракан
çынсене вара — кёçённинчен пуçласа
асли таранах — суккăр тунă, вёсем алăк
шыраса хăшкăлсах çитнё.

12Леш çынсем Лота каланă: санăн кунта
тата кам пур? кёрёвӳ-и, ывăлусем-и,
хёрӳсем-и,— санăн хулара кирек кам пулсассăн
та, вёсене пурне те çак вырăнтан
илсе тух, 13эпир çак вырăна пётеретпёр,
мёншён тесессён кунта пурăнакансем
çынсене епле йёртни-асаплантарни Çӳлхуçа
патне çитрё, Çӳлхуçа пире ăна пётерме
ячё, тенё. 14Лот тухнă та, хăйён
хёрёсене çураçнă кёрӳшёсемпе калаçса,
вёсене каланă: тăрăр та çак вырăнтан
тухса кайăр, Çӳлхуçа ку хулана пётерет,
тенё. Анчах та кёрӳшёсене вăл шӳт туса
каланă пек туйаннă.

15Шурăмпуç çуталса килсессён, Ангелсем
Лота васката пуçланă: тăр, арăмупа
ху патăнти икё хёрне илсе тух, хулаçăн йёркесёр ёçёсемшён санăн пётмелле
ан пултăр, тенё. 16Вăл васкаманран леш
çынсем [Ангелсем], ăна Çӳлхуçа хёрхеннипе,
ăна хăйне те, арăмёпе унăн икё
хёрне те аллинчен тытса илсе тухнă, ăна
хула тулашне кăларса тăратнă. 17Вёсене
илсе тухсассăн, Ангелсенчен пёри каланă:
хăвăн чунна çăл; хыçалалла çаврăнса
ан пăх, çак таврара нихăçта та чарăнса
ан тăр; пётес мар тесессён — ту çинелле
тарса хăтăл, тенё. 18Анчах Лот вёсене каланă:
çук, Патшамăм! 19акă Санăн чуру
Санăн умăнта ырăлăх тупрё, Эсё мана
питех те хёрхеннипе манăн пурăнăçăма
çăлса хăвартăн; анчах та эпё ту çине
тарса ёлкёреймёп: мана инкек хăваласа
çитё, эпё çăлăнаймăп; 20акă çак хулана
тарма çывăхарах, вăл пысăках та мар; эпё
çавăнта тарам; манăн чунăм [Сан урлă]
сыхă юлё, тенё. 21Вара ăна каланă: акă
Эпё саншăн çакна та тăвăп: эсё калакан
хулана пётерсе пăрахмăп; 22васка, çавăнта
тарса хăтăл, эсё унта пырса çитмесёр
Эпё ёçе тытăнаймастăп, тенё. Çавăнпа ёнтё
çак хулана Сигор тесе ят панă. 23Хёвел
тухнă, Лот Сигора пырса çитнё.

24Содомпа Гоморра çине Çӳлхуçа тӳперен
çумăр пек çăвакан кӳкёртпе Çӳлхуçаран
тухнă вут-çулăм тăкнă, 25çак хуласене,
çакăнти пётём тавралăха, çав
хуласенче пурăнакан мёнпур халăха, çёр
çинче мён ӳснине [пётёмпех] тёп тунă.
26Лот арăмё, ун хыçёнче пыраканскер,
каялла çаврăнса пăхнă та тăвар юпа пулса
тăнă. 27Авраам ирхине ирех тăнă та
хăй Çӳлхуçа умёнче тăнă вырăна кайнă,
28вăл Содомпа Гоморра енне, унти пётём
тавралăх çине пăхса илнё те курнă — акă
çёр çийёнчен кăмакаран тухакан тётём
пек тётём хăпарать.

29Çав таврари [пётём] хулана пётернё
чухне Турă Авраама асне илнё, вара Лот
пурăнакан хуласене пётернё чухне ăна
пётес çёртен кăларса янă.

30Лот, Сигорта пурăнма хăраса, Сигортан
кайнă та ту хăвăлёнче пурăна пуçла-

[5] Тӳре 19:22. Рим 1:27. **[7]** Иез 16:48. **[9]** 2 Пет 2:7–8. **[11]** Ăсл 19:16. **[14]** 2 Çулс 30:10. Мф 24:38. Лк 17:27–28. **[17]** Ăсл 10:6. **[22]** Тух 32:10. Ăсл 10:6. Пулт 13:10. **[24]** Аст 29:23. Ис 13:19. Иер 50:40. Иез 16:49. Ам 4:11. Лк 17:29. Иуд 1:7. 2 Пет 2:6. **[26]** Ăсл 10:7. Лк 17:32. **[27]** Пулт 18:22.

нă, унпа пĕрле икĕ хĕрĕ пулнă. Вăл ту хăвăлĕнче пурăннă, унпа пĕрле икĕ хĕрĕ пурăннă. 31Асли кĕçĕннине каланă: пирĕн атте ватă, пĕтĕм çĕр çинчи йăла тăрăх, пирĕн пата арçын кĕмелле, анчах çĕр çинче ун пек çын çук; 32апла аттене эрех ĕçтерсе ӳсĕртер те унпа выртса çывăрар, вара хамăр аттемĕртен йăх хăварăпăр, тенĕ. 33Çав каçхине вĕсем ашшĕне эрех ĕçтерсе ӳсĕртнĕ; асли [çав каçхине] кĕнĕ те хăйĕн ашшĕпе çывăрса тухнă; хĕрĕ хăçан выртса хăçан тăнине вăл пĕлмен. 34Тепĕр кунне асли кĕçĕннине каланă: акă эпĕ ĕнер аттепе çывăрса тухрăм; ăна кĕçĕр те эрех ĕçтерсе ӳсĕртер; эсĕ те кĕр, унпа çывăрса тух, хамăр аттемĕртен йăх хăварăпăр, тенĕ. 35Вĕсем çав каçхине те хăйсен ашшĕне эрех ĕçтерсе ӳсĕртнĕ; кĕçĕнни кĕнĕ те унпа çывăрса тухнă; хĕрĕ хăçан выртса хăçан тăнине вăл пĕлмен. 36Лотăн икĕ хĕрĕ те хăйсен ашшĕнчен йывăр çын пулнă; 37аслă хĕрĕ ывăл ача çуратнă, ăна [вăл хам аттемрен пулнă тесе] Моав ятлă хунă. Вăл халичченех моавсен ашшĕ шутланать. 38Кĕçĕн хĕрĕ те ывăл ача çуратнă, ăна [вăл хамăн йăх ывăлĕ тесе] Бен-Амми ятлă хунă. Вăл халичченех аммонсен ашшĕ шутланать.

20 1Авраам çав тĕлтен кăнтăралла куçса кайнă та Кадеспа Сур хушшине вырăнаçнă; пĕр вăхăт Герар хулинче пурăннă. 2Авраам Сарра çинчен, хăйĕн арăмĕ çинчен: вăл манăн йăмăк, тенĕ. [Çав хула çыннисем хăйне ун пирки вĕлересрен вăл: «ку — манăн арăм» тесе калама хăранă.] Авимелех, Герар патши, хăйĕн çыннисене янă та Саррăна хăй патне илсе пыртарнă. 3Авимелехе çĕрле тĕлĕкре Турă курăннă та ăна каланă: акă эсĕ хăв валли илнĕ хĕрарăмшăн вилетĕн, мĕншĕн тесессĕн унăн упăшки пур, тенĕ. 4Авимелех ăна тĕкĕнмен пулнă, вăл каланă: эй Патшамăм! Эсĕ [çакна пĕлмен халăха,] айăпсăр халăха пĕтерĕн-и вара? 5«Ку манăн йăмăкăм пулать» тесе, вăл мана хăех каламарĕ-и? Арăмĕ хăй те: «ку манăн пиччем пулать» терĕ. Эпĕ çакна таса чĕремпе, айăпсăр аллăмпа турăм, тенĕ. 6Турă ăна тĕлĕкре каланă: çакна эсĕ таса чĕрепе тунине Эпĕ те пĕлетĕп, çавăнпа сана Хамăн умăмра çылăха кĕресрен тытса чартăм, çавăнпа сана ăна тĕкĕнме памарăм; 7халех арăма упăшкине пар, вăл — пророк, вăл саншăн кĕлтăвĕ те, вара эсĕ чĕрĕ юлăн; тавăрса памасассăн, пĕлсех тăр: эсĕ хăв та, пĕтĕм кил-йышу та вилмесĕр юлас çук, тенĕ. 8Авимелех ирхине ирех тăнă та, хăйĕн пур чурине те чĕнсе илсе, çак сăмахсене пурне те илтĕнмелле каласа панă; çав çынсем [пурте] питех те хăраса ӳкнĕ. 9Авимелех Авраама чĕнтерсе илнĕ те ăна каланă: эсĕ пире мĕн турăн? эсĕ мана тата манăн патшалăха пысăк çылăха кĕртеттĕн, çапла тума сан умăнта мĕнле çылăх тунă эпĕ? Эсĕ ман тĕлĕшĕмрен тума юраман ĕç турăн, тенĕ. 10Авимелех Авраама тата каланă: çак ĕçе эсĕ мĕн шухăшпа турăн? тенĕ. 11Авраам ăна каланă: çак вырăнта Турăран хăракан çын çук пулĕ, мана арăмăмшăн вĕлереççĕ пулĕ тесе шухăшларăм; 12вăл чăнахах та манăн йăмăк пулать: вăл — ман аттемĕн хĕрĕ, анчах ман аннемĕн хĕрĕ мар; вăл манăн арăм пулчĕ; 13Турă мана аттем çуртĕнчен çула илсе тухнă чухне эпĕ арăма каларăм: маншăн ырă пулса çапла тусамччĕ: эпир кирек мĕнле вырăна çитсессĕн те, эсĕ ман çинчен: ку манăн пиччем пулать, те, терĕм. 14Авимелех вара [пин сикль кĕмĕл тата] вак выльăхпа шултăра выльăх, ар чурасемпе хĕрарăм чурасем илнĕ те Авраама панă; Саррăна та, арăмне, ăна каялла тавăрса панă. 15Авимелех [Авраама] каланă: акă манăн çĕрĕм сан умăнта; ăçта кăмăл тăватăн, çавăнта пурăн, тенĕ. 16Саррăна та каланă: акă эпĕ санăн пиччӳне пин сикль кĕмĕл патăм; вăл санăн хӳттӳ пулĕ, сана хăвăнпа пĕрле пурăнакан пĕтĕм çын куçĕ умĕнче тӳрре кăларĕ, тенĕ. 17Авраам Турра кĕлтунă та, Турă Авимелехе те, унăн

[32] Лев 18:7. **[37]** Аст 2:9.
20-мĕш сыпăк. [1] Пулт 12:9; 13:18. Евр 11:9. **[2]** Пулт 12:13; 26:1, 9. **[3]** Пс 104:14. **[4]** Пулт 18:25. **[5]** Пс 25:6. **[7]** Пс 104:15. Пулт 23:6. Иов 42:8. **[9]** Пулт 26:10. **[12]** Пулт 12:13.

арăмне те, унăн хăрхăмĕсене те сыватнă,
вара вĕсем ача çурата пуçланă, 18мĕншĕн
тесессĕн Çӳлхуçа Авимелех килĕнчи пур
арăм варне те Саррăшăн, Авраам арăмĕ-
шĕн, хупса лартнă пулнă.

21 1Хăй каланă пек, Çӳлхуçа Сарра
çине хĕрхенсе пăхнă, Çӳлхуçа Са-
рраăшăн Хăй мĕн каланине тунă. 2Сарра
йывăр çын пулнă та Авраама унăн ватăл-
малăх кунĕнче, Турă ăна каласа хунă
вăхăтра, ывăл ача çуратса панă; 3Авраам
хăйĕн çуралнă ывăлне, Сарра çуратса па-
нă ывăлне, Исаак ятлă хунă. 4Хăйне Ту-
рă каласа хунă пек, Авраам саккăрмĕш
кунне Исаакăн, хăйĕн ывăлĕн, ӳтне кас-
нă. 5Хăйĕн ывăлĕ Исаак çуралнă чухне
Авраам çĕр çулта пулнă. 6Сарра каланă:
Турă ман тĕлĕшрен кулмалла турĕ; ман
çинчен илтсессĕн кирек кам та кулса ярĕ,
тенĕ. 7Тата каланă: Сарра ача ĕмĕртĕ тесе
Авраама кам калайĕччĕ? эпĕ ăна ватлă-
хĕнче ывăл çуратса патăм, тенĕ.

8Ача пысăкланнă, ăна кăкăр пăрахтар-
нă; [хăйĕн ывăлне] Исаака кăкăр пăрах-
тарнă кун Авраам пысăк ĕçкĕ-çикĕ ту-
нă. 9Сарра [хăй ывăлĕнчен, Исаакран]
Агарь — Египет хĕрĕ — Авраама çуратса
панă ача кулнине курнă та 10Авраама
каланă: çак хăрхăмпа унăн ывăлне хăва-
ласа яр, çак хăрхăм ывăлĕ манăн Исаак
ывăлăмпа пĕрле еткер илес çук, тенĕ.
11Авраама çакă хăйĕн ывăлĕшĕн [Изма-
илшăн] питех те аван мар пек туйăннă.
12Анчах Турă Авраама каланă: ачупа хăр-
хăмушăн ан пăшăрхан; Сарра хăвна мĕн
каласассăн та, унăн сăмахне пурне те
итле, мĕншĕн тесессĕн санăн вăрлăху Иса-
ак урлă ĕрчĕ; 13Эпĕ хăрхăм ывăлĕнчен те
[аслă] халăх кăларăп: вăл та санăн ывă-
лу, тенĕ. 14Авраам ирхине ирех тăнă та
çăкăрпа пĕр сăран хутаç шыв илсе Агаре
панă, ăна унăн хулпуççийĕ çине хунă,
вара ăна ачипе пĕрле кăларса янă. Вăл
ĕнтĕ тухса кайнă та Вирсавия пушхирĕн-
че аташса çӳренĕ.

15Хутаççинчи шывĕ пĕтнĕ, вăл ачине
пĕр тĕм айне пăрахса хăварнă та 16аякка,
ухă йĕппи вĕçсе ӳкес чухлĕ, кайса ларнă.
Вăл: ачам вилĕмне ан курам, тенĕ.
Вăл [аяккарах, ăна] хирĕç ларнă та йĕре
пуçланă, кăшкăрсах йĕнĕ; 17Турă ачанăн
сассине [вăл выртнă вырăнтан] илтнĕ;
Турă Ангелĕ Агаре тӳперен чĕнсе каланă:
Агарь, мĕн пулчĕ? ан хăра; Турă ачанăн
сассине вăл выртакан вырăнтан илтрĕ;
18тăр, ачана çĕклесе тăрат та аллинчен
çавăт ăна, Эпĕ унран аслă халăх кăларăп,
тенĕ. 19Турă унăн куçне уçнă та, Агарь
вара [чĕрĕ] шывлă пусă курнă, ун пат-
не пырса хутаççине шыв тултарса ачине
ĕçтернĕ. 20Турă ачапа пĕрле пулнă; вăл
ӳссе çитĕннĕ те пушхирте пурăна пуçла-
нă, ухă пеме вĕренсе çитнĕ. 21Вăл Фаран
пушхирĕнче пурăннă; амăшĕ ăна Египет
çĕрĕнчен арăм илсе панă.

22Çав вăхăтра тата çапла пулнă: Авиме-
лех [Ахузафпа, хăйĕн тусĕпе, тата] Фи-
холпа, хăйĕн çарпуçĕпе, пĕрле Авраама ка-
ланă: эсĕ кирек мĕн тунă чухне те санпала
Турă, тенĕ; 23эсĕ мана хама та, ывăлăма
та, мăнукăма та хур тумăп тесе халĕ ça-
кăнта Турăпа тупа ту; эпĕ саншăн епле
лайăх пултăм, эсĕ те маншăн тата ху хăна
пулса пурăнакан çĕршĕн çапла пул, тенĕ.
24Авраам: тупа тăватăп, тенĕ.

25Авимелех чурисем Авраамран шыв
пуссине туртса илнĕ пулнă, çаваннăн Ав-
раам Авимелехе ӳпкелесе калаçнă. 26Ави-
мелех [ăна] каланă: çакна кам тунине
пĕлместĕп, хăв та мана каламарăн: эпĕ
ун çинчен халиччен те илтмен-çке, тенĕ.
27Авраам, вак выльăхпа шултăра выльăх
илсе, Авимелехе панă, вĕсем иккĕшĕ пĕр
канашлă тăма сăмах татнă. 28Вак выльăх
кĕтĕвĕнчен илнĕ çичĕ путекне Авраам
уйрăм уйăрса тăратнă. 29Авимелех вара
Авраама каланă: эсĕ [сурăх кĕтĕвĕнчен
илсе] уйрăм уйăрса тăратнă çичĕ путек
кунта мĕне кирлĕ? тенĕ. 30[Авраам] ка-
ланă: çак çичĕ путеке ман аллăмран

21-мĕш сыпăк. [1] Пулт 17:19; 18:10. Евр 11:11. **[2]** Гал 4:22. **[3]** Мф 1:2. **[4]** Ап ĕçс 7:8. Пулт 17:10–12. **[10]** Гал 4:30. **[11]** Пулт 17:18. **[12]** Рим 9:7. Евр 11:18. **[13]** Пулт 16:10; 17:20; 25:16. **[18]** Пулт 17:20. **[21]** Пулт 14:6. **[22]** Пулт 20:2. **[23]** Пулт 26:11. **[25]** Пулт 26:15, 18.

илсем, вёсем шыв пуссине эпё алтнине кӳнтелесе тӑччӑр, тенё. 31Çавӑнпа ёнтё вӑл çак вырӑна Вирсавия тесе ят панӑ,
мёншён тесессён вёсем иккёшё те çакӑнта тупа тунӑ, 32вёсем пёр канашлӑ
тӑмашкӑн Вирсавияра сӑмах татнӑ. Авимелех [Ахузафпа, хӑйён тусёпе, тата]
хӑйён çарпуçёпе Фихолпа пёрле тӑнӑ та филистимсен çёрне каялла тавраннӑ.
33[Авраам] Вирсавияра ката лартса тухнӑ, унта вӑл Çӳлхуçанӑн, ёмёрхи Туррӑн,
ятне асӑнса чённё. 34Ютран пынӑ çын пулса, Авраам филистимсен çёрёнче нумай вӑхӑт пурӑннӑ.

22 1Çак ёçсем пулса иртнё хыççӑн Турӑ Авраама сӑнанӑ-тёрёсленё, ӑна: Авраам! тенё. Вӑл: эпё кунтах, тенё.
2Турӑ каланӑ: хӑвӑн ывӑлна, хӑвӑн пёртен-пёр савнӑ ывӑлна, Исаака, ил те Мориа çёрне кай, унта Эпё сана кӑтартас пёр ту çинче ӑна, ывӑлна, пётёмёшпе çунтарса парне кӳр, тенё. 3Авраам ирхине ирех тӑнӑ та ашакне йёнерлесе тӑратнӑ, хӑйпе пёрле икё тарçине тата хӑйён ывӑлне Исаака илнё; пётёмёшпе çунтарса парне кӳме вутӑ çурнӑ, вара çийёнчех хӑйне Турӑ каланӑ вырӑна тухса кайнӑ. 4Виççёмёш кунне Авраам пуçне çёклесе пӑхнӑ та çав вырӑна аякранах курнӑ. 5Авраам хӑйён тарçисене каланӑ: эсир çакӑнта ашакпа пёрле юлӑр; эпир, ывӑлӑмпа иксёмёр, çавӑнта кайса Турра пуççапӑпӑр та сирён пата тавраннӑпӑр, тенё. 6Авраам, пётёмёшпе çунтарса парне кӳмешкён вутӑ илсе, ӑна Исаакӑн, хӑйён ывӑлён, хулпуççийё çине хунӑ; аллине вутчуль тата çёçё тытнӑ та, иккёшё пёрле кайнӑ. 7Исаак хӑйён ашшёпе Авраампа калаça пуçланӑ, вӑл: аттем! тенё. Лешё: ывӑлӑм, эпё кунтах! тенё. Исаак: акӑ вутчуль те, вутӑ та пур, пётёмёшпе çунтарса парне кӳме путекё ӑçта? тенё. 8Авраам каланӑ: ывӑлӑм, пётёмёшпе çунтарса кӳмелли путеке Турӑ Хӑй кӑтартё, тенё. Вара иккёшё пёрле малалла кайнӑ.

9Вёсем Турӑ каланӑ вырӑна пырса çитнё; унта Авраам парне вырӑнё тунӑ, вуттине купаласа хунӑ, хӑй ывӑлне Исаака çыхса, ӑна парне вырӑнё çине, вутӑ çине, вырттарнӑ. 10Авраам çёçё тытнӑ та ывӑлне пусас тесе аллине çёкленё. 11Анчах ӑна Çӳлхуça Ангелё тӳперен чёнсе каланӑ: Авраам! Авраам! тенё. Авраам: эпё кунтах! тенё. 12Ангел каланӑ: ачу çине аллуна ан çёкле, ӑна нимён те ан ту; халё ёнтё Эпё эсё Турӑран хӑранине пёлетёп: эсё Маншӑн хӑвӑн ывӑлна, хӑвӑн пёртен-пёрресскерне, хёрхенмерён, тенё. 13Авраам пуçне çёклесе пӑхнӑ та курах кайнӑ — акӑ хыçалта пёр така, чӑтлӑхра мӑйракипе çакланнӑскер. Авраам пынӑ та, такана илсе, ӑна хӑйён ывӑлё [Исаак] вырӑнне пётёмёшпе çунтарса парне кӳнё. 14Çав вырӑна Авраам Яхве-ире* тесе ят панӑ. Çавӑнпа халё те: Яхве тӑвё çинче курӑнё, теççё.

15Çӳлхуça Ангелё Авраама тӳперен иккёмёш хут чёнсе каланӑ: 16Çӳлхуça çапла калать: Хампа тупа тӑватӑп, çак ёçе тунӑшӑн, [Маншӑн] хӑвӑн ывӑлна, пёртен-пёрресскерне, хёрхенменшён 17Эпё сана пиллесех пиллёп, санӑн вӑрлӑхна йышлӑлантарнӑçемён йышлӑлантарӑп, ӑна тӳпери çӑлтӑрсем чухлё, тинёс хёрринчи хӑйӑр чухлё тӑвӑп; санӑн вӑрлӑху хӑйён тӑшманёсен хулисене туртса илё; 18эсё Манӑн сӑмахӑма итленёшён санӑн вӑрлӑху урлӑ çёр çинчи пур халӑх та пиллёх илё, тет, тенё. 19Авраам каялла хӑйён тарçисем патне тавраннӑ, вара пурте пёрле Вирсавияна кайнӑ; Авраам Вирсавияра пурӑннӑ.

20Çак ёçсем пулса иртнё хыççӑн Авраам патне хыпар çитернё: акӑ Милка та Нахора, санӑн тӑванна, ывӑлсем çуратса панӑ: 21малтанхи ывӑлё Уц, унӑн шӑллё Вуз, Арам ашшё Кемуил, 22Кесед, Хазо, Пилдаш, Идлаф тата Вафуил çуралнӑ, те-

* Çӳлхуça курё.

[31] Пулт 26:33. Нав 15:28; 19:2. **[33]** Пулт 13:4. Ис 57:15.
22-мёш сыпӑк. [1] Евр 11:17. **[16]** Пс 104:9. Сир 44:21. 1 Мак 2:52. Лк 1:73. Евр 6:13. **[18]** Пулт 12:3; 18:18; 26:4. Сир 44:22. Ап ёçс 3:25. Гал 3:8, 16. Пс 71:17.

нё; 23Вафуилран Ревекка çуралнă. Нахора,
Авраам тăванне, Милка çак сакăр [ывăла] çуратса панă; 24тата унăн çум-арăмё,
Реума ятлăскер, Теваха, Гахама, Тахаша
тата Маахана çуратса панă.

23 1Сарра çёр çирём çичё çул пурăннă: Сарра пурăннă кунçул çакă;
2Сарра Ханаан çёрёнче, [айлăм çёрти]
Кириаф-Арба текен вырăнта, вилнё, халё ăна Хеврон теççё. Авраам Саррăшăн
макăрма, уншăн хурланса хўхлеме пынă.
3Унтан Авраам хăйён вилнё арăмё патёнчен кайнă та Хет ывăлёсемпе калаçса
вёсене каланă: 4эпё сирён патăра ютран
килсе ларнă çын; вилнёскерёме куçăм
умёнчен пытармашкăн мана хăвăр çёрёрте тупăк валли вырăн парсамăр, тенё. 5Хет
ывăлёсем Авраама хуравласа каланă: 6эй
хуçамăр, пире итле-ха; эсё пирён хушшăмăрта Турă лартнă пуçлăх; вилнё арăмна
пирён виле пытаракан çёрти чи лайăх
вырăна пытар; санăн вилнё арăмна [унта]
пытармашкăн пирёнтен никам та сана
пытармалли вырăн парас мар темё, тенё.
7Авраам тăнă та çав çёр халăхё умёнче,
Хет ывăлёсем умёнче, çёре çити тайăлнă;
8[Авраам] вёсемпе калаçса каланă: эсир
манăн вилнёскерёме пытарттарма килёшетёр пулсассăн — итлёр-ха мана: Ефрон-
ран, Цохар ывăлёнчен, маншăн ыйтăр-ха,
9вăл мана хăйён хирё вёçёнчи Махпела
теекен сăрт хăвăлне патăрччё, çын пытармашкăн мана ăна пысăк хакпа сирён
умăрта пуçёпех патăрччё, тенё. 10Ефронё
вара Хет ывăлёсем хушшинче ларнă; хет
çынни Ефрон хăйён хули хапхинчен кёрекен мёнпур Хет ывăлёсем илтмелле Авраама хуравласа каланă: 11çук, хуçамăм,
итле-ха мана: эпё сана хирне те, çав хирти
сăрт хăвăлне те паратăп, хамăн халăхăн
ывăлёсен куçё умёнче ăна сана парнелетёп, вилнё арăмна пытар, тенё. 12Авраам
çав çёр халăхё умёнче çёре çити тайăлнă
та 13çав çёрти [пётём] халăх илтмелле Ефрона çапла каланă: килёшетён пулсассăн,
эпё сана хиршён кёмёл паратăп; илсемччё
манран, эпё унта вилнёскерёме пытарам,
тенё. 14Ефрон, Авраама хуравласа, ăна
каланă: 15эй хуçамăм! итле-ха мана: çак
çёр тăватçёр сикль кёмёл хакне тăрать;
манпа саншăн мён вăл? вилнё арăмна
пытар, тенё. 16Авраам Ефрон сăмахёпе
килёшнё; унтан Авраам Ефрона, лешё
Хет ывăлёсем илтмеллех мён чухлё ыйтнă, çавăн чухлё — суту-илў тăвакансем
хушшинче çўрекен кёмёл виçипе тăватçёр
сикль — виçсе панă.
17Çапла Ефрон хирё — Махпела патёнчи, Мамре тёлёнчи хир — хирти сăрт хăвăлё, хирти тата ун таврашёнчи пётём
йывăç та 18хула хапхинчен кёрекен мёнпур Хет ывăлёсен куçё умёнче Авраам
çёрё пулса тăнă. 19Çакăн хыççăн Авраам
Саррăна, хăйён арăмне, Махпелăри Мамре тёлёнчи хире, çавăнти сăрт хăвăлне,
пытарнă, халё вăл Ханаан çёрёнчи Хеврон
пулать. 20Çав хирпе çав сăрт хăвăлё, çын
пытармашкăн Хет ывăлёсенчен Авраам
аллине куçса, çапла унăн харпăрлăхё пулса тăнă.

24 1Авраам ватă пулнă ёнтё, вăл нумай çула çитнё. Çўлхуçа Авраама
пур тёлёшрен те пилленё. 2Авраам хăйён чурине, хăйён килёнче мён пуррине пурне те пăхса-астуса тăракан аслă
чурине, каланă: аллуна манăн пёççём
çине хур та 3мана Çўлхуçамăрпа — тўпе
Туррипе, çёр Туррипе — тупа туса кала:
манăн [Исаак] ывăлăм валли арăм хам
пурăнакан çёртен, ханаансен хёрёсенчен,
илмён; 4эсё манăн çёрёме, эпё çуралнă
çёршыва, [манăн йăхăм патне] кайăн та
манăн Исаак ывăлăм валли [çавăнтан]
арăм илён, тенё. 5Чури ăна каланă: тен,
хёрарăмё манпа пёрле çак çёре килесшён
пулмё? вара манăн санăн ывăлна эсё тухса килнё çёре каялла илсе каймалла-и?
тенё. 6Авраам ăна каланă: сыхлан, манăн
ывăлăма унта илсе ан кай; 7мана аттем
çуртёнчен, хам çуралнă çёртен илсе килнё Çўлхуçамăр — тўпе Турри [тата çёр
Турри] — мана каларё, Вăл мана тупа

23-мёш сыпăк. [16] Пулт 25:10; 50:13. Нав 24:3. Ап ёçс 7:16.
24-мёш сыпăк. [1] Пулт 21:5. **[2]** Пулт 47:29. **[3]** Пулт 27:46. **[7]** Пулт 12:7; 13:15; 15:18; 26:3–4.

туса каларе: çак çĕре [сана тата] санăн
йăхна парăп, терĕ. Вăл сан умăнтан Хăйĕн
Ангелне ярĕ, эсĕ манăн [Исаак] ывăлăм
валли çавăнтан арăм илĕн; 8хĕрарăмĕ
[çак çĕре] санпа пĕрле килесшĕн мар пул-
сассăн, эсĕ çак эпĕ тупа тутарса каланă
сăмахран хăтăлăн; анчах манăн ывăлă-
ма унта илсе ан кай, тенĕ. 9Чура вара
аллине Авраамăн, хăйĕн хуçин, пĕççийĕ
çине хунă та çапла тумашкăн ун умĕнче
тупа тунă.

10Чури хăй хуçин тĕвисенчен вунă тĕве
илнĕ те кайнă. Унăн аллинче тата хăй
хуçин тĕрлĕ пурлăхĕ пулнă. Вăл çапла
Месопотамие, Нахор хулине тухса кайнă;
11хĕрарăмсем шыв ăсма тухнă вăхăтра, ка-
çалапа, вăл тĕвисене хула тулашне, шыв
пусси патне, чарса тăратнă та 12каланă:
эй Турă, Авраам хуçамăн Турри! çав хĕре
паян мана хирĕç кăларсам, манăн Авраам
хуçама ырăлăх тусам; 13акă эпĕ çăл патĕн-
че тăратăп, хула çыннисен хĕрĕсем шыв
ăсма тухаççĕ; 14эпĕ пĕр хĕрне: кăкшăмна
тайăлтар-ха, эпĕ шыв ĕçем, тейĕп; вăл
[мана]: ĕç, эпĕ санăн тĕвӳсене те [тăраниччене-
нех] шăварăп, тейĕ. Эсĕ Хăвăн Исаак
чуру валли суйласа хунă хĕр çавă пулĕ
вара; Эсĕ манăн хуçама [Авраама] ырăлăх
тунине эпĕ çакăнтан пĕлĕп, тенĕ.

15Вăл [хăй ăшĕнче] çапла каласа та пĕ-
тереймен, акă Ревекка — Вафуил хĕрĕ,
Авраам пиччĕшне Нахора арăмĕ, Милка,
çуратса панă Вафуилăн хĕрĕ — тухать,
кăкшăмне хулпуççийĕ çине лартнă; 16хĕрĕ
питĕ илемлĕ пулнă, арçынпа хутшăнман
хĕр пулнă. Вăл пусă патне аннă та, кăк-
шăмне тултарса, çӳлелле улăхнă. 17Чура
ăна хирĕç чупса пырса каланă: кăкшăмун-
тан мана кăштах шыв ĕçтерсемччĕ, тенĕ.
18Хĕрĕ: ĕçех, ырă çыннăм, тенĕ. Çавăнтах
кăкшăмне хулпуççийĕ çинчен антарса
ăна шыв ĕçтернĕ. 19Ăна ĕçтерсе тăрантар-
сассăн каланă: эпĕ санăн тĕвӳсем валли
те шыв ăсса [пурте] ĕçсе тăраниччене-
нех шăварăп, тенĕ. 20Вара çавăнтах хăй кăк-
шăмĕнчи шывне валашкана янă та татах
пусă патне [шыв] ăсма чупса кайнă, унăн
пур тĕви валли те шыв ăсса панă. 21Çак
çын ун çине пĕр чĕнмесĕр тĕлĕнсе пăхса
тăнă, вăл хăйĕн çулне Çӳлхуçа пилле-
нипе пиллеменнине ăнкарасшăн пулнă.
22Тĕвисем ĕçсе тăрансассăн, çав çын хĕре
çур сикль таякан ылтăн алка тата аллисене
тăхăнмашкăн вунă сикль таякан
икĕ ылтăн сулă кăларса панă; 23[вара
унран ыйтса] каланă: кала-ха мана, эсĕ
кам хĕрĕ? санăн аçу килĕнче пире çĕр
каçма вырăн пулмĕ-ши? тенĕ. 24Хĕр ăна
каланă: эпĕ Вафуил хĕрĕ, Милка Нахора
çуратса панă ывăлĕн хĕрĕ, тенĕ. 25Ăна та-
тах каланă: пирĕн улăм та, выльăх апачĕ
те нумай; çĕр каçма та вырăн пур, тенĕ.
26Вара çак çын тайăлса илнĕ, унтан çĕре
ӳксе Çӳлхуçана пуççапнă та 27каланă: Ав-
раам хуçамăн Çӳлхуçа Турри мухтавлă,
Вăл манăн хуçама Хăйĕн ырăлăхĕнчен,
Хăйĕн тӳрĕлĕхĕнчен татса хăвармарĕ!
Çӳлхуçа мана тӳрĕ çулпа хуçам тăванĕн
çурчĕ патнех илсе килчĕ, тенĕ.

28Хĕр чупса кайнă та килĕнче çакăн çин-
чен амăшне каласа кăтартнă. 29Ревеккăн
Лаван ятлă пиччĕшĕ пулнă. Лаван çав
çын патне, çăл патне, чупса кайнă. 30Вăл,
йăмăкĕн хăлха алкине, аллисене тăхăн-
нă сулăсене курсассăн, Ревекка, хăйĕн
йăмăкĕ, мĕн каланине: çак çын манпала
çапла калаçрĕ тенĕ сăмахсене илтсессĕн,
çав çын патне пынă — акă вăл тĕвисем
патĕнче çăл умĕнче тăрать; 31Лаван [ăна]
каланă: Çӳлхуçа пилленĕскер, кĕрсем ман
патăма! мĕншĕн тулта тăратăн? эпĕ пӳрт
те, тĕвӳсем валли вырăн та хатĕрлесе ху-
тăм, тенĕ. 32Çынни кĕнĕ. Лаван тĕвесем
çинчи япаласене салтса илнĕ те тĕвисене
улăм та, апат та панă; çыннине тата унпа
пĕрле килнисене урисене çумашкăн шыв
панă; 33унтан ăна апат сĕннĕ; анчах вăл:
хам ĕçĕме каласа париччен çиессĕм çук,
тенĕ. Ăна вара: кала, тенĕ.

34Вăл çапла каланă: эпĕ — Авраам чу-
ри; 35Çӳлхуçа Турă манăн хуçама питех
те пиллерĕ, вăл асла тухрĕ: Çӳлхуçа ăна
сурăхсемпе вăкăрсем, кĕмĕлпе ылтăн, ар
чурасемпе хĕрарăм чурасем, тĕвесемпе

[15] Пулт 22:23. **[17]** Ин 4:7.

ашаксем пачё; 36Сарра, манăн хуçамăн арăмё, ватăлса çитсессён манăн хуçама
[пёр] ывăл çуратса пачё, хуçамăм хăйён
мён пуррине пётёмпех ывăлне пачё; 37ху-
çамăм мана тупа тутарса каларё: манăн
ывăлăм валли арăм хам пурăнакан çёрти
ханаансен хёрне ан ил, 38манăн аттем
килне, манăн тăванăмсем патне кай, ма-
нăн ывăлăм валли арăм [çавăнтан] илён,
терё. 39Эпё хамăн хуçама каларăм: тен,
хёрарăмё манпа пёрле пырасшăн пулмё,
терём. 40Вăл мана каларё: эпё Çӳлхуçа
[Турă] умёнче çӳретёп, санпа пёрле Вăл
Хăйён Ангелне ярё, санăн çулна ăнăçлă
тăвё, манăн ывăлăм валли арăм хамăн
тăвансем хушшинчен, хамăн аттем ки-
лёнчен, илён; 41манăн тăванăмсем патне
кайса килсессён, эпё тутарнă тупаран хă-
тăлăн, вёсем сана хёр памасассăн та, эсё
эпё тутарнă тупаран хăтăлăн, терё.
42Эпё паян çăл патне çитрём те кала-
рăм: эй Турă, Авраам хуçамăн Турри! Эпё
килнё çула Эсё ăнăçлă тăватăн пулсассăн,
43акă эпё çăл патёнче тăратăп, [хула çын-
нисен хёрёсем шыв ăсма тухаççё,] шыв
ăсма тухакан пёр хёрне эпё: кăкшăмунтан
мана кăштах шыв ёçтерсемччё, тейёп,
44«хăв та ёç, эпё тата санăн тёвӳсене те
ăсса парăп» тесе калакан хёр манăн ху-
çамăн ывăлё валли [Хăйён Исаак чури
валли] Çӳлхуçа тупса хунă хёр пулё; [Эсё
манăн Авраам хуçама ырăлăх тунине эпё
çавăнтан пёлёп], терём.
45Хам ăшăмра çакна каласа та пётерей-
мерём, акă Ревекка тухрё: хулпуççийё
çине кăкшăмне лартнă, вăл çăл патне
пычё те шыв ăсса илчё; эпё ăна: мана
ёçтерсем, терём. 46Вăл çавăнтах кăкшăм-
не хулпуççийё çинчен илчё те: ёçех, эпё
санăн тёвӳсене те шăварăп, терё. Эпё
ёçрём, вăл [манăн] тёвесене те шăвар-
чё. 47Эпё унран ыйтса: [кала-ха мана,]
эсё кам хёрё? терём. Вăл: Милка Нахора
çуратса панă Вафуилăн хёрё, терё. Эпё
ăна хăлха алки патăм, аллисене тăхăн-
машкăн сулăсем патăм. 48Эпё вара чёркуç-
ленсе лартăм та Çӳлхуçана пуççапрăм,
Çӳлхуçана — хамăн Авраам хуçамăн Тур-
рине — мухтарăм: хуçам тăванён хёрне
унăн ывăлё валли илмешкён Вăл мана
тӳрё çулпа илсе килчё. 49Халё калăр ёнтё
мана: сирён манăн хуçама ырăлăх кăтарт-
ма, кирлине тума кăмăлăр пур-и, çук-и?
каласамăр мана, вара эпё е сылтăмалла,
е сулахаялла каям, тенё.
50Лаванпа Вафуил ăна хуравласа кала-
нă: ку ёç Çӳлхуçа Турăран килнё; эпир
сана хирёç усал та, ырă та калаймастпăр;
51акă Ревекка сан умăнта; ил те кай [ăна];
Çӳлхуçа каланă пек, вăл санăн хуçу ыва-
лён арăмё пултăр, тенё.
52Авраам чури, вёсен сăмахне илтсес-
сён, çёре ӳксе Çӳлхуçана пуççапнă. 53Вăл
кёмёл япаласемпе ылтăн япаласем, тум-
тирсем кăларса Ревеккăна панă; çавăн
пекех унăн пиччёшне те, унăн амăшне те
чаплă парнесем панă. 54Вăл та, унпа пёрле
пынă çынсем те çинё, ёçнё, çавăнта çёр
каçнă. Ирхине тăрсассăн, вăл: мана ярăр
ёнтё, [эпё] хамăн хуçам патне [каям],
тенё. 55Анчах хёрён пиччёшёпе амăшё
каланă: хёрёмёр пирёнпе пёрле вунă кун
та пулин пурăнтăр-ха, вара кайăн, тенё.
56Вăл вёсене каланă: чарса ан тăрăр-ха
мана, Çӳлхуçа манăн çула ăнăçлă турё;
мана ярăр ёнтё, эпё хамăн хуçам патне
каям, тенё. 57Вёсем: хёре чёнсе кёртер те
унран ыйтар, вăл мён калё, тенё. 58Ёнтё
Ревеккăна чёнсе кёртнё те ăна каланă: çак
çынпа пёрле кайăн-и? тенё. Вăл: кайăп,
тенё. 59Вара Ревеккăна, хăйсен йăмăкне,
ăна пăхса ӳстернё хёрарăмпа пёрле янă;
Авраам чурине те, унпа пёрле килнё çын-
сене те янă. 60Ревеккăна пиллесе каланă:
эй йăмăкăмăр! санран пин хутчен пин
çын çуралтăр, санăн тăхăму хăйён тăш-
манёсен çуртне-йёрне ярса илтёр! тенё.
61Ревеккăпа унăн хёрарăм тарçисем тăнă
та тёвесем çине ларса çав çын хыççăн кай-
нă. Чура çапла Ревеккăна илсе кайнă.
62Исаак вара Беэр-лахай-роирен таврăн-
нă пулнă — вăл ун чухне кăнтăр енчи
çёрте пурăннă. 63Каç пулас умён Исаак
хире шухăшламашкăн тухнă, вăл пуçне

[36] Пулт 21:2; 25:5. **[40]** Пулт 17:1. **[42]** Пулт 24:12. **[62]** Пулт 16:14.

çĕклесе пăхнă та курах кайнă: акă тĕвесем килеççĕ. 64Ревекка пăхнă та, Исаака курса, тĕве çинчен аннă. 65Вăл чурана каланă: хир тăрăх пире хирĕç килекен çын кам вăл? тенĕ. Чура: манăн хуçам вăл, тенĕ. Ревекка вара пĕркенчĕк илсе пĕркеннĕ. 66Хăй мĕн тунине чура пурне те Исаака каласа панă. 67Исаак Ревеккăна хăйĕн амăшĕн, Саррăн, чатăрне илсе кĕнĕ, Исаак ăна арăм тунă, Ревекка унăн арăмĕ пулса тăнă, Исаак ăна питĕ юратнă; амăшĕшĕн [Саррăшăн] хуйхăрни пусарăннă вара.

25 1Авраам тата Хеттура ятлă арăм илнĕ. 2Арăмĕ ăна Зимран, Иокшан, Медан, Мадиан, Ишбак тата Шуах ятлă ачасем çуратса панă. 3Иокшанăн Шева, [Феман] тата Дедан çуралнă; Дедан ывăлĕсем çаксем пулнă: [Рагуил, Навдеил,] Ашурим, Летушим тата Леюмим. 4Мадиан ывăлĕсем: Ефа, Ефер, Ханох, Авида тата Елдага. Вĕсем пурте Хеттура ывăлĕсем. 5Хăйĕн мĕн пуррине пурне те Авраам [хăйĕн ывăлне] Исаака панă, 6çум-арăмĕсем çуратнă ывăлĕсене Авраам парнесем панă та хăй сывă чухнех Исаакран, хăйĕн ывăлĕнчен, тухăç енне тухăçри çĕр çине уйăрса янă.

7Авраам пурăннă кунçул çĕр çитмĕл пилĕк çул пулнă; 8Авраам ватăлса çитсе, [пурăнăçпа] тăраниччен пурăнса вилнĕ, вара канăçлă халăхĕпе пĕрлешнĕ. 9Ăна Исаакпа Измаил, хăйĕн ывăлĕсем, Махпела текен сăрт хăвăлне, Ефронăн — хет çыннин, Цохар ывăлĕн — Мамре тĕлĕнчи хирне, пытарнă, 10çав çĕре [тата сăрт хăвăлне] Авраам Хет ывăлĕсенчен сутăн илнĕ пулнă. Унта Авраампа унăн арăмне Саррăна пытарнă. 11Авраам вилсессĕн, Турă унăн ывăлне, Исаака, пилленĕ. Исаак Беэр-лахай-рои çывăхĕнче пурăннă.

12Акă Египет хĕрĕ Агарь — Сарра тарçи — Авраама çуратса панă Измаилăн, Авраам ывăлĕн, йăхĕ-кăкĕ; 13акă Измаил ывăлĕсен ячĕсем, вĕçе-вĕçĕн çуралса пынă ывăлĕсен ячĕсем: Измаилăн малтан çуралнă ывăлĕ Наваиоф, ун хыçĕнчен Кедар, Адбеел, Мивсам, 14Мишма, Дума, Масса, 15Хадад, Фема, Иетур, Нафиш тата Кедма. 16Хăйсен ялĕ-хулинче, хăйсен тапăрĕсенче пурăнакан Измаил ывăлĕсем çаксем ĕнтĕ, вĕсен ячĕсем çаксем ĕнтĕ. Вĕсем — хăйсен ăрăвĕсен вуникĕ çулпуçĕ. 17Измаил пурăннă кунçул çĕр вăтăр çичĕ çул пулнă; вара унăн ĕмĕрĕ иртнĕ, вăл вилнĕ, канăçлă халăхĕпе пĕрлешнĕ. 18Вĕсем Хавилапа Сур хушшинче пурăннă, Сур вара Ассирие кайнă чухне Египет тĕлĕнче юлать. Вĕсем хăйсен пĕтĕм тăванне хирĕçех вырăнаçса тухнă*.

19Акă Исаакăн, Авраам ывăлĕн, йăхĕ-кăкĕ. Авраамран Исаак çуралнă. 20Ревеккăна — Месопотамире пурăнакан арамей çыннин Вафуилăн хĕрне, арамей çыннин Лаванăн йăмăкне — хăй валли качча илнĕ чухне Исаак хĕрĕх çулта пулнă. 21Исаак хăйĕн арăмĕшĕн [Ревеккăшăн] Çӳлхуçана кĕлтунă, мĕншĕн тесессĕн вăл тип варлă пулнă; Çӳлхуça ăна илтнĕ, вара Ревекка, арăмĕ, йывăр çын пулнă. 22Ывăлĕсем ĕнтĕ унăн варĕнчех çапкалашма пуçланă, вăл вара: капла пулас пулсассăн, мĕн кĕтет-ха мана? тенĕ. Вара Çӳлхуçаран ыйтма кайнă. 23Çӳлхуça ăна каланă: санăн ăшунта икĕ ăру; санăн варунтан икĕ тĕрлĕ халăх тухĕ: пĕр халăхĕ тепринчен вăйлăрах пулĕ, асли кĕçĕннине пăхăнса тăрĕ, тенĕ. 24Ĕнтĕ унăн çуратас вăхăчĕ çитнĕ: акă унăн варĕнче йĕкĕрешсем-мĕн. 25Малтанхи хĕп-хĕрлĕ çуралнă, пĕтĕмпе тир пек çăмлă пулнă, ăна Исав ятлă хунă. 26Унтан унăн шăллĕ çуралнă, вăл аллипе Исав ури тупанĕнчен тытса тухнă; ăна Иаков ятлă хунă. Вĕсем [Ревеккăран] çуралнă чухне Исаак утмăл çулта пулнă.

---

* Вĕсем хăйсен пĕтĕм тăванĕпе килĕштермесĕр пурăннă тесе те ăнланма пулать.

[65] 1 Пет 3:6. **[67]** Пулт 23:2.
25-мĕш сыпăк. [2] 1 Çулс 1:32–33. **[5]** Пулт 15:4; 21:10; 24:36. **[8]** Пулт 35:29. Евр 12:23. **[9]** Пулт 49:30–31. **[10]** Пулт 23:16. **[11]** Пулт 16:14; 24:62. **[12]** Пулт 16:15. **[13]** 1 Çулс 1:29. **[15]** Иов 6:19. **[19]** Пулт 21:2. 1 Çулс 1:34. Мф 1:2. **[23]** Рим 9:10–12. Мал 1:2. **[25]** Пулт 27:11. **[26]** Ос 12:3. Ап ĕçç 7:8.

27Ачасем ӳссе çитённё; Исав кайăк тыт-
ма ăста çын пулнă, хир çынни пулнă;
Иаков йăваш çын, чатăрта пурăнакан çын
пулнă. 28Исаак Исав тытнă кайăк ашне
кăмăлланă, çавăнпа вăл Исава юратнă,
Ревекка вара Иакова юратнă.
29Иаков апат пĕçернĕ пулнă; Исав хир-
тен ĕшенсе килнĕ. 30Исав Иакова калана-
нă: эсё мана хĕрлине, çак хĕрлине çиме
пар-ха, эпё ĕшенсе килтём, тенё. Çавăнпа
ăна Эдом теме пуçланă. 31Анчах Иаков
[Исава] каланă: малтан мана хăвăн аслă-
лăхна сут, тенё. 32Исав: акă эпё вилетĕп;
малтан çурални мана мёне кирлё? тенё.
33Иаков [ăна] каланă: тупа ту халех, тенё.
Вăл ун умёнче тупа тунă, çапла [Исав]
хăйён аслăлăхне Иакова сутнă. 34Иаков
Исава çăкăрпа ясмăк яшки панă; вăл çи-
нё, ĕçнё, унтан тăрса тухса кайнă; çапла
Исав хăйён аслăлăхне пăрахăçланă.

26 1Авраам пурăннă чухне пулнă
выçлăхсăр пуçне çак çĕрте кал-
лех выçлăх пулнă; Исаак Авимелех пат-
не, Филисти патши патне, Герара кайнă.
2Çӳлхуçа ăна курăнса каланă: Египета
ан кай; Эпё сана кăтартас çĕрте пурăн,
3çак çĕр тăрăх çӳре, Эпё санпа пĕрле пу-
лăп, сана пиллĕп, çак çĕрсене пётёмпех
сана тата санăн йăхна парăп, Авраама,
санăн аçуна, [Хам] тупа туса каланине
вырăна килтерĕп; 4–5Авраам [санăн аçу]
Манăн сăмахăма итленёшён, Эпё мён ту-
ма каланине тунăшăн — Эпё хушнине,
Манăн йĕркесене, Манăн саккунсене туса
тăнăшăн — санăн йăхна тӳпери çăлтăр
пек йышлă тăвăп, çак çĕрсене пурне те
санăн йăхна парăп; çĕр çинчи пур халăх
та санăн вăрлăху урлă пиллĕхлё пулё,
тенё.
6Исаак Герара пырса вырăнаçнă. 7Çав
вырăнти çынсем унăн арăмё [Ревекка]
çинчен ыйтнă, вăл вёсене: ку манăн йă-
мăкăм, тенё, мёншён тесессён «ку манăн
арăм» теме хăранă: вăл «Ревекка питех
те илемлё пулнăран çак çĕрти çынсем
мана уншăн ан вёлерччĕр» тесе шухăш-
ланă. 8Вăл унта пурăнни чылай вăхăт
иртсессён, Авимелех — Филисти пат-
ши — чӳречерен пăхнă та Исаак Ревек-
кăпа, хăйён арăмёпе, вылянине курнă.
9Вара Авимелех Исаака чёнтерсе илсе
каланă: акă ку санăн арăму-çке; еплe-
ха эсё: вăл манăн йăмăк пулать, терён?
тенё. Исаак ăна каланă: эпё манăн ун
пирки вилес марччё тесе шухăшларăм,
тенё. 10Авимелех [ăна] каланă: эсё капла
пире мён турăн? [манăн] çынсенчен пёри
санăн арăмупа кăшт анчах хутшăнман,
эсё пире çылăха кĕртеттён, тенё. 11Вара
Авимелех пётём халăхне хытарса каланă:
кам та кам çак çынна тата унăн арăмне
тёкёнет, ăна вёлерме тытса парёç, тенё.
12Исаак çав çĕрте тырă акнă, çав çулхи-
не çĕр хут нумайрах урпа пухса илнё:
ăна Çӳлхуçа çапла пилленё. 13Çак çын
асла тухнă, вăл, ытларан ытла çёкленсе,
питех те асла тухса кайнă. 14Унăн вак
выльăх кётёвёсем те, шултăра выльăх
кётёвёсем те пулнă, темён чухлё ана пул-
нă, филистимсем ăна ăмсана пуçланă.
15Унăн ашшё Авраам пурăннă чухне аш-
шён чурисем алтнă пусăсене пётёмпех
филистимсем ишсе, тăпра ярса хупласа
лартнă. 16Авимелех Исаака каланă: пи-
рён патăмăртан кай, эсё пирёнтен чылай
вăйлăрах пулса кайрăн, тенё.
17Вара Исаак унтан кайнă, Герар ай-
лăмне çитсе, чатăрсем карса лартса, ça-
вăнта вырăнаçнă. 18Хăйён ашшё Авраам
пурăннă чухне алтнă пусăсене — [хăйён
ашшё] Авраам вилсессён филистимсем
ишсе-хупласа лартнă пусăсене — Исаак
çёнёрен чавса уçнă; вёсене хăйён аш-
шё [Авраам] панă ятсенех парса тухнă.
19Исаак чурисем айлăмра [Герар айлă-
мёнче] алтнă та унта чёрё шывлă пусă
чавса кăларнă. 20Герар кётӳçисемпе Исаак
кётӳçисем: ку пирён шыв, тесе тавлашнă.
Çапла тавлашнăран Исаак çак пусса Есек
тесе ят панă. 21[Исаак унтан тапранса
кайсассăн,] тепёр пусă алтса кăларнă;
ун пирки те çаплах тавлашнă; вăл ăна

[30] Пулт 36:1, 19. **[33]** Евр 12:16. Пулт 27:36.
26-мёш сыпăк. **[3]** Пулт 12:7; 13:15; 15:7, 18. **[4]** Пулт 12:3; 18:18; 22:18; 28:13–14. Пс 71:17. **[10]** Пулт 20:9.

Ситна тесе ят панӑ. 22Вӑл кунтан тапранса кайнӑ та урӑх пусӑ алтнӑ, кун пирки тавлашман вара; ӑна Реховоф ят панӑ, вӑл: халӗ Çӳлхуçамӑр пире ирӗк вырӑн пачӗ, эпир çӗр çинче ӗрчӗпӗр, тенӗ.

23Кунтан вӑл Вирсавияна куçнӑ. 24Çав каçхине ӑна Çӳлхуçа курӑнса каланӑ: Эпӗ — Авраамӑн, санӑн аçун, Турри; ан хӑра, Эпӗ санпала пӗрле; сана пиллӗп, санӑн йӑхна йышлӑлантарӑп, çакна [санӑн аçушӑн] Авраамшӑн, Хамӑн чурамшӑн, тӑвӑп, тенӗ. 25Вӑл вара унта парне вырӑнӗ тунӑ та Çӳлхуçа ятне асӑнса чӗннӗ. Вӑл унта чатӑр карса лартнӑ, Исаак чурисем унта [Герар айлӑмӗнче] пусӑ алтса кӑларнӑ.

26Ун патне Герартан Авимелех хӑйӗн тусӗпе Ахузафпа тата хӑйӗн çарпуçӗпе Фихолпа пӗрле пынӑ. 27Исаак вӗсене каланӑ: эсир мана курайми пулса хӑвӑр патӑртан хӑваласа янӑ хыççӑн ман патӑма мӗншӗн килтӗр тата? тенӗ. 28Вӗсем каланӑ: Çӳлхуçа санпа пӗрле пулнине эпир уççӑнах куртӑмӑр, çавӑнпа эпир санпа хамӑр хушшӑмӑрта тупа тӑвас, санпа пӗр канашлӑ пулма сӑмах татас терӗмӗр, 29эпир сана тивмесӗр, саншӑн ыррине анчах туса тӑрса, кӑмӑллӑн ӑсатса янӑ пек, эсӗ те пире усал ан тутӑрччӗ терӗмӗр; халӗ сана Çӳлхуçа пиллӗхлӗ турӗ, тенӗ. 30Исаак вӗсемшӗн ӗçкӗ-çикӗ тунӑ, вӗсем ӗçнӗ, çинӗ. 31Ирхине ирех тӑнӑ та пӗрне-пӗри тупа тунӑ; вара Исаак вӗсене ӑсатса янӑ, вӗсем ун патӗнчен кӑмӑллӑн тухса кайнӑ. 32Çав кунах Исаак чурисем пырса ӑна хӑйсем алтакан пусӑ çинчен хыпар тунӑ, вӗсем ӑна: эпир шыв тупрӑмӑр, тенӗ.

33Çав пусса вӑл Шива тесе ят панӑ. Çавӑнпа çав хула ку таранчченех Беэршива [Вирсавия] ятлӑ.

34Исав хӗрӗх çулта пулнӑ, вӑл хӑй валли Иегудифӑна — хет çыннин Беэрӑн хӗрне — тата Васемафӑна — хет çыннин Елонӑн хӗрне — качча илнӗ. 35Вӗсем иккӗшӗ те Исаакпа Ревеккӑна килӗшмен.

27 1Ватӑлса çитсе куçӗ курми пулсассӑн, Исаак хӑйӗн аслӑ ывӑлне Исава чӗнсе илнӗ те ӑна каланӑ: эй ывӑлӑм! тенӗ. Лешӗ ӑна: эпӗ кунтах, тенӗ. 2[Исаак] каланӑ: акӑ эпӗ ватӑлтӑм; хам вилес кунӑма пӗлместӗп; 3халӗ хӑвӑн сӑпрайна, ухӑ йӗппипе уххуна, ил те хире кайса ман валли кайӑк тытса кил, 4ман валли хам юратакан апата хатӗрле те мана çитерме илсе кил, хам виличчен чунӑм сана пиллесе хӑвартӑр, тенӗ.

5Исаак хӑйӗн ывӑлне Исава мӗн каланине Ревекка илтсе тӑнӑ. Исав вара хире кайӑк тытма кайнӑ; 6Ревекка хӑйӗн [кӗçӗн] ывӑлне Иакова каланӑ: акӑ эпӗ аçу санӑн Исав пиччӳне мӗн каланине илтрӗм: 7ман валли кайӑк тытса кил, мана апат хатӗрлесе пар; эпӗ çием, вара хам виличчен сана Çӳлхуçа умӗнче пиллем, терӗ. 8Ывӑлӑм, эсӗ халӗ эпӗ сана мӗн каланине, мӗн хушнине итле: 9кӗтӳ патне кай та унтан мана икӗ [çамрӑк] качака путекки тытса килсе пар; эпӗ аçу валли хӑй юратакан апатне хатӗрлесе парӑп, 10эсӗ ӑна аçу патне илсе кӗрӗн те, вӑл çийӗ, хӑй виличчен сана пиллесе хӑварӗ, тенӗ. 11Иаков хӑйӗн амӑшне Ревеккӑна каланӑ: манӑн Исав пиччем çӑмламас çын, эпӗ яка ӳтлӗ çын; 12тен, аттем мана хыпаласа пӑхӗ те, эпӗ вара унӑн куçӗ умӗнче ултавçӑ пулӑп, хам çине пиллӗх вырӑнне ылхан кӳрӗп, тенӗ. 13Амӑшӗ ӑна каланӑ: ывӑлӑм, сана тивес ылхан ман çие пултӑр, эсӗ манӑн сӑмахӑма çеç итле, кай, илсе килсе пар мана, тенӗ. 14Вӑл кайнӑ та, тытса килсе, амӑшне панӑ; амӑшӗ вара унӑн ашшӗ юратакан апатне пӗçерсе хунӑ. 15Килӗнчи тумтиртен Ревекка аслӑ ывӑлӗн Исавӑн чаплӑ тумне илнӗ те [ӑна] кӗçӗн ывӑлне Иакова тӑхӑнтартнӑ; 16унӑн аллисене, çара мӑйне качака путекки тирӗпе витсе çыхнӑ; 17унтан хӑй хатӗрленӗ апачӗпе çӑкӑрне Иакова, хӑйӗн ывӑлне, тыттарнӑ.

18Вӑл ашшӗ патне кӗнӗ те: аттем! тенӗ. Лешӗ каланӑ: эпӗ кунтах; ывӑлӑм,

[23] Пулт 46:1. **[24]** Пулт 17:7. Ис 41:10; 43:1. **[26]** Пулт 21:22, 32.
27-мӗш сыпӑк. [1] Пулт 48:10.

эсё кам? тенё. 19Иаков хăйён ашшёне каланă: эпё Исав, малтанхи ывăлу, пурне те эсё каланă пек турăм; тăр та манăн кайăк ашне ларса çи, санăн чуну мана пиллемелле пултăр, тенё. 20Исаак хăйён ывăлне каланă: эй ывăлăм! епле эсё питё хăвăрт тупса килтён? тенё. Вăл: санăн Çӳлхуçа Турру ăна мана хирёçех ячё, тенё. 21Вара Исаак Иакова каланă: [ман çывăхăма] кил-ха, ывăлăм, эпё сана хыпаласа пăхам, эсё манăн Исав ывăлăм-и, вăл мар-и? тенё. 22Иаков Исаак патне, хăйён ашшё патне, пырса тăнă, ашшё ăна хыпаласа пăхнă та каланă: сасси — Иаков сасси, аллисем — Исав аллисем, тенё. 23Вăл ăна паллайман, мёншён тесессён Иаков аллисем Исав пиччёшён аллисем пекех çăмламас пулнă; вара ăна пиллесе 24каланă: манăн Исав ывăлăм эсё-и? тенё. Иаков: эпё, тенё. 25Исаак каланă: пар-ха мана, эпё ывăлăм кайăкне çием, манăн чунăм сана пиллемелле пултăр, тенё. Иаков ăна панă, вăл çинё; ăна эрех те кӳрсе панă, вăл ёçнё. 26Исаак, ашшё, ăна каланă: [ман патăма] кил-ха, чупту мана, ывăлăм, тенё. 27Вăл ашшё патне пырса ăна чуптунă. Исаак унăн тумтирён шăршине туйса илнё, вăл ăна пиллесе каланă: ывăлăм шăрши — уй-хир шăрши, Çӳлхуçамăр пилленё [тулли] уй-хир шăрши; 28Турă сана тӳпери сывлăмран, çёр тулăхёнчен ырăлăх парса тăтăр, иксёлми тырă-пулă, эрех парса тăтăр; 29сана халăхсем пăхăнса тăччăр, сана этем йăхёсем пуççапчăр; хăвăн тăванусен хуçи пулса пурăн, аннӳ ывăлёсем сана пуççапчăр; сана ылханакансем — ылханлă; сана пиллекенсем — пиллёхлё! тенё.

30Исаак [хăйён ывăлне] Иакова пиллёх парсассăнах, Иаков Исаакăн, хăйён ашшён, куçё умёнчен тухса кайсассăнах, Исав, пиччёшё, кайăк тытса таврăннă. 31Вăл та апат пёçернё те, хăйён ашшё патне илсе кёрсе, ашшёне каланă: тăрсам, аттем, ывăлун кайăкне çи, санăн чуну мана пиллемелле пултăр, тенё. 32Исаак вара, ашшё, ăна: кам эсё? тенё. Вăл: эпё санăн ывăлу, малтанхи ывăлу, Исав, тенё. 33Исаак темён тёрлё хытă чётёресе кайнă та каланă: [ман валли] кайăк тытса килекенё, мана кӳрсе параканё кам пулчё вара? эпё эсё киличчен пурне те çирём, эпё ăна пиллерём; ёнтё вăлах пиллёхлё пулать, тенё. 34Исав хăйён ашшён [Исаакăн] сăмахне итлесе пётерсессён хытă кăшкăрса хурланса йёре пуçланă, вăл ашшёне: эй аттем! мана та пиллесем, тенё. 35Анчах вăл [ăна]: санăн шăллу чееленсе килсе кёчё те санăн пиллёхне илсе тухрё, тенё. 36Вара [Исав] каланă: вăл мана икё хут такăнтарчё ёнтё, ăна çавăнпах Иаков ятлă хуман-и? Вăл манăн аслăлăхăма туртса илчё, акă халё мана тивес пиллёхе те илчё, тенё. [Исав хăйён ашшёне] татах каланă: эсё ман валли [те] пиллёх хăвармарăн-и вара? тенё. 37Исаак Исава хуравласа каланă: акă эпё ăна санăн хуçу туса хутăм, унăн тăванёсене пурне те унăн чури турăм; ăна тырă-пулă, эрех пиллерём; ывăлăм, саншăн эпё мён тăвайăп ёнтё? тенё. 38Исав хăйён ашшёне каланă: эй аттем, санăн пёр пиллёх анчах-и вара? аттеçём, мана та пиллесем! тенё. [Исаак пёр чёнмесёр тăнăран] Исав сасăпа йёрсе янă.

39Исаак, ашшё, ăна хуравласа каланă: акă эсё çёр тулăхёнчен, тӳпе сывлăмёнчен аякра пурăнăн; 40хёçӳ мён тупать, çавăнпа пурăнăн, хăвăн тăванна пăхăнса тăрăн; вăхăт çитсессён, ăна хирёç тăрса, унăн пусмăрне ёнсӳ çинчен сирсе ывăтăн, тенё.

41Исав вара Иакова ашшё панă пиллёхёшён курайми пулнă; Исав хăй ăшёнче: аттемшён йёрес кунсем çывăхарса килеççё — Иакова, хамăн шăллăма, вёлеретёп, тенё. 42Аслă ывăлё Исав каланă сăмахсене Ревеккăна каласа панă; вăл хăйён кёçён ывăлне Иакова чёнтерсе илнё те ăна каланă: акă Исав пиччӳ сана вёлерме хăмсарать; 43халё ёнтё, ывăлăм, манăн сăмахăма итле, тăр та [Месопотамие] ма-

[27] Евр 11:20. **[29]** Йыш 22:6; 24:9. **[34]** Евр 12:17. **[36]** Пулт 25:33. **[38]** Евр 12:17. **[39]** Евр 11:20. **[40]** 4 Пат 8:20. 2 Çулс 21:8. **[41]** Авд 1:10.

нăн Лаван пиччем патне, Харрана, тар;
44пиччӳн хаярлăхĕ çаврăниччен, 45пиччӳн сана çилленнĕ çилли пусăрăниччен пĕр вăхăт ун патĕнче пурăн; каярах вăл эсĕ хăйне мĕн тунине манĕ; эпĕ вара çын ярса сана унтан илсе килтерĕп; мĕншĕн манăн пĕр кунрах сире иксĕре те çухатас-ха? тенĕ.

46Исаака вара Ревекка çапла каланă: хетсен хĕрĕсем пирки манăн пурăнассăм та килмест; Иаков хетсен хĕрне качча илес пулсассăн, çаксем евĕрлине, çак çĕрти хĕрсем евĕрлине илес пулсассăн, мана пурăнăç мĕне кирлĕ? тенĕ.

28 1Исаак Иакова чĕнсе илнĕ те ăна пилленĕ, ăна ӳкĕтлесе каланă: хăв валли арăм ханаансен хĕрне ан ил; 2тăр та Месопотамие Вафуилăн, аннӳ ашшĕн, килне кай, хăв валли арăм çавăнтан — Лаванăн, аннӳ пиччĕшĕн, хĕрĕсенчен пĕрне ил; 3Пурне те Пултаракан Турă сана пиллетĕр, сана ĕрчеттĕр, сана йышлă тутăр, санран темĕн чухлĕ халăх тухтăр; 4сана та, санпа пĕрле санăн тăхăмна та Авраамăн [манăн аттемĕн] пиллĕхне патăр, санăн хăв çӳресе тухнă çĕре — Турă Авраама панă çĕре — илмелле пултăр! тенĕ. 5Исаак вара Иаковпа сывпуллашнă, Иаков Месопотамие Лаван патне — арамей çыннин Вафуилăн ывăлĕ, Иаковпа Исав амăшĕн Ревеккăн пиччĕшĕ патне — тухса кайнă. 6Исаак Иакова пилленине, ăна Месопотамие çавăнтан арăм илме пиллесе янине, «ханаан хĕрĕсенчен ху валли арăм ан ил» тесе ӳкĕтленине, 7Иаковĕ хăйĕн ашшĕпе амăшне итлесе Месопотамие тухса кайнине Исав курнă. 8Исав хăйĕн ашшĕ, Исаак, ханаан хĕрĕсене килĕштерменнине те курнă; 9вара вăл Измаил патне кайнă та ытти арăмĕсемсĕр пуçне тата Махалафăна — Авраам ывăлĕн Измаилăн хĕрне, Наваиоф йăмăкне — хăй валли качча илнĕ. 10Иаковĕ Вирсавияран тухса Харрана кайнă, 11пĕр тĕле çитнĕ те хĕвел анса ларнăран çавăнта çĕр каçма чăраннă. Çав вырăнти пĕр чула илнĕ те, ăна пуçелĕк вырăнне хурса, çавăнта çывăрма выртнă. 12Вăл тĕлĕк курнă: акă çĕр çинче пусма тăрать, унăн çӳл вĕçĕ тӳпенех перĕнет; акă Турă Ангелĕсем ун тăрăх пĕр улăхаççĕ, пĕр анаççĕ. 13Акă ун çинче Çӳлхуçа тăрать, Вăл çапла калать: Эпĕ Çӳлхуçа, санăн аçун Авраамăн Турри, Исаак Турри; [ан хăра]. Эсĕ выртакан çĕре Эпĕ сана, санăн йăхна парăп; 14санăн йăху çĕр çинчи хăйăр пек йышлă пулĕ; эсĕ анăçпа тухăç еннелле, çурçĕрпе кăнтăр еннелле сарăлăн; сан урлă, санăн вăрлăху урлă çĕр çинчи пур ăру та пиллĕхлĕ пулĕ; 15акă Эпĕ санпала пĕрле: эсĕ кирек ăçта кайсассăн та, сана пур çĕрте те сыхласа хăварăп; сана çак çĕр çине каялла çавăрса килĕп, сана Хам мĕн каланине туса çитермесĕр Эпĕ сана пăрахмăп, тет. 16Иаков ыйхинчен вăранса кайнă та: чăнах, ку вырăнта Çӳлхуçа пурăнать; эпĕ ăна пĕлмен! тенĕ. 17Вăл хăраса ӳкнĕ те каланă: ку вырăн епле хăрушă! ку ахаль вырăн мар, ку Турă çурчĕ, ку тӳпе хапхи, тенĕ. 18Иаков ирхине ирех тăнă та, пуç айне хурса выртнă чулне илсе, ăна палăк туса лартнă, ун çине çу юхтарнă. 19Вара [Иаков] çав вырăна Вефиль* тесе ят панă, çав хулан ĕлĕкхи ячĕ Луз пулнă. 20Иаков тупа туса каланă: эхер те [Çӳлхуçа] Турă манпала пĕрле пулса эпĕ каякан çул çинче мана сыхă усрасассăн, çиме — çăкăр, тăхăнма тумтир парсассăн, 21эпĕ аттемĕн килне тăнăçлăн таврăнас пулсассăн, Çӳлхуçа манăн Туррăм пулас пулсассăн, 22çак хам лартнă чул, асăнмалăх лартнăскер, [маншăн] Турă çурчĕ пулĕ; эй Турă, Эсĕ мана мĕн парса тăнинчен вуннăмĕш пайне эпĕ Сана парăп, тенĕ.

---

* Турă çурчĕ.

[46] Пулт 26:34–35.
28-мĕш сыпăк. **[1]** Пулт 24:3. **[2]** Пулт 22:23. **[5]** Ос 12:12. **[6]** Пулт 26:34. **[9]** Пулт 25:13. **[10]** Пулт 26:23; 27:43. **[11]** Пулт 35:1; 48:3. **[12]** Ин 1:51. **[13]** Пулт 35:1, 7; 48:3. Сир 44:25. **[14]** Аст 12:20; 19:8. Пулт 26:4. **[15]** Ис 43:2. **[17]** Тух 3:5. Нав 5:15. **[18]** Пулт 31:13. **[19]** Пулт 35:6. **[20]** 1 Тим 6:8. **[22]** Пулт 35:7.

29 [1]Иаков тăнă та тухăç ывăлĕсен çĕрне [Лаван патне — арамей çыннин Вафуилăн ывăлĕ, Иаковпа Исав амăшĕн Ревеккăн пиччĕшĕ патне] тухса кайнă. [2]Вăл курах кайнă: акă хир варринче пусă, унта ун тавра виçĕ кĕтӳ вак выльăх выртать, мĕншĕн тесессĕн кĕтӳсене çав пусăран шăварнă. Пусă çăварне пысăк чулпа хупланă пулнă. [3]Пусă çăварне хупласа тăракан чула мĕнпур кĕтӳ пухăнсассăн çеç йăвантарса яма юранă, сурăхсене çавăн чухне çеç шăварнă; унтан пусă çăварне каллех чулпа хупласа хунă.

[4]Иаков вĕсене [кĕтӳçĕсене]: тăванăмсем! эсир ăçтисем? тенĕ. Вĕсем: эпир Харранран, тенĕ. [5]Вăл вĕсене каланă: эсир Лавана, Нахор ывăлне, пĕлетĕр-и? тенĕ. Вĕсем: пĕлетпĕр, тенĕ. [6]Вăл вĕсене татах каланă: вăл сывă пурăнать-и? тенĕ. Вĕсем: сывă пурăнать; авă Рахиль, унăн хĕрĕ, сурăхсемпе килет, тенĕ. [7][Иаков] каланă: акă каç пуласси часах мар-ха; выльăхсене пухма вăхăт çитмен-ха; сурăхăрсене шăварăр та кайăр, кĕтсе çӳрĕр, тенĕ. [8]Вĕсем каланă: мĕнпур кĕтӳ пуçтарăнса çитмесĕр, пусă çăварĕнчи чула йăвантарса ямасăр каяймастпăр; сурăхсене эпир çавăн чухне шăваратпăр, тенĕ.

[9]Иаков вĕсемпе калаçса тăнă хушăра ашшĕн вак выльăхĕпе Рахиль [Лаван хĕрĕ] пырса çитнĕ; вăл [ашшĕн вак выльăхне] кĕтсе çӳренĕ. [10]Рахиле — Лаван хĕрне, амăш пиччĕшĕн хĕрне — тата Лаванăн, амăш пиччĕшĕн, сурăхĕсене курсассăн, Иаков пусă патне пынă та, ун çăварне хупланă чула йăвантарса ярса, Лаванăн, амăш пиччĕшĕн, сурăхĕсене ĕçтерсе тухнă. [11]Унтан Иаков Рахиле чуптунă та сасăпах йĕрсе янă. [12]Иаков Рахиле хăй унăн ашшĕн тăванĕ иккенне, Ревекка ывăлĕ иккенне каласа панă. Рахиль килне чупса кайнă та [çакна пĕтĕмпех] ашшĕне каласа кăтартнă.

[13]Лаван, Иаков çинчен — хăй йăмăкĕн ывăлĕ çинчен — илтсессĕн, ăна хирĕç чупса тухнă, ăна ыталаса илнĕ, чуптунă, унтан ăна хăй килне илсе кĕнĕ; вăл Лавана çакна пĕтĕмпех каласа панă. [14]Лаван ăна: чăнах, эсĕ манăн шăммăм, манăн ӳтĕм, тенĕ. Вара Иаков ун патĕнче уйăхĕпех пурăннă.

[15]Лаван Иакова каланă: манăн тăванăм тесе эсĕ маншăн ахалех ĕçлесе тăрăн-и? кала мана, сана мĕн тӳлес? тенĕ. [16]Лаванăн икĕ хĕр пулнă: асли Лия ятлă, кĕçĕнни Рахиль ятлă пулнă. [17]Лийăн куçĕ витĕрех мар пулнă, Рахилĕн вара пĕвĕсийĕ те илемлĕ, сăнĕ-пичĕ те илемлĕ пулнă. [18]Иаков Рахиле юратнă, вăл: Рахильшĕн, кĕçĕн хĕрӳшĕн, эпĕ сана çичĕ çул ĕçлесе тăрăп, тенĕ. [19]Лаван [ăна] каланă: кама та пулин урăххине париччен манăн ăна сана парсассăн авантарах пулĕ; ман патăмра пурăн, тенĕ. [20]Иаков вара Рахильшĕн çичĕ çул ĕçлесе пурăннă; ăна юратнипе уншăн çичĕ çул темиçе кун пек анчах туйăннă.

[21]Вара Иаков Лавана каланă: манăн арăмăма пар, манăн ун патне кĕме вăхăт çитрĕ ĕнтĕ, тенĕ. [22]Лаван çав таврари çынсене пурне те чĕнсе пухнă та ĕçкĕçикĕ тунă. [23]Каçхине [Лаван] ун патне хăйĕн хĕрне Лийăна илсе кĕнĕ; [Иаков] ун патне кĕнĕ. [24]Тарçă ĕçне туса тăмашкăн хăйĕн Зелфа ятлă хăрхăмне Лаван хăйĕн хĕрне Лийăна панă. [25]Ирхине ку Лия иккенни курăннă. [Иаков] Лавана каланă: эсĕ капла мана мĕн турăн? эпĕ сан патăнта Рахильшĕн ĕçлемерĕм-и вара? мĕншĕн эсĕ мана улталарăн? тенĕ. [26]Лаван каланă: пирĕн енче апла тумаççĕ: кĕçĕннине аслинчен малтан качча памаççĕ; [27]ĕнтĕ çакăн эрнине вĕçле те, вара сана теприне те парăпăр, уншăн эсĕ ман патăмра тата çичĕ çул ĕçлесе тăрăн, тенĕ. [28]Иаков вара çапла тунă. Аслийĕн эрнине вĕçлесессĕн, Лаван ăна Рахиле, кĕçĕн хĕрне, качча панă. [29]Тарçă ĕçне туса тăмашкăн хăйĕн Валла ятлă хăрхăмне Лаван хăйĕн хĕрне Рахиле панă. [30][Иаков] Рахиль патне те кĕнĕ, Рахиле вăл Лийă-

29-мĕш сыпăк. [13] Пулт 33:4; 45:14. **[14]** Тӳре 9:2. 2 Пат 5:1; 19:12. **[20]** Ос 12:12.

ран ытларах юратнӑ; çапла Лаван патӗнче тата çичӗ çул ӗçленӗ.
31 Лийӑна юратманнине Çӳлхуçа [Турӑ]
курнӑ, çавӑнпа унӑн варне ӗрчевлӗ ту-
нӑ, Рахиль вара тип варлӑ пулнӑ. 32 Лия,
йывӑр çын пулса, [Иакова] ывӑл ача çу-
ратса панӑ, ӑна Рувим ятлӑ хунӑ, мӗншӗн
тесессӗн Лия каланӑ: манӑн хурлӑхӑм
çине Çӳлхуçамӑр хӗрхенсе пӑхрӗ те [мана
ывӑл ача пачӗ], халӗ ӗнтӗ мана упӑшкам
юратӗ, тенӗ. 33 [Лия] каллех йывӑр çын
пулса [Иакова иккӗмӗш] ывӑл çуратса
панӑ та каланӑ: мана юратманнине Çӳл-
хуçамӑр илтрӗ, çавӑнпа мана кӑна та
пачӗ, тенӗ. Ӑна вӑл Симеон ятлӑ хунӑ.
34 Татах йывӑр çын пулса ывӑл çуратнӑ
та каланӑ: халӗ ӗнтӗ упӑшкам ман çума
çыпçӑнӗ, эпӗ ӑна виçӗ ывӑл çуратса па-
тӑм, тенӗ. Çавӑнпа вӑл ӑна Левий ятлӑ
хунӑ. 35 Татах та йывӑр çын пулса ывӑл
çуратнӑ та каланӑ: халӗ ӗнтӗ эпӗ Çӳлхуçа-
мӑра мухтӑп, тенӗ. Çавӑнпа вӑл ӑна Иуда
ятлӑ хунӑ. Вара çуратма пӑрахнӑ.

30 1 Рахиль хӑй Иакова ача çурат-
са парайманнине кура аппӑшне
ӑмсана пуçланӑ, вара Иакова: мана ача
пар, унсӑрӑн эпӗ вилетӗп, тенӗ. 2 Иаков
Рахиле çилленнӗ те [ӑна]: эпӗ сан варна
ача çуратмалла мар тунӑ Турӑ-им? тенӗ.
3 Рахиль каланӑ: акӑ манӑн Валла тарçӑм;
эсӗ ун патне кӗр; вӑл манӑн аркӑм çине
çуратса патӑр, ун урлӑ эпӗ те ачаллӑ
пулам, тенӗ. 4 Вара Рахиль Валлӑна, хӑ-
йӗн тарçине, ӑна арӑмлӑха панӑ; Иаков
ун патне кӗнӗ. 5 Валла [Рахиль тарçи],
йывӑр çын пулса, Иакова ывӑл çуратса
панӑ. 6 Рахиль каланӑ: Турӑ мана тӳрре
кӑларчӗ, манӑн сассӑма илтрӗ, мана ывӑл
пачӗ, тенӗ. Çавӑнпа ӑна Дан ятлӑ хунӑ.
7 Валла, Рахиль тарçи, татах йывӑр çын
пулса, Иакова тепӗр ывӑл çуратса панӑ.
8 Рахиль каланӑ: эпӗ аппампа вӑйлӑ тав-
лашу кӑларса тавлашрӑм, ӑна çӗнтертӗм,
тенӗ. Ӑна вара Неффалим ятлӑ хунӑ.
9 Лия хӑй çуратма пӑрахнине курнӑ
та хӑйӗн тарçине Зелфӑна илсе Иакова
арӑмлӑха панӑ, [Иаков ун патне кӗнӗ].
10 Зелфа, Лия тарçи, [йывӑр çын пулнӑ та]
Иакова ывӑл çуратса панӑ. 11 Лия: хутшӑн-
чӗ, тенӗ. Вӑл ӑна Гад ятлӑ хунӑ. 12 Зелфа,
Лия тарçи, [татах йывӑр çын пулнӑ та]
Иакова тепӗр ывӑл çуратса панӑ. 13 Лия
каланӑ: ку манӑн телее пулчӗ, мӗншӗн
тесессӗн хӗрарӑмсем мана телейлӗ тейӗç.
Ӑна вара Асир ятлӑ хунӑ.
14 Тулӑ вырнӑ вӑхӑтра Рувим хире тух-
нӑ та унта мандрагор улми тупнӑ, ӑна
Лийӑна, хӑйӗн амӑшне, илсе килсе панӑ.
Рахиль [хӑйӗн аппӑшне] Лийӑна: ывӑлун
мандрагорне мана пар-ха, тенӗ. 15 Анчах
[Лия] ӑна каланӑ: манӑн упӑшкама хӑвӑн
аллуна илни сахал-им сана? манӑн ывӑ-
лӑн мандрагорне те илесшӗн хапсӑнатӑн,
тенӗ. Рахиль каланӑ: ывӑлун ман-
драгорӗшӗн кӗçӗр вӑл санпала вырттӑр
эппин, тенӗ. 16 Иаков каçпа хиртен тав-
рӑннӑ, Лия ӑна хирӗç тухнӑ та каланӑ:
[паян] ман патӑма кӗр, эпӗ ывӑлӑм ман-
драгорне парса сана сутӑн илтӗм, тенӗ.
Çав каçхине вара Иаков унпа выртнӑ.
17 Турӑ Лийӑна илтнӗ: вӑл йывӑр çын
пулнӑ та Иакова пиллӗкӗмӗш ывӑл çу-
ратса панӑ. 18 Лия каланӑ: хамӑн тарçӑма
упӑшкама панӑшӑн Турӑ мана тавӑрса
пачӗ, тенӗ. Ӑна вара Иссахар ятлӑ хунӑ
[ку «тавӑрса пани» тени пулать]. 19 Лия
татах йывӑр çын пулнӑ та Иакова улттӑ-
мӗш ывӑл çуратса панӑ. 20 Лия каланӑ:
Турӑ мана лайӑх парне пачӗ; халӗ ӗнтӗ
упӑшкам манпа пурӑнӗ, эпӗ ӑна ултӑ
ывӑл çуратса патӑм, тенӗ. Ӑна вара За-
вулон ятлӑ хунӑ. 21 Унтан вӑл хӗр çурат-
нӑ, ӑна Дина ятлӑ хунӑ. 22 Турӑ Рахиле
асне илнӗ, Турӑ ӑна илтнӗ, унӑн варне
уçнӑ. 23 Вӑл йывӑр çын пулнӑ та [Иакова]
ывӑл çуратса панӑ, [Рахиль] каланӑ: Ту-
рӑ манӑн çийӗмри мӑшкӑла сирчӗ, тенӗ.
24 Çӳлхуçамӑр мана тепӗр ывӑл та парӗ
тесе, вӑл ӑна Иосиф ятлӑ хунӑ.
25 Рахиль Иосифа çуратнӑ хыççӑн Иаков
Лавана каланӑ: яр ӗнтӗ мана, эпӗ хамӑн
вырӑнӑма, хамӑн çӗрӗме каям; 26 [мана]
хамӑн арӑмӑмсене, хамӑн ачамсене пар,
эпӗ сана вӗсемшӗн ӗçлесе тӑтӑм, эпӗ ка-

[32] Пулт 35:23. **[35]** Мф 1:2.
30-мӗш сыпӑк. [22] Пулт 25:21.

ям ёнтё; эпё саншăн ёçлесе тăнă ёçе эсё
хăв та пёлетён, тенё. 27Лаван ăна каланă:
эх, сан умăнта эпё санăн кăмăлна тупас
пулсанччё! Çӳлхуçа мана саншăн пил-
ленине асăрхатăп, тенё. 28Тата каланă:
хăвна памаллине хăв палăртса хур, эпё
[сана] парăп, тенё. 29[Иаков] ăна каланă:
эпё саншăн епле ёçлесе тăнине, санăн вы-
льăху эпё пурăннă чухне мён тёрлё ёрче-
се кайнине эсё пёлетён; 30эпё киличчен
санăн сахалччё, халё нумайланса кайрё;
Çӳлхуçа сана эпё килсессён пиллерё; ха-
мăн килёмшён эпё хăçан ёçлёп-ши? тенё.
31[Лаван ăна] каланă: мён парас сана?
тенё. Иаков [ăна] каланă: мана нимён
те ан пар. Эсё маншăн эпё мён каланине
тăвас пулсассăн, эпё каллех санăн сурă-
хусене кётсе, астуса çӳрёп. 32Эпё паян
санăн мёнпур сурăх кётёвне пăхса тухăп;
эсё сурăхсенчен улисемпе чăпаррисене
тата хурисене уйăрса ил, качакасенчен
те чăпаррисемпе улисене уйăрса ил. Çа-
вăн пек выльăх мана парас парне пулё,
[вăл манăн пулё]. 33Ӳлёмрен эсё мана
панă парнене пăхма пырсассăн, манăн
тӳрёлёхём сан умăнта курăнсах тăрё.
Ман патăмра ула мар, чăпар мар качака,
хура мар сурăх пулсассăн, вёсем ёнтё
вăрласа килнисем пулёç. 34Лаван [ăна]:
юрё эппин, эсё каланă пек пултăр, тенё.
35Çав кун Лаван ула, чăпар качака таки-
семпе ула, чăпар качакисене — кăшт та
пулин шурă çăм пуррисене пурне те — та-
та мёнпур хура сурăхне уйăрнă та хăйён
ывăлёсен аллине панă; 36Иаковпа хăйён
хушшине виçё кун каймалăх хушă хăвар-
нă. Иаков Лаванăн ытти вак выльăхне
кётсе çӳренё.

37Иаков тирек, миндаль тата шурă вё-
рене турачёсем, чёрё туратсем, илнё те
[Иаков] вёсен хуппине йăрăм-йăрăм сӳсе
шурă йёрсем касса тухнă; 38касса шурат-
нă хуллисене вăл выльăхсен умне, шыв
шăваракан валашкана, хунă; унта выльăх-
сем шыв ёçме пынă, шыв ёçме пырсассăн,
хулăсем умёнче йăхнă. 39Выльăхсем хулă-
сем умёнче йăхнă та, чăпар выльăхсем,
улисем, хушкисем çуралнă. 40Иаков çав
путексене уйăра-уйăра илнё, хăйён вы-
льăхне Лаванăн чăпар тата хура выльăх-
не курмалла тăратнă; хăйён кётёвёсене
уйрăм тытнă, вёсене Лаван выльăхёпе
пёрле хутшăнтарман. 41Тёреклё выльăх
йăхма пуçласассăн, хулă умёнче йăхчăр
тесе, Иаков выльăхсем умёнчи валашкана
ялан хулă пăрахнă. 42Имшер выльăх йăх-
нă чухне вăл хулă хуман. Çапла имшер
выльăх — Лавана, тёрекли Иакова пулнă.
43Çак çын ытла та, ытла та пуйса кайнă,
унăн вак выльăх та, [шултăра выльăх та,]
хёрарăм чура та, ар чура та, тёве те, ашак
та темён чухлё пулнă.

31 1Лаван ывăлёсем: пирён аттенён
мён пуррине пурне те Иаков ярса
илчё, çак пурлăхне пётёмпех пирён атте
мулёнчен пуçтарса турё, тенё. [Иаков]
çак сăмахсене илтнё. 2Иаков Лаванăн сăн-
не курнă та — акă вăл уншăн ёнерхи пек,
виçёмкунхи пек мар. 3Çӳлхуçа Иакова ка-
ланă: аçусен çёрне, хăв çуралнă çёршыва,
таврăн; Эпё санпала пёрле пулăп, тенё.
4Иаков Рахильпе Лийăна хире, хăйён вак
выльăхёсен кётёвё патне, чёнтерсе илнё
те 5вёсене каланă: эпё сирён аçăр сăнне
куратăп та, вăл маншăн ёнерхи пек, ви-
çёмкунхи пек мар; анчах ман аттемён
Турри манпа пёрле пулчё; 6эпё сирён
аçăршăн мёнпур вăйăмпа ёçлесе тăнине
эсир хăвăрах пёлетёр, 7сирён аçăр вара
мана улталаса пурăнчё, мана парассине
вунă хут та улăштарса пăхрё; анчах Турă
ăна мана усал тума памарё. 8Вăл мана
чăпар выльăх сана парне пулё тесессён,
пур выльăх та чăпар пăранлама пуçла-
рё. Вăл мана улисем сана парне пулёç
тесессён, пур выльăх та ула пăранлама
пуçларё. 9Турă сирён аçăртан [мёнпур]
выльăх-чёрлёхне туртса илсе [ăна] мана
пачё. 10Пёрре, выльăхсем йăхнă вăхăтра,
эпё тёлёкре акă мён куртăм: выльăхсем
çине [качакасемпе сурăхсем çине] сике-
кен качака такисем [тата сурăх такисем]
ула, чăпар, хушка. 11Турă Ангелё мана
тёлёкре: Иаков! терё. Эпё: кунтах эпё, те-

[43] Пулт 24:35.

рём. 12Вăл каларё: пуçна çёклесе пăх-ха:
выльăхсем çине [качакасемпе сурăхсем
çине] сикекен качака такисем [тата сурăх
такисем] пурте ула, чăпар, хушка, мёнш-
ён тесессён Лаван сана мён тунине эпё
пурне те куратăп; 13Эпё [сана] Вефильре
[курăннă] Турă, эсё унта палăк çине çу
юхтартăн, эсё унта Мана сăмах патăн;
халё ёнтё тăр та çак çёртен тух, хăвăн
çуралнă çёршывна таврăн, [Эпё санпала
пёрле пулăп,] терё, тенё. 14Рахильпе Лия
ăна хуравласа каланă: аттемёр килёнче
пире пай, еткер пур-и тата? 15пире вăл
ют вырăнне хумасть-и-ха? вăл пире сут-
рё, пирён кёмёле те çисе ячё; 16çавăнпа
ёнтё Турă пирён аттерен туртса илнё
пётём пурлăх [тата мул] — пирён, пирён
ачасенён; çапла ёнтё Турă хăвна мён ка-
ланине пурне те ту, тенё.

17Иаков вара хăйён ачисене, арăмёсене
тёвесем çине лартнă, 18хăйён ашшё Исаак
патне Ханаан çёрне тухса кайнă чухне
вăл хăйён мёнпур выльăх-чёрлёхне, хăй
пуçтарнă мёнпур пурлăхне, Месопотами-
ре ёçлесе илнё выльăх-чёрлёхне, [хăйён
мён пуррине йăлтах] хăйпе пёрле ил-
се тухнă. 19Лаван хăй выльăхён çăмне
касма кайсассăн, Рахиль хăйён ашшён
йёрёхёсене вăрласа тухнă. 20Хăй тухса
кайнине пёлтермесёр Иаков арамей çыс-
нин Лаванăн чёрине хавшатса хăварнă.
21Вăл хăйён мён пуррине пётёмпе илсе
тухса кайнă; вăл, шыв урлă каçса, Галаад
тăвё патнелле кайнă.

22Виççёмёш кунне [арамей çыннине]
Лавана Иаков тухса кайни çинчен кала-
са панă.

23Вара Лаван хăйпе пёрле [ывăлёсене
тата] хурăнташёсене илнё те ун хыççăн
çичё кун хăваланă, ăна Галаад тăвё çин-
че хăваласа çитнё. 24Арамей çыннине
Лавана çёрле тёлёкре Турă курăннă та
ăна каланă: сыхлан, Иакова ырă та, усал
та ан кала, тенё.

25Лаван Иакова хăваласа çитнё; Иаков
хăйён чатăрне ту çине карса лартнă пул-
нă, Лаван та хăйён йăхташёсемпе Галаад
тăвё çине карса лартнă. 26Лаван Иакова
каланă: мён турăн эсё? мёншён мана
улталарăн, манăн хёрёмсене кăралпа
тыткăна илнё çынсене илсе кайнă пек
илсе кайрăн? 27мёншён эсё вăрттăн тухса
тартăн, манран пытантăн, мана калама-
рăн? эпё сана савăнăçлăн, юрă юрласа,
тӳнкёр çапса, кёсле каласа ăсатнă пулă-
ттăм; 28эсё мана хамăн мăнукăмсемпе
хёрёмсене чуптума та памарăн; эсё ăссăр
хăтлантăн. 29Аллăмра сире усал тумалăх
вăйăм-халăм пур, анчах сирён аçăр Тур-
ри ёнер манпала калаçнă чухне каларё:
сыхлан, Иакова ырă та, усал та ан кала,
терё. 30Эсё кайнах пултăрччё, мёншён те-
сессён аçу килне санăн чăтма çук каяссу
килетчё, — мёншён-ха эсё манăн турăсе-
не вăрларăн? тенё. 31Иаков Лавана хура-
ласа каланă: эпё хăрарăм, вăл манран
хăйён хёрёсене [тата манăн мён пуррине]
туртса ан илтёрччё терём, тенё. 32[Иаков
тата каланă:] туррусене камра тупăн, вăл
чёрё юлаймё; хамăр хурăнташсем умёнче
пăхса тух, ман патăмра [санăнни] мён те
пулин тупăнсассăн, илсе каях ăна, тенё.
[Анчах вăл унран нимён те пёлеймен.]
Вёсене [хăйён арăмё] Рахиль вăрланине
Иаков пёлмен.

33Лаван Иаков чатăрне те, Лия чатăр-
не те, икё хăрхăм чатăрёсене те кёрсе
пăхнă, [ухтарнă,] анчах тупайман. Лия
чатăрёнчен тухсассăн, Рахиль чатăрне кё-
нё. 34Рахиль вара йёрёхсене тёве йёнерё
айне пытарса хунă та хăй вёсем çине улăх-
са ларнă. Лаван пётём чатăрне ухтарса
тухнă, анчах тупайман. 35Рахиль хăйён
ашшёне каланă: эпё сан умăнта ура çине
тăманшăн манăн хуçам ан çиллентёр,
мана хёрарăма пулаканни пулнă, тенё.
[Лаван пётём чатăра] ухтарса тухнă, ан-
чах йёрёхёсене тупайман.

36Иаков çилленсе çитнё те Лаванпа тав-
лаша пуçланă. Иаков каласма тытăннă
та Лавана каланă: манăн мён айăп пур,
мён çылăх пур — мёншён мана хыçран
хăвалатăн? 37эсё [манăн килте] манăн пур
япалана та тустарса тухрăн, хăвăн килӳн-

31-мёш сыпăк. [13] Пулт 28:18. **[19]** 1 Пат 19:13. **[29]** Пулт 48:16.

ти япаласенчен мӑн те пулин тупрӑн-и?
çакӑнта манӑн хурӑнташӑмсемпе хӑвӑн
хурӑнташусем умӗнче кӑтарт; иксӗмӗр
хушшӑмӑра вӗсем татса паччӑр. 38Акӑ эпӗ
сан патӑнта çирӗм çул пурӑнтӑм; санӑн
сурӑхусемпе качакусем пӑран пӑрахма-
рӗç; эпӗ санӑн кӗтӗвӳнти такасене пусса
çимерӗм; 39тискер кайӑк çурса пӑрахнине
сан патна илсе пымарӑм, вӑл сиенӗ ӗнтӗ
ман çие пулатчӗ; кӑнтӑрла мӑн çухалнине
те, çӗрле мӑн çухалнине те эсӗ манран
шыраса илеттӗн; 40кӑнтӑрла шӑрӑхпа, çӗр-
ле сивӗпе асапланаттӑм; ыйӑхӑм вӗçнипе
куç хупмастӑм. 41Санӑн çуртунта манӑн
çирӗм çул çапла иртрӗ. Икӗ хӗрӳшӗн эпӗ
сана вунтӑватӑ çул ӗçлесе тӑтӑм, санӑн
выльӑхушӑн ултӑ çул ӗçлерӗм; эсӗ мана
парассине вунӑ хут та улӑштарса пӑхрӑн.
42Манпала пӗрле аттемӗн Турри, Авраам
Турри, пулман пулсассӑн тата Исаак Сех-
ри пулман пулсассӑн, эсӗ мана нимӗнсӗр
кӑларса яраттӑн. Манӑн асапӑмсене, ма-
нӑн аллӑм тунӑ ӗçе Турӑ курчӗ те ӗнер
манӑн хута кӗчӗ, тенӗ.

43Лаван Иакова хуравласа каланӑ: хӗр-
сем — манӑн хӗрӗмсем; ачасем — манӑн
ачамсем; выльӑхӗ — манӑн выльӑх; эсӗ
мӗн кураканни пӗтӗмпех манӑн: халӗ
хамӑн хӗрӗмсене, вӗсем çуратнӑ ачисене
мӗн те пулин тума пултараятӑп-и? 44Халӗ
ӗнтӗ санпа иксӗмӗр килӗшӳ тӑвар, санпа
манӑн хушшӑмӑрти кӳнтелен çакӑ пулӗ,
тенӗ. [Çавӑн чухне Иаков ӑна каланӑ: акӑ
пирӗнпе пӗрле никам та çук; асту, санпа
манӑн хушшӑмӑрти кӳнтелен — Турӑ, те-
нӗ.] 45Иаков чул илнӗ те ӑна палӑк туса
тӑратса лартнӑ. 46Иаков хӑйӗн хурӑнта-
шӗсене: чул пухӑр, тенӗ. Вӗсем чул пуç-
тарса сӑрт туса хунӑ, çавӑнта, чул сӑрт
çинче, [ӗçнӗ те,] çинӗ те. [Лаван ӑна кала-
нӑ: манпа сан хушшӑмӑрта паян çак сӑрт
кӳнтелен пулчӗ, тенӗ.] 47Лаван çав сӑрта
Иегар-Сагадуфа ят панӑ; Иаков вара ӑна
Галаад тенӗ. 48Лаван [Иакова] каланӑ: па-
янтан çак сӑрт [тата хам лартнӑ палӑк]
манпа сан хушшӑмӑрти кӳнтелен пулчӗ,
тенӗ. Çавӑнпа ӑна Галаад тесе ят панӑ та,
49тата ӑна Мицпа тесе ят панӑ, мӗншӗн
тесессӗн Лаван каланӑ: эпир пӗр-пӗрин
куçӗнчен çухалсассӑн, сана та, мана та
Çӳлхуçа тӗсесе тӑтӑр; 50эсӗ манӑн хӗрӗм-
сене усал тӑвас пулсассӑн е манӑн хӗрӗм-
семсӗр пуçне татах арӑм илес пулсассӑн,
асту, пирӗн хушшӑмӑрта [куракан] çын
çук пулсассӑн та, манпа сан хушшӑмӑрта
Турӑ кӳнтелен пулӗ, тенӗ.

51Лаван Иакова татах каланӑ: акӑ сӑрт,
акӑ эпӗ хампа сан хушшӑмӑра лартнӑ
палӑк; 52çак сӑрт та кӳнтелен, çак палӑк
та кӳнтелен: усал тӑвас шухӑшпа эпӗ те
сан патна çак сӑртран иртмӗп, эсӗ те
ман патӑма çак сӑртран, çак палӑкран
иртмӗн; 53пирӗн хушшӑмӑрта Авраам Тур-
ри, Нахор Турри — вӗсенӗн ашшӗсен Тур-
ри — сут тутӑр, тенӗ. Иаков хӑйӗн ашшӗн
Исаакӑн Сехрипе тупа тунӑ. 54Иаков вара
ту çинче парне выльӑхӗ пуснӑ та хӑйӗн
хурӑнташӗсене çӑкӑр çиме чӗннӗ; вӗсем
çӑкӑр çинӗ, [ӗçнӗ,] ту çинчех çӗр каçнӑ.

55Лаван ирхине ирех тӑнӑ та хӑйӗн мӑ-
нукӗсене, хӗрӗсене чуптуса вӗсене пил-
ленӗ. Унтан Лаван каялла кайнӑ, хӑйӗн
килне таврӑннӑ.

32 1Иаков хӑй çулӗпе кайнӑ. [Вӑл
пӑхнӑ та Турӑн хатӗр тӑракан
çарне курнӑ.] Ӑна Турӑ Ангелӗсем кӗтсе
илнӗ. 2Вӗсене курсассӑн, Иаков: ку Турӑ
çарӗ, тенӗ. Вара вӑл çак вырӑна Махана-
им тесе ят панӑ. 3Иаков хӑй умӗнчен Исав
пиччӗшӗ патне Эдом çӗршывне, Сеир çӗр-
не, хыпарçӑсем янӑ, 4вӑл вӗсене хытарса
каланӑ: манӑн Исав хуçама çапла калӑр:
санӑн Иаков чуру акӑ çапла калать, тейӗр:
эпӗ Лаван патӗнче пурӑнтӑм, халичченех
унта пурӑнтӑм; 5манӑн вӑкӑрсем, ашак-
сем, вак выльӑх, ар чурасемпе хӗрарӑм
чурасем те пур, хамӑн [Исав] хуçамӑм
умӗнче ырӑлӑх тупасчӗ тесе, эпӗ [санӑн
чуру] хам çинчен пӗлтермешкӗн хыпар-
çӑсем ятӑм, тейӗр.

6Хыпар тума кайнисем, каялла таврӑн-
са, Иакова каланӑ: эпир санӑн Исав пиччӳ

[39] Тух 22:12. **[42]** Пулт 28:13. Ис 8:13. **[48]** Нав 22:27; 24:27. **[53]** Пулт 28:13. Нав 24:2. Пулт 26:3. Ис 8:13. **[55]** Пулт 29:11.
32-мӗш сыпӑк. [1] Пс 33:8. **[2]** 2 Пат 2:8. **[3]** Пулт 14:6; 36:8. Аст 2:5, 22. **[4]** Пулт 31:38.

патне кайса килтёмёр; вăл ёнтё хăй сана
хирёç килет, унпа пёрле тăватçёр çын,
тенё. 7Иаков питё хăраса кайнă, аптăраса
ӳкнё; вара хăйпе пёрле килнё çынсене
те, вак выльăхпа шултăра выльăхне те,
тёвисене те икё ушкăна уйăрнă. 8 [Иаков]
каланă: Исав пёр ушкăнне тапăнса çё-
мёрсе тăксассăн, тепёр ушкăнё хăтăлма
пултарё, тенё.

9Иаков тата каланă: эй Авраам аттемён
Турри, Исаак аттемён Турри, эй Çӳлхуçа
[Турă], Эсё мана: хăв çёрне, хăв çурал-
нă çёршывна, таврăн, Эпё сана ырăлăх
кăтартăп! терён. 10Эсё Хăвăн чурушăн
тунă пур ырăлăха, пур ырă ёçе эпё ти-
вёçлё те мар, эпё çак Иордан шывё урлă
пёр туяпа çеç каçса кайсаттăм, халё акă
манăн икё тапăр. 11Тăванăм аллинчен,
Исав аллинчен, хăтарсам мана, эпё ун-
ран хăратăп: кунта килсе, вăл мана [та-
та] ачасемпе амăшёсене ан вёлертёрччё.
12Эсё калăрăн: Эпё сана ырăлăх кăтартса
тăрăп, санăн тăхăмна нумай пулнăран
шутласа кăларайми тинёс хăйăрё пёрчи
пек йышлă тăвăп, терён, тенё.

13Çав каçхине Иаков çавăнта çёр каçнă.
Хăйён пурлăхёнчен Исава, хăйён пиччёш-
не, парне памашкăн 14икçёр качака, çирём
качака таки, икçёр сурăх, çирём така,
15сăвакан тёвисене тихи-мёнёпе вăтăр,
хёрёх ёне, вунă вăкăр, çирём ашак, вунă
ашак ăйăрё суйласа илсе [парса янă].
16Кашни кётёвне уйрăм уйăрса хăйён чу-
рисен аллине панă та чурисене каланă:
ман умран пырăр, кётӳпе кётӳ хушшине
хушă хăварăр, тенё. 17Пёрремёш чурине
хытарса каланă: манăн Исав пиччем са-
на хирёç пулса санран: эсё камăн? ăçта
каятăн? сан умăнта кам кётёвё [пырать]?
тесе ыйтсассăн, 18çапла кала: Иаков чу-
рун; ку — Исав хуçам валли янă парне;
акă вăл хăй те пирён хыçранах [килет],
те, тенё. 19[Пёрремёшне] мён каланă,
вăл иккёмёшне те, виççёмёшне те, кётӳ
хыçёнчен пыракансене пурне те çаплах
калама хушнă: Исава хирёç пулсассăн,
ăна çапла калăр, тенё; 20тата калăр: акă
санăн Иаков чуру та пирён хыçранах [ки-
лет] тейёр, тенё. Мёншён тесессён вăл
хăй ăшёнче çапла шутланă: хам умăмран
пыракан парнесемпе эпё унăн кăмăлне
çавăрăп, хăйне кайран курăп; тен, мана
хапăл тăвё, тенё. 21Парнисем ун умёнчен
кайнă, хăй вара çав каçхине тапăрта çёр
каçнă.

22Вăл çёр варринче тăнă та, хăйён икё
арăмёпе икё хăрхăмне тата хăйён вунпёр
ывăлне илсе, Иавок шывё урлă ăшăх вы-
рăнтан каçса кайнă; 23вăл вёсене шыв
урлă каçарса янă, хăйён мён пуррине
те пётёмпе тепёр енне каçарнă. 24Иаков
хăй пёчченех юлнă. Такам унпа шурăм-
пуç киличченех кёрешнё; 25Иакова çёней-
меннине кура, унпа кёрешнё чухне Вăл
Иаков пёççине сёртённё те пёçё шăмми-
не амантнă. 26Вара [ăна] каланă: яр Мана,
шурăмпуç килет, тенё. Иаков: хама пил-
лемесёр ярассăм çук Сана, тенё. 27Ăна
каланă: эсё мён ятлă? тенё. Вăл: Иаков,
тенё. 28 [Иакова] каланă: çакăнтан малаш-
не санăн яту Иаков мар, Израиль пулё,
мёншён тесессён эсё Турăпа кёрешрён,
эсё çынсене те çёнтерсе пурăнăн, тенё.
29Иаков та ыйтса каланă: Хăвăн ятна кала-
сам [мана], тенё. Вăл: Манăн ята мёншён
ыйтатăн эсё? [вăл — тёлёнмелле], тенё.
Вара ăна çавăнта пилленё. 30Иаков çав
вырăна Пенуэл ят панă; вăл: эпё Турра
куçа-куçăн куртăм, манăн чунăм сыхă
юлчё, тенё. 31Вăл Пенуэлран иртнё чух-
не хёвел тухнă; вăл пёççи суранланни-
пе уксахласа пынă. 32Çавăнпа ёнтё Изра-
иль ывăлёсем халиччeнех пёçё шăнăрне
çимеççё, мёншён тесессён Кёрешекенё
Иаков пёççинчи шăнăра сёртённё.

33 1Иаков пăхнă та курах кайнă: акă
Исав, [пиччёшё,] килет, унпа пёр-
ле тăватçёр çын. [Иаков] Лийăпа Рахиль
ачисене тата икё хёрарăм тарçин ачисене
уйрăм уйăрса тăратнă. 2 [Икё] хёрарăм
тарçипе вёсен ачисене — мала, Лийăпа
унăн ачисене — вёсен хыçне, Рахильпе

[9] Пулт 28:13; 31:3, 13. **[10]** 2 Пат 7:18. **[12]** Пулт 28:14. Пс 138:18. **[17]** Пулт 33:8. **[20]** Ытар 18:17; 21:14. **[22]** Йыш 21:24. Аст 2:37. **[24]** Ос 12:3–4. **[28]** Пулт 35:10. **[29]** Тӳре 13:18. **[30]** Тӳре 8:8. 3 Пат 12:25.

Иосифа вара хыçала тăратнă. 3Хăй вĕсен
умĕнчен пынă, пиччĕшĕ патне çитеспе
вăл çичĕ хут çĕре ӳксе пуççапнă.
4Исав ăна хирĕç чупса пынă та ăна
ыталаса илнĕ, ăна кăкăрĕ çумне чăмăр-
танă, чуптунă, [иккĕшĕ те] йĕнĕ. 5[Исав]
пăхнă та арăмсемпе ачасене курса: ку-
сем санăн камсем пулаççĕ? тенĕ. Иаков
каланă: санăн чурун Турă панă ачисем,
тенĕ. 6Вара хĕрарăм тарçисемпе вĕсен
ачисем, çывăха пырса, ăна ӳксе пуççап-
нă; 7Лийăпа унăн ачисем те пырса ӳксе
пуççапнă; юлашкинчен Иосифпа Рахиль
пырса ӳксе пуççапнă. 8Исав каланă: çак
эпĕ тĕл пулнă пысăк йыша эсĕ мĕншĕн
янă? тенĕ. Иаков каланă: [санăн чуру]
хамăн хуçамăн кăмăлне тупасшăн, тенĕ.
9Исав: тăванăм, манăн хамăн та нумай;
хăвăнни хăвăнтах пултăр, тенĕ. 10Иаков
каланă: çук, эпĕ санăн кăмăлна тупрăм
пулсассăн, эсĕ манăн парнеме манăн
аллăмран ил, маншăн санăн сăнна кур-
ни кам та кам Турă сăнне курнă пекех
пулчĕ, эсĕ мана хапăл пултăн; 11манăн
парнеме, хăвна пиллесе панă парнеме,
илсем, мĕншĕн тесессĕн мана Турă пачĕ,
манăн пурте пур, тенĕ. Вăл ăна ӳкĕте
кĕртнĕ, лешĕ илнĕ.
12Вара каланă: тапранар та каяр; эпĕ
сан умăнтан пырăп, тенĕ. 13Иаков ăна ка-
ланă: ачасем ачашшине манăн хуçамăм
пĕлет, вак выльăхĕпе шултăра выльăхĕ
манăн — сăвакан выльăх: вĕсене пĕр кун
хăваласа кайсассăн, пĕтĕм выльăх вил-
се пĕтĕ; 14манăн хуçамăм хăйĕн чури
умĕнчен кайтăр, эпĕ ерипен, хам умран
пыракан выльăхсем пынă майăн, ачам-
сем уттипе пырăп, çапла хамăн хуçамăм
патне Сеира çитĕп, тенĕ.
15Исав: хамăн çыннăмсенчен хăшне-
хăшне санпа пĕрле хăварăп эппин, тенĕ.
Иаков каланă: вăл мĕне кирлĕ? манăн ха-
мăн хуçамăн кăмăлне çеç тупасчĕ! тенĕ.
16Исав вара çав кунах хăйĕн çулĕпе Сеира
таврăннă. 17Иаков Сокхофа çул тытнă, ун-
та хăй валли çурт тунă, выльăхĕ валли
хӳшĕсем туса лартнă. Çавăнпа вăл çак
вырăна Сокхоф ят панă.
18Месопотамирен таврăнсассăн, Иаков,
Ханаан çĕрĕнчи Сихем хулине чиперех
çитсе, хулан мал енне пырса вырăнаç-
нă. 19Вăл хăйĕн чатăрне карса лартнă
хире Еммор ывăлĕсенчен — Сихем аш-
шĕн ывăлĕсенчен — çĕр кесита* парса
сутăн илнĕ. 20Унта парне вырăнĕ лартнă,
унта Израилĕн Çӳлхуçа Туррийĕн ятне
асăнса чĕннĕ.

34 1Дина — Иаков хĕрĕ, Лия çурат-
са панăскер — çав çĕрти хĕрсене
курма тухнă. 2Ăна Сихем — çак çĕр пуçлă-
хĕн, евей çыннин Емморăн ывăлĕ — кур-
нă та, ăна ярса тытса, ирĕксĕрлесе, унпа
выртса çывăрнă. 3Унăн чунĕ Иаков хĕрне
иленнĕ, Сихем хĕре юратса пăрахнă, вăл
хĕр кăмăлне çавăрмалла каласнă.
4Сихем хăйĕн ашшĕне, Еммора, кала-
нă: мана çак хĕре качча илсе пар, те-
нĕ. 5Иаков хăйĕн хĕрне Динăна [Еммор
ывăлĕ] чыссăрлани çинчен илтнĕ, анчах
ывăлĕсем выльăх кĕтĕвĕпе пĕрле хирте
пулнăран вĕсем таврăниччен нимĕн те
шарламан. 6Еммор, Сихем ашшĕ, Иаковпа
каласма пынă. 7Иаков ывăлĕсем хиртен
таврăннă, мĕн пулнине илтсессĕн, çак
арсем питĕ хурланнă, вĕсен çилли тул-
са çитнĕ, мĕншĕн тесессĕн Иаков хĕрĕпе
çывăрса вăл Израиле мăшкăл кăтартнă,
апла тума юраман.
8Еммор вĕсемпе каласа пуçланă, вĕсене
каланă: манăн Сихем ывăлăм чунĕпе си-
рĕн хĕре иленнĕ, ăна Сихема качча пар-
самăр; 9пирĕнпе хурăнташлă пулăр; хă-
вăр хĕрĕрсене пире парăр, пирĕн хĕрсене
[хăвăр ывăлăрсем валли илĕр; 10пирĕнпе
пĕрле пурăнăр; çак сирĕн умăрти çĕр [ас-
лă], пурăнăр, ĕçлĕр çакăнта, ăна хăвăр
валли илĕр, тенĕ. 11Сихемĕ вара хĕрĕн
ашшĕпе пиччĕшĕсене каланă: манăн си-
рĕн кăмăлăра çеç çавăрасчĕ, эсир кирек
мĕн ыйтнине те парăттăм; 12чи пысăк

* Кĕмĕл виçи, 4 сикльпе танлашать.

33-мĕш сыпăк. [8] Пулт 32:17. **[17]** Нав 13:27. Тӳре 8:5. **[19]** Ап ĕçс 7:16.
34-мĕш сыпăк. [1] Пулт 30:21. **[7]** Аст 23:17. **[12]** Тух 22:16.

хулăм, чи хаклă парнесем ыйтăр; кирек
мĕн ыйтсассăн та, эпĕ парăп, хĕрĕре ан-
чах мана качча парсамăр, тенĕ.
13 Иаков ывăлĕсем Сихемпа унăн ашшĕ-
не Еммора чееленсе хуравланă; вĕсем
Сихем хăйсен йăмăкне Динăна мăшкăл
кăтартнăшăн çапла калаçнă; 14 [Симеонпа
Левий — Дина пиччĕшĕсем, Лия ывăлĕ-
сем —] вĕсене каланă: эпир апла тăвай-
мастпăр, ўт кастарман çынна хамăр йă-
мăкăмăра параймастпăр, ку пирĕншĕн
мăшкăл шутланать; 15 эсир пирĕн пек
пулсассăн çеç, сирĕн те пур арçыннăр
та ўт кастарсассăн çеç, эпир сирĕнпе тату
тума, [сирĕн патăра вырăнаçма] пулта-
ратпăр; 16 вара хамăр хĕрсене сире качча
пара пуçлăпăр, сирĕн хĕрĕрсене хамăр
валли илĕпĕр, сирĕнпе пĕрле пурăнăпăр,
пĕр халăх пулса тăрăпăр; 17 эхер те ўт ка-
сас тĕлĕшĕнчен пире итлемесессĕн, эпир
хамăр хĕре илетпĕр те кунтан пăрахса
каятпăр, тенĕ.
18 Çак сăмахсем Еммора тата Сихема,
Еммор ывăлне, килĕшнĕ. 19 Каччă çак
ĕçе вăраха яман, мĕншĕн тесессĕн вăл
Иаков хĕрне юратнă. Ăна хăйне вара аш-
шĕ килĕнче пуринчен ытларах хисепленĕ.
20 Емморпа унăн ывăлĕ Сихем хăйсен хули
хапхи патне тухнă та, хăйсен хулинчи
çынсемпе калаçса, вĕсене каланă: 21 çак
çынсем пирĕнпе тăнăçлă тăраççĕ; ан тив,
вĕсем çак çĕр çине вырăнаçчăр та ĕçлесе
пурăнччăр; акă вĕсен умĕнчи çĕр аслă. Вĕ-
сен хĕрĕсене хамăр валли качча илĕпĕр,
хамăр хĕрсене вĕсене парăпăр. 22 Анчах
та çак çынсем, ўт кастарнăскерсем, пи-
рĕн пĕтĕм арçын ўт кастарсассăн çеç пи-
рĕнпе пĕрле пурăнма, пĕр халăх пулма
килĕшеççĕ. 23 Вĕсенĕн кĕтĕвĕсем, вĕсенĕн
пурлăхĕ, вĕсенĕн мĕнпур выльăхĕ-чĕрлĕ-
хĕ пирĕншĕн мар-и? Вĕсемпе [пĕр çав
тĕлĕшрен] анчах килĕшĕпĕр, вара вĕсем
пирĕнпе пĕрле пурăнĕç, тенĕ. 24 Сихем ху-
ли хапхинчен тухакансем пурте Емморпа
унăн ывăлне Сихема итленĕ; пур арçынна
та — çав хула хапхинчен тухакансене
пурне те — ўт касса янă.
25 Виççĕмĕш кунне, вĕсем чирлесе выр-
тнă чухне, Иаковăн икĕ ывăлĕ — Симеон-
па Левий, Дина пиччĕшĕсем — хăйсен
хĕçне илнĕ те, хулана хăюллăн пырса
кĕрсе, мĕнпур арçыннине вĕлерсе тухнă;
26 Еммора хăйне те, унăн ывăлне Сихема
та хĕçпе касса вĕлернĕ; Динăна Сихем
çуртĕнчен илсе тухса кайнă. 27 Иаков ыва-
лĕсем ĕнтĕ вĕлернĕ çынсем патне пынă та
хăйсен йăмăкне [Динăна] мăшкăл кăтарт-
нăшăн хулине çаратса тухнă. 28 Вĕсен вак
выльăхне, шултăра выльăхне, ашакĕсене,
хулара мĕн пуррине, хирте мĕн пурри-
не пĕтĕмпех, 29 вĕсен мĕнпур пуянлăхне
илсе кайнă; мĕнпур ачине, арăмне тыт-
кăна илсе кайнă, [хулара] мĕн пуррине,
кил-çуртра [мĕн пуррине йăлтах] çаратса
тухнă. 30 Иаков Симеонпа Левие каланă:
çак çĕрти çынсене [пурне те], ханаансем-
пе ферезейсене, мана курайми туса, эсир
мана тарăхтартăр. Манăн çын сахал; вĕ-
сем мана хирĕç пуçтарăнса тухĕç те мана
çĕмĕрсе тăкĕç, хама та, манăн йăхăма та
тĕппипе пĕтерĕç, тенĕ. 31 Лешĕсем каланă:
пирĕн йăмăкпа аскăн арăмпа хăтланнă
пек хăтланма юрать-им вара! тенĕ.

35 1 Турă Иакова каланă: тăр та Вефи-
ле кай, çавăнта пурăн, Исавран,
хăвăн пиччўнтен, тарнă чухне хăвна ку-
рăннă Турă валли унта парне вырăнĕ
туса ларт, тенĕ. 2 Иаков хăйĕн кил-йышне,
хăйпе пĕрле пынă çынсене пурне те кала-
нă: хăвăр аллăрти ют турăсене пăрахăр
та тасалăр, тумтирĕре улăштарăр; 3 тăрар
та Вефиле каяр; хĕн-асапăм кунĕнче хама
илтнĕ, эпĕ çўренĕ çул çинче манпа пĕрле
пулнă [тата мана сыхă усранă] Туррăм-
шăн парне вырăнĕ тăвăп. 4 Вара хăйсен
аллинчи мĕнпур ют турăсене, хăлхинчи
алкисене Иакова панă; Иаков вĕсене Си-
хем çывăхĕнчи юман айне алтса пытарнă.
[Вăл çавна хальхи кунченех тупмалла
мар пытарса хăварнă.]

[14] Нав 5:9. **[20]** Пулт 23:10. **[24]** Пулт 23:10. **[25]** Пулт 49:6. **[30]** Пулт 49:5. Тух 5:21.1 Пат 13:4.
35-мĕш сыпăк. [1] Пулт 28:13. **[2]** Пулт 31:19. Эф 4:22. Кол 3:9. **[4]** Нав 24:26. Тўре 9:6.

5Вара вёсем [Сихемран] тапранса кайнă. Таврари хуласем Турăран сехёрленсе тăнă, çавăнпа вёсем Иаков ывăлёсене хăваламан. 6Иаков хăй те, унпа пёрле пулнă пур çын та Ханаан çёрёнчи Луз хулине — урăхла каласан, Вефиль текен вырăна — пырса çитнё, 7вăл унта парне вырăнё туса лартнă, вара çак вырăна Эл-Вефиль тесе ят панă, мёншён тесессён хăйён пиччёшёнчен [Исавран] тарнă чухне ăна çакăнта Турă курăннă. 8Çавăн чухне Девора, Ревеккăна ёмёртсе ӳстернёскер, вилнё, ăна Вефильрен анатарах, юман айне, пытарнă, Иаков ăна хӳхлев юманё тесе ят хунă.

9Месопотамирен таврăнсассăн, Иакова [Лузра] Турă курăннă, ăна пилленё, 10Турă ăна каланă: санăн яту Иаков; паянтан вара эсё Иаков ятлă пулмăн, санăн яту Израиль пулё, тенё. Ăна вара Израиль тесе ят хунă. 11Турă ăна каланă: Эпё — Пурне те Пултаракан Турă; ёрче, йышлăлан; санран халăх пулё, темён тёрлё халăх тухё, санăн варăнтан патшасем çуралёç; 12Авраампа Исаака панă çёре Эпё сана парăп, санран кайран çак çёре санăн тăхăмна парăп, тенё. 13Вара Турă ун патёнчен, унпа каласнă вырăнтан, çёклен-се кайнă. 14Хăйпе [Турă] каласнă вырăна Иаков палăк лартса хăварнă, ăна чулран туса лартнă, ун çине эрех юхтарнă, ун çине çу юхтарнă; 15хăйпе Турă каласнă вырăна Иаков Вефиль тесе ят панă.

16Вара Вефильрен тухса кайнă. [Вăл хăйён чатăрне Гадер пашни хыçне карса лартнă.] Ефрафăна çитмешкён тата пёр хушă юлсассăн, Рахиль ача çуратнă, вăл асаппа çуратнă. 17Вăл ача çуратса асапланнă чухне эпи карчăк ăна каланă: ан хăра, санăн ку та ывăл, тенё. 18Вăл виле пуçланă, чунё тухнă чухне вăл ачине Бенони ятлă хунă. Анчах ашшё ăна Вениамин тесе ят панă. 19Рахиль вилнё, ăна Ефрафăна — урăхла каласассăн, Вифлееме — каякан çул хёррине пытарнă. 20Иаков унăн тупăклăхё тёлне палăк лартса хăварнă. Рахиле асăнмалăх лартнă палăк çак кунченех ларать. 21Израиль [унтан] тапранса кайнă та хăйён чатăрне Гадер пашни хыçне карса лартнă.

22Израиль çав çёршывра чарăнса тăнă вăхăтра Рувим кайнă та Валлăпа, хăй ашшён [Иаковăн] çум-арăмёпе, выртса çывăрнă. Израиль çакăн çинчен илтнё [те çавăншăн питё кӳреннё].

Иаковăн ывăл вуниккё пулнă.

23Лия ывăлёсем: Иаковăн малтанхи ывăлё Рувим, ун хыçёнчен Симеон, Левий, Иуда, Иссахар тата Завулон. 24Рахиль ывăлёсем: Иосиф тата Вениамин. 25Валлăн, Рахиль тарçин, ывăлёсем: Дан тата Неффалим. 26Зелфăн, Лия тарçин, ывăлёсем: Гад тата Асир. Çаксем Иаковăн Месопотамире çуралнă ывăлёсем.

27Иаков хăйён ашшё Исаак патне, [вăл ун чухне сывă пулнă,] Кириаф-Арба теекен вырăна — урăхла каласассăн, ку [Ханаан çёрёнчи] Хеврон пулать — Мамре патне, Авраампа Исаак çӳренё çёре çитнё. 28Исаак пурăннă [кунçул] çёр сакăрвунă çул пулнă. 29Исаак питех те ватăлса, тăраничченех пурăнса çитсе вилнё, вилсе канăçлă халăхёпе пёрлешнё; ăна хăйён ывăлёсем Исавпа Иаков пытарнă.

36 1Акă Эдом теекен Исавăн йăхёкăкё. 2Исав хăйён арăмёсене ханаан хёрёсене илнё: Адăна — хет çыннин Елонăн хёрне, Оливемăна — Анăн, евей çыннин Цивеонăн ывăлён, хёрне — 3тата Васемафăна — Измаил хёрне, Наваиоф йăмăкне — качча илнё. 4Ада вара Исава Елифаза çуратса панă, Васемафа Рагуила çуратнă, 5Оливема Иеуса, Иеглома тата Корее çуратнă. Çаксем Исавăн Ханаан çёрёнче çуралнă ывăлёсем.

6Исав хăйён арăмёсене, ывăлёсене, хёрёсене, хăйён килёнчи мёнпур çыннине, хăйён [мёнпур] кётёвне, мёнпур выльăхё-

[5] Тух 23:27. 1 Пат 14:15. **[6]** Пулт 12:8; 28:19. **[7]** Пулт 28:13. **[8]** 1 Çулс 10:12. **[10]** Пулт 32:28. **[11]** Пулт 1:28; 17:1, 6. **[12]** Пулт 12:7. **[13]** Пулт 17:22. **[14]** Пулт 28:18. **[15]** Пулт 28:19. **[17]** 1 Пат 4:20. **[19]** Пулт 48:7. **[20]** 1 Мак 13:27. 1 Пат 10:2. **[21]** Мих 4:8. **[22]** Пулт 49:4. **[23]** Пулт 46:8. Тух 1:2. **[24]** Пулт 30:23. **[25]** Пулт 30:5. **[26]** Пулт 30:9. **[27]** Пулт 23:2; 14:13. **[29]** Пулт 25:9.
36-мёш сыпăк. **[1]** Пулт 25:30. **[2]** Пулт 26:34. **[3]** Пулт 28:9. **[4]** 1 Çулс 1:35.

чӗрлӗхне, Ханаан çӗрӗнче пухнӑ мӗнпур
пурлӑхне илнӗ те хӑйӗн Иаков шӑллӗ
патӗнчен урӑх çӗре куçса кайнӑ, 7мӗншӗн
тесессӗн пурлӑхӗ çав тӗрлӗ нумай пулни-
пе вӗсем пӗрле пурӑнма пултарайман,
кӗтӗвӗсем питӗ йышлӑ пулнипе вӗсем
хӑйсем çӳрекен çӗрсенче шӑнӑçайман.
8Исав вара, Эдом теекен Исав, Сеир тӑвӗ
çине вырӑнаçнӑ.

9Сеир тӑвӗ çинчи идумейсен ашшӗн,
Исавӑн, йӑхӗ-кӑкӗ çакӑ. 10Акӑ Исав ывӑлӗ-
сен ячӗсем: Исав арӑмӗн Адӑн ывӑлӗ Ели-
фаз пулнӑ, Исав арӑмӗн Васемафӑн ывӑлӗ
Рагуил пулнӑ. 11Елифазӑн çак ывӑлсем
пулнӑ: Феман, Омар, Цефо, Гафам тата
Кеназ. 12Фамна Елифазӑн, Исав ывӑлӗн,
çум-арӑмӗ пулнӑ, вӑл Елифаза Амалика
çуратса панӑ. Исав арӑмӗн, Адӑн, ывӑ-
лӗсем çаксем пулнӑ. 13Рагуил ывӑлӗсем
çаксем: Нахафпа Зерах, Шаммапа Ми-
за. Кусем Исав арӑмӗн Васемафӑн ывӑлӗ-
сем. 14Оливемӑн — Цивеон ывӑлӗн Анӑн
хӗрӗн, Исав арӑмӗн — ывӑлӗсем çаксем
пулаççӗ: Исава вӑл Иеуса, Иеглома тата
Корее çуратса панӑ.

15Акӑ Исав ывӑлӗсен пуçлӑхӗсем. Ели-
фазӑн, Исавӑн малтанхи ывӑлӗн, ывӑлӗ-
сем: Феман пуçлӑх, Омар пуçлӑх, Цефо
пуçлӑх, Кеназ пуçлӑх, 16Корей пуçлӑх,
Гафам пуçлӑх, Амалик пуçлӑх. Эдом çӗ-
рӗнче Елифаз пуçлӑхӗсем çаксем пулнӑ;
çаксем Ада ывӑлӗсем. 17Рагуилӑн, Исав
ывӑлӗн, ывӑлӗсем çаксем: Нахаф пуçлӑх,
Зерах пуçлӑх, Шамма пуçлӑх, Миза пуç-
лӑх. Эдом çӗрӗнче Рагуил пуçлӑхӗсем çак-
сем пулнӑ; çаксем Васемафӑн, Исав ара-
мӗн, ывӑлӗсем. 18Оливемӑн, Исав арӑмӗн,
ывӑлӗсем çаксем: Иеус пуçлӑх, Иеглом
пуçлӑх, Корей пуçлӑх. Оливемӑн — Ана
хӗрӗн, Исав арӑмӗн — пуçлӑхӗсем çаксем.
19Çаксем Исав ывӑлӗсем, çаксем вӗсенӗн
пуçлӑхӗсем. Çаксем эдомсем.

20Çаксем Хоррей çыннин Сеирӑн çав
çӗрте пурӑннӑ ывӑлӗсем: Лотан, Шовал,
Цивеон, Ана, 21Дишон, Эцер тата Дишан.
Çаксем Эдом çӗрӗнче пурӑннӑ Сеир ыва-
лӗсен, хоррейсен, пуçлӑхӗсем. 22Лотан
ывӑлӗсем Хори тата Геман пулнӑ; Лотан
йӑмӑкӗ Фамна пулнӑ. 23Шовал ывӑлӗсем
çаксем: Алван, Манахаф, Евал, Шефо
тата Онам. 24Цивеон ывӑлӗсем çаксем:
Аиа тата Ана. Шӑпах çак Ана ӗнтӗ Ци-
веонӑн, хӑйӗн ашшӗн, ашакӗсене кӗтсе
çӳренӗ чухне пушхирте ӑшӑ шывлӑ çӑл
тупнӑ. 25Ана ачисем çаксем: Дишон тата
Оливема, Ана хӗрӗ. 26Дишон ывӑлӗсем
çаксем: Хемдан, Эшбан, Ифран тата Хе-
ран. 27Ецер ывӑлӗсем çаксем: Билган,
Зааван, [Укам] тата Акан. 28Дишан ыва-
лӗсем çаксем: Уц тата Аран. 29Хоррейсен
пуçлӑхӗсем çаксем: Лотан пуçлӑх, Шо-
вал пуçлӑх, Цивеон пуçлӑх, Ана пуçлӑх,
30Дишон пуçлӑх, Ецер пуçлӑх, Дишан
пуçлӑх. Çаксем Сеир çӗрӗнче пурӑннӑ
хоррейсен пуçлӑхӗсем.

31Израиль ывӑлӗсене патша тытса тӑра
пуçличчен Эдом çӗрӗнче патшара ларнӑ
патшасем çаксем: 32Эдомра Бела, Веор
ывӑлӗ, патшара ларнӑ, унӑн хули Дингава
ятлӑ. 33Бела вилнӗ, ун хыççӑн Иовав —
Зерах ывӑлӗ, Восора çынни — патшана
ларнӑ. 34Иовав вилнӗ, ун хыççӑн Феман
çӗрӗнчи Хушам патшана ларнӑ. 35Хушам
вилнӗ, ун хыççӑн Гадад, Бедад ывӑлӗ,
патшана ларнӑ, вӑл Моав хирӗнче Мади-
ан çыннисене çӗмӗрсе тӑкнӑскер пулнӑ;
унӑн хули Авиф ятлӑ. 36Гадад вилнӗ,
ун хыççӑн Масрека çынни Самла пат-
шана ларнӑ. 37Самла вилнӗ, ун хыççӑн
юханшыв хӗрринчи Реховоф çынни Саул
патшана ларнӑ. 38Саул вилнӗ, ун хыççӑн
Баал-Ханан, Ахбор ывӑлӗ, патшана лар-
нӑ. 39Баал-Ханан, Ахбор ывӑлӗ, вилнӗ,
ун хыççӑн Гадар [Варад ывӑлӗ] патшана
ларнӑ; унӑн хули Пау ятлӑ; арӑмӗ Меге-
тавеель ятлӑ, вӑл — Матредӑн, Мезагав
ывӑлӗн, хӗрӗ.

40Исавӑн пуçлӑхӗсене хӑйсен ӑрӑвӗсем
тӑрӑх, хӑйсем пурӑнакан вырӑн тӑрӑх, ячӗ-
сем тӑрӑх, [халӑхӗсем тӑрӑх] каласассӑн,
вӗсен ячӗсем çаксем: Фимна пуçлӑх, Ал-
ва пуçлӑх, Иетеф пуçлӑх, 41Оливема пуç-
лӑх, Ела пуçлӑх, Пинон пуçлӑх, 42Кеназ
пуçлӑх, Феман пуçлӑх, Мивцар пуçлӑх,

[6] Нав 24:4. Пулт 32:3. **[7]** Пулт 13:6; 26:14. **[8]** Нав 24:4. **[10]** 1 Çулс 1:35. **[20]** Аст 2:11–12. 1 Çулс 1:38. **[23]** 1 Çулс 1:40. **[33]** Ис 34:6; 63:1. **[37]** Пулт 10:11. **[38]** 1 Çулс 1:49. **[40]** 1 Çулс 1:51.

43Магдиил пуçлăх, Ирам пуçлăх. Идумейсен хăйсем тытса тăракан çĕрти пурăнмалли ялĕсен-хулисен пуçлăхĕсем çаксем. Идумейсен ашшĕ Исав çакă ĕнтĕ.

37 1Иаков хăйĕн ашшĕ [Исаак] çӳренĕ çĕрте, Ханаан çĕрĕнче, пурăннă. 2Иаковăн пурăнăçĕ çакă. Иосиф вунçиччĕре чухне, яш ача чухне, хăйĕн пиччĕшĕсемпе, ашшĕ арăмĕсен Валлăпа Зелфăн ывăлĕсемпе пĕрле, [ашшĕн] выльăх-чĕрлĕхне кĕтсе çӳренĕ. Пиччĕшĕсем çинчен калаçакан усал сăмаха Иосиф хăйсен ашшĕне [Израиле] пĕлтерсе тăнă. 3Иосиф Израилĕн ватăлмалăх кунĕнче çуралнă ывăлĕ пулнăран Израиль ăна пур ывăлĕнчен те ытларах юратнă, — ăна тĕрлĕ тĕслĕ тумтир туса панă. 4Пиччĕшĕсем, ашшĕ ăна пур ывăлĕнчен те ытларах юратнине курса, ăна курайми пулнă, унпа ăшшăн калаçма та пултарайман.

5Иосиф тĕлĕк курнă та ăна пиччĕшĕсене каласа кăтартнă, вĕсем вара ăна тата ытларах курайми пулнă. 6Вăл вĕсене каланă: эпĕ курнă тĕлĕке итлĕр-ха: 7акă эпир хир варринче кĕлте çыхатпăр пек; акă ман кĕлте çĕкленчĕ те тӳррĕн тăрса ларчĕ; акă сирĕн кĕлтĕрсем йĕри-тавра тăчĕç те манăн кĕлтене пуççапрĕç, тенĕ. 8Пиччĕшĕсем ăна каланă: эсĕ пире пуçлăх пулăн-ши вара? пире тытса тăрăн-ши вара? тенĕ. Унăн тĕлĕкĕсемшĕн, унăн сăмахĕсемшĕн вĕсем ăна тата ытларах курайми пулса çитнĕ. 9Вăл тата тепĕр тĕлĕк курнă, ăна [ашшĕне тата] пиччĕшĕсене каласа кăтартнă: акă эпĕ тепĕр тĕлĕк куртăм: акă мана хĕвелпе уйăх тата вунпĕр çăлтăр пуççапать, тенĕ. 10Çавна вăл ашшĕпе пиччĕшĕсене каласа кăтартнă; ашшĕ ăна хăтăрса илнĕ: эсĕ курнă тĕлĕк мĕскер ку? эпĕ те, аннӳ те, пиччӳсем те сана çĕре ӳксе пуççапма пырăпăр-ши вара? тенĕ. 11Пиччĕшĕсем ăна çилленсех çитнĕ, ашшĕ вара çав сăмаха астуса юлнă.

12Унăн пиччĕшĕсем ашшĕн выльăхне кĕтсе çӳреме Сихема кайнă. 13Израиль Иосифа каланă: пиччӳсем Сихемра кĕтсе çӳремеççĕ-ши? кайса кил-ха, сана вĕсем патне яратăп, тенĕ. Иосиф ăна: эпĕ кунтах, тенĕ. 14[Израиль] ăна каланă: кайса пăх-ха, пиччӳсем сывах-и, выльăхĕ тĕрĕстĕкелех-и? мана хыпар илсе кил, тенĕ. Вара ăна Хеврон айлăмĕнчен ăсатса янă; вăл Сихема çитнĕ. 15Ăна пĕри хирте аташса çӳренине курнă та, çав çын унран ыйтнă: эсĕ мĕн шыратăн? тенĕ. 16Вăл: эпĕ хамăн пиччесене шыратăп; кала-ха мана, вĕсем ăçта кĕтӳ кĕтсе çӳреççĕ? тенĕ. 17Çав çын каланă: вĕсем кунтан кайрĕç, эпĕ вĕсем «Дофана каяс» тесе калаçнине илтнĕччĕ, тенĕ. Иосиф вара хăйĕн пиччĕшĕсем хыççăн кайнă та вĕсене Дофанра тупнă. 18Пиччĕшĕсем ăна аякранах курнă та вăл вĕсем патне çывăхарифченех ăна вĕлерес тесе канашлама пуçланă. 19Пĕр-пĕрне каланă: авă тĕлĕк ăсти килет; 20тытар та вĕлерер ăна, кайран пĕр-пĕр шăтăка пăрахăпăр та ăна тискер кайăк çурса пăрахнă тейĕпĕр; ун тĕлĕкĕсем мĕне пĕлтернине курăпăр вара, тенĕ. 21Рувим çакна илтнĕ те: вĕлерер мар ăна, тенĕ; çапла ăна вĕсен аллинчен хăтарнă. 22Рувим вĕсене каланă: юн ан тăкăр; ăна пушхирти шăтăка пăрахăр, ун çине алă ан хурăр, тенĕ. Çакна вăл ăна вĕсен аллинчен хăтарса каялла ашшĕ патне ярас [шухăшпа] каланă. 23Иосиф хăйĕн пиччĕшĕсем патне çитсессĕн, вĕсем Иосиф çийĕнчен унăн тумтирне, тĕрлĕ тĕслĕ тумтирне, сӳсе илнĕ те 24хăйне шăтăка тытса пăрахнă; шăтăкĕ типĕ пулнă; унта шыв пулман.

25Вĕсем апат çиме ларнă; çаврăнса пăхнă та — акă вĕçрен-вĕç тĕве килет: Галаадран Измаил çыннисем килеççĕ, тĕвисем çине стиракса, бальзам тата латăн тиенĕ — вĕсем çавна Египета леçме каяççĕ. 26Иуда хăйĕн тăванĕсене каланă: хамăр шăллăмăра вĕлерсе, унăн юнне пытарса пире мĕн усси? 27Каяр та ăна Измаил çыннисене сутар, аллăмăрсем ун çинче ан пулччăр: вăл пирĕн тăван, пирĕн ӳт, тенĕ. Тăванĕсем унпа килĕшнĕ, 28Мадиан купсисем иртсе пынă чухне вĕсем Иосифа

37-мĕш сыпăк. [1] Пулт 35:27; 36:6. Евр 11:13. **[4]** Ап ĕçс 7:9. **[11]** Дан 7:28. Лк 2:19, 51. **[14]** 1 Пат 17:18. Пулт 23:2. **[17]** 4 Пат 6:13. **[20]** Мф 21:38. Пс 40:8. **[21]** Пулт 42:22. **[22]** Пулт 42:22. **[24]** Зах 9:11. **[25]** Пулт 31:21. Иер 8:22; 22:6. **[26]** Иов 16:18. **[28]** Тӳре 8:26. Ăсл 10:13. Пс 104:17.

шăтăкран туртса кăларнă та ăна Измаил
çыннисене çирĕм кĕмĕлле сутса янă; ле-
шĕсем Иосифа Египета илсе кайнă.
29Рувим каллех шăтăк патне пынă; акă
шăтăкра Иосиф çук. Вăл хăйĕн тумтир-
не туртса çурнă та 30тăванĕсем патне
каялла таврăнса: ача çук! ĕнтĕ манăн,
манăн ăçта кайса кĕрес? тенĕ. 31Вара
Иосиф тумтирне илнĕ те, качака таки
пусса, тумтире юнпа вараланă; 32унтан
вĕсем тĕрлĕ тĕслĕ тумтире илсе кайнă
та ăна ашшĕ патне илсе пырса каланă:
эпир çакна тупрăмăр; пăх-ха, çакă ывăлун
тумтирĕ мар-и? тенĕ. 33Вăл ăна палласа
илнĕ те каланă: ку манăн ывăлăм тум-
тирĕ; ăна тискер кайăк çисе янă; чăнах
та, Иосифа тăпаласа тăкнă иккен, тенĕ.
34Иаков, хăйĕн тумтирне çурса пăрахса,
хуйхă тумтирĕ тăхăнса янă, ывăлĕшĕн
нумай кун йĕрсе пурăннă. 35Ăна йăпат-
ма пур ывăлĕ те, пур хĕрĕ те пуçтарăн-
нă, анчах вăл йăпанасшăн пулман, вăл:
йĕрсе-хурланса, хамăн ывăлăм патне çĕр
айне кĕрĕп, тенĕ. Ашшĕ уншăн çапла
хурланса йĕнĕ. 36Иосифа вара Египетра
мадиансем Потифара — фараон таврă-
шĕнчи çынна, фараон сыхлавçисен пуç-
лăхне — сутса янă.

38 1Çав вăхăтра Иуда, хăйĕн тăванĕ-
сенчен уйăрăлса, Хира ятлă пĕр
Одоллам çынни çывăхне кайса вырăнаç-
нă. 2Иуда унта Шуа ятлă пĕр ханаан çын-
нин хĕрне курнă; вăл ăна хăй валли илсе
ун патне кĕнĕ. 3Арăм йывăр çын пулнă
та ывăл ача çуратнă; Иуда ăна Ир ятлă
хунă. 4Арăм татах йывăр çын пулнă та
ывăл ача çуратнă, ăна Онан ятлă хунă.
5Тата [виççĕмĕш] ывăл çуратнă, ăна вăл
Шела ятлă хунă; ăна çуратнă чухне Иуда
Хезивра пулнă. 6Иуда хăйĕн малтанхи
ывăлĕ Ир валли арăм илсе панă; вăл
Фамарь ятлă пулнă. 7Ир, Иудăн малтан-
хи ывăлĕ, Çӳлхуçа умĕнче юрăхсăр çын
пулнă, Çӳлхуçа ăна вĕлернĕ. 8Иуда вара
Онана каланă: пиччӳн арăмĕ патне кĕр,
унăн пултăрĕ пулнăран ăна качча ил,
пиччӳн вăрлăхне пĕтмелле ан ту, тенĕ.
9Онан çуралас ача хăйне пулмассине пĕл-
нĕ, çавăнпа хăйĕн вăрлăхне пиччĕшĕшĕн
парас мар тесе, унăн арăмĕ патне кĕнĕ
чухне хăйĕн ар вăрлăхне çĕре тăкса кĕ-
нĕ. 10Вăл тунă ĕç Çӳлхуçа умĕнче усал
ĕç пулнă; Çӳлхуçа ăна та вĕлернĕ. 11[Икĕ
ывăлĕ вилнĕ хыççăн] Иуда Фамаре, хăйĕн
кинне, каланă: Шела ывăлăм ӳссе çитич-
чен эсĕ хăвăн аçу килĕнче тăлăх арăм
пулса пурăн, тенĕ. Вăл [хăй ăшĕнче]: ку
та, пиччĕшĕсем пек, ан вилтĕрччĕ, тесе
шухăшланă. Фамарь кайнă та хăйĕн аш-
шĕ килĕнче пурăна пуçланă.
12Чылай вăхăт иртнĕ; Шуа хĕрĕ, Иуда
арăмĕ, вилнĕ. Лăпланса çитсессĕн, Иуда
хăй выльăхĕн çăмне касакансем патне
Фамнăна кайнă, унпа пĕрле Хира та —
хăйĕн тусĕ, Одоллам çынни — пынă.
13Фамаре хыпар тунă: акă санăн хуняçу
выльăхĕсен çăмне касма Фамнăна каять,
тенĕ. 14Вăл хăй çийĕнчи тăлăх арăм тум-
тирне хывса пăрахнă та, пĕркенчĕк пĕр-
кенсе, Фамнăна каякан çул çинчи Енаим
хапхи патне тухса ларнă. Мĕншĕн тесес-
сĕн вăл Шела ӳссе çитнине курнă, анчах
ăна ун валли качча илмен-ха. 15Иуда ăна
курнă та аскăн хĕрарăм вырăнне хунă,
мĕншĕн тесессĕн лешĕ питне хупласа
ларнă. [Вăл ăна паллайман.] 16Иуда ун
патне пынă та каланă: эпĕ сан патна кĕ-
рем, тенĕ. Вăл ку хăйĕн кинĕ иккенне
пĕлмен. Фамарь: ман патăма кĕрсессĕн,
эсĕ мана мĕн парăн? тенĕ. 17Иуда каланă:
эпĕ [хамăн] кĕтӳрен сан валли качака пу-
текĕ парса ярăп, тенĕ. Фамарь: ăна парса
яриччен салук парса хăварăн-и? тенĕ.
18Вăл: сана мĕнле салук парса хăварас?
тенĕ. Фамарь каланă: хăвăн пичетлĕ çĕр-
рӳне, пуç çыххине тата аллунти туюна
пар, тенĕ. Вăл ăна мĕн ыйтнине панă та
ун патне кĕнĕ; Фамарь ĕнтĕ унран йывăр

[29] Пулт 44:13. Лев 10:6. Йыш 14:6. **[33]** Пулт 44:28. **[34]** 1 Пат 4:12. 2 Пат 3:31. 3 Пат 20:32. **[35]** Тов 10:7. Пулт 42:38. **[36]** Пулт 39:1. Пс 104:17.

38-мĕш сыпăк. [3] Пулт 46:12. Йыш 26:19. 1 Çулс 2:3. **[5]** Йыш 26:20. **[7]** Йыш 26:19. **[8]** Аст 25:5. Мф 22:24. Мк 12:19. **[11]** Тов 7:11. **[12]** 1 Пат 25:2. **[14]** Ытар 9:14. Иер 3:2. **[15]** Ытар 7:12. **[16]** Лев 18:15; 20:12.

çын пулнă. 19Унтан кайсассăн, вăл, хăйĕн
пĕркенчĕкне хывса пăрахса, каллех тăлăх
арăм тумтирне тăхăнса янă.
20Шантарса парса хăварнă япалисене
арăм аллинчен каялла илме Иуда хăйĕн
тусĕнчен, Одоллам çыннинчен, качака
путекки парса янă, анчах лешĕ Фамаре
тупайман. 21Вара çав вырăнти çынсенчен
ыйтнă: Енаимра çул хĕрринче ларакан
аскăн арăм ăçта? тенĕ. Лешĕсем: кунта
аскăн арăм çукчĕ, тенĕ. 22Вăл каялла Иуда
патне таврăннă та каланă: эпĕ ăна тупай-
марăм; унти çынсем те: кунта аскăн арăм
çукчĕ, терĕç, тенĕ. 23Иуда каланă: эппин,
япалисем ун патĕнчех юлччăр, пирĕнтен
çын куласси çеç ан пултăр; акă эпĕ çак
качака путеккине парса ярсаттăм, анчах
эсĕ ăна тупаймарăн, тенĕ.
24Виçĕ уйăха яхăн иртсессĕн, Иудăна
каланă: санăн Фамарь кинӳ аскăна ернĕ,
акă вăл аскăнланса йывăр çын пулнă,
тенĕ. Иуда: илсе тухăр ăна, çунтарса
яччăр ăна, тенĕ. 25Хăйне вĕлерме илсе
тухсассăн, вăл хăйĕн хуняшшĕ патне:
çак япаласем камăн, эпĕ çавăнтан йы-
вăр çын пултăм, тесе калама çын янă.
Тата: çак пичетлĕ çĕрĕ, пуç çыххи, туя
камăн? — палла, тенĕ. 26Иуда палласа
илнĕ те каланă: вăл манран тӳрĕрех, эпĕ
ăна хамăн Шела ывăлăма памарăм, тенĕ.
Вара унпа урăх хутăшман.
27Çуратма пуçласассăн, ун ăшĕнче йĕкĕ-
реш ача пулни палăрнă. 28Çуратнă чух-
не [пĕрин] алли тухнă; эпи карчăкĕ: ку
малтан тухрĕ тесе, тытнă та унăн аллине
хĕрлĕ çип çыхнă. 29Анчах ача хăйĕн
аллине каялла илнĕ; акă унăн хăраххи
тухнă. Эпи карчăкĕ: епле эсĕ чарака тат-
са тухрăн? тенĕ. Ăна Фарес ятлă хунă.
30Унтан аллине хĕрлĕ çип çыхнă шăллĕ
тухнă. Ăна Зара ятлă хунă.

39 1Иосифа Египета илсе çитернĕ,
унта илсе пынă Измаил çыннисен
аллинчен ăна Египет çынни Потифар —
фараон таврашĕнчи çын, патша сыхлав-
çисен пуçлăхĕ — сутăн илнĕ. 2Иосифпа
пĕрле Çӳлхуçа Турă пулнă: унăн ĕçĕсем
ăнса пынă, вăл хăйĕн хуçин, Египет çын-
нин, çуртĕнче пурăннă. 3Унăн хуçи ун-
па пĕрле Çӳлхуçа пулнине, вăл тăвакан
пур ĕçе те Çӳлхуçа ун аллинче ăнтарса
пынине курса тăнă. 4Иосиф ун умĕнче
ырăлăх тупнă, уншăн ĕçлесе тăнă. Вăл
Иосифа хăйĕн пĕтĕм çуртне тытса тăра-
канĕ тунă, хăйĕн мĕн пуррине йăлтах
унăн аллине панă. 5Иосифа хăйĕн çурт-
не, хăйĕн мĕн пуррине пурне те тытса
тăраканĕ тунăранпа Çӳлхуçа Турă Египет
çыннийĕн кил-çуртне Иосифшăн пилле-
нĕ, унăн килĕ-çуртĕнче, [унăн] хирĕнче
мĕн пуррине пурне те Çӳлхуçа пиллĕхĕ
çитнĕ.
6Хăйĕн мĕн пуррине пĕтĕмпех вăл
Иосиф аллине панă, Иосиф ĕçлесе тăнă
чухне вăл хăй çиекен çăкăрсăр пуçне
нимĕн те пĕлмен.
Иосиф илемлĕ пӳ-силлĕ, илемлĕ сăн-
питлĕ пулнă. 7Иосифа хуçи арăмĕ куç хыв-
нă та çапла каланă: манпа çывăр, тенĕ.
8Анчах Иосиф килĕшмен, вăл хăйĕн ху-
çин арăмне каланă: акă манăн хуçам эпĕ
пур чухне хăй килĕнче нимĕншĕн те пă-
шăрханмасть, хăйĕн мĕн пуррине вăл йăл-
тах ман аллăма пачĕ; 9çак килте манран
асли çук; вăл мана сансăр пуçне нимĕне
те чармарĕ, мĕншĕн тесессĕн эсĕ — унăн
арăмĕ; епле эпĕ çак пысăк усал ĕçе туса
Турă умĕнче çылăха кĕрем? тенĕ. 10Хуçа
арăмĕ Иосифа куллен-кун çапла каланă,
анчах Иосиф ăна итлемен: унпа çывăрма,
унпа пĕрле пулма килĕшмен; 11пĕр кун-
хине Иосиф пӳрте хăйĕн ĕçне тума кĕнĕ,
килтисенчен пӳртре никам та пулман;
12арăм ăна тумтирĕнчен ярса илнĕ те:
манпа вырт, тенĕ. Анчах Иосиф хăйĕн
тумтирне унăн аллинче хăварса чупса
тухса кайнă. 13Вăл, Иосиф хăйĕн тумтир-
не ун аллинче хăварса чупса тухнине
курсассăн, 14килĕнчи çыннисене чĕнсе,
вĕсене çапла каланă: пăхăр-ха, вăл пирĕн

[24] Пулт 20:3. Лев 21:9. Аст 22:22. **[27]** 1 Çулс 2:4. Мф 1:3. **[29]** Пулт 46:12. 1 Çулс 4:1.
39-мĕш сыпăк. [1] Пс 104:17. Ап ĕçс 7:9. **[2]** Ап ĕçс 7:9. **[3]** Пулт 21:22. Пс 1:3. **[5]** Пулт 30:27. Ис 45:4. **[7]** Иов 31:1. Ытар 7:5. 2 Пет 2:14. **[9]** Иов 24:15. Сир 23:27. Ис 29:15. **[12]** 2 Пат 13:11. **[14]** Сир 25:19.

пата çак еврее пире мăшкăллама илсе
килнĕ. Вăл ман патăма манпа çывăрма
кĕчĕ, анчах эпĕ хытă кăшкăрса ятăм та,
15эпĕ йĕрсе кăшкăрса янине илтсессĕн,
вăл хăйĕн тумтирне ман аллăмра хăварса
чупса тухса тарчĕ, тенĕ. 16Вара вăл унăн
тумтирне хăйĕн упăшки, Иосиф хуçи,
килне таврăниччен хăй патĕнче тытнă.
17Арăмĕ ăна çав сăмахсенех каласа панă,
ăна каланă: эсĕ пирĕн пата илсе килнĕ
еврей чура ман патăма мана мăшкăллама кĕчĕ, [мана: санпа выртса çывăрам,
терĕ,] 18анчах эпĕ йĕрсе кăшкăрса ятăм
та, [çакна илтсессĕн,] вăл ман патăма
хăйĕн тумтирне пăрахса хăварсах тухса
тарчĕ, тенĕ.

19Арăмĕ каланă сăмахсене: «санăн чуру мана çапла турĕ» тенине илтсессĕн,
Иосиф хуçи тарăхса кайнă; 20хуçи Иосифа
тытнă та патша хупса лартнă çынсем патне тĕрмене хуптарнă. Иосиф вара унта
тĕрмере ларнă. 21Иосифпа пĕрле Çӳлхуçа
пулнă, Вăл ăна хĕрхенсе ырăлăхне янă
та, Иосиф тĕрме пуçлăхĕ умĕнче кăмăл
курнă. 22Тĕрме пуçлăхĕ тĕрмере ларакан
пур çынна та Иосиф аллине панă, вĕсем
унта кирек мĕн тусассăн та, пур çĕрте те
астуса тăраканни Иосиф пулнă. 23Тĕрме
пуçлăхĕ ĕнтĕ Иосифа шанса панă ĕçсем
çинчен шухăшламан та, мĕншĕн тесессĕн Иосифпа пĕрле Çӳлхуçа пулнă, вăл
кирек мĕн тусассăн та, Çӳлхуçа пурне те
ăнтарса пынă.

40 1Çакăн хыççăн Египет патшийĕн
эрех парса тăраканĕпе çăкăр парса тăраканĕ хăйсен хуçи умĕнче, Египет
патши умĕнче, айăпа кĕнĕ. 2Фараон хăй
таврашĕнчи икĕ çыннине — эрех паракансен пуçлăхĕпе çăкăр паракансен пуçлăхне — çилленсе çитнĕ, 3вĕсене патша
сыхлавçисен пуçлăхĕн çуртне, тĕрмене,
Иосифа хупса лартнă çĕре, хупса хунă.
4Патша сыхлавçисен пуçлăхĕ вĕсем патне
Иосифа тăратнă, вăл вĕсене пăхса тăнă.
Çапла вĕсем пĕр вăхăт хурал аллинче
пурăннă. 5Пĕррехинче Египет патшийĕн
эрех парса тăраканĕпе çăкăр парса тăраканĕ, тĕрмере лараканскерсем, тĕлĕк курнă: иккĕшĕ те пĕр каçрах, кашнийĕ хăйне
евĕрлĕ, питех те пĕлтерĕшлĕ тĕлĕк курнă.
6Иосиф ирхине вĕсем патне пынă та курнă: акă вĕсем пăшăрханса ӳкнĕ. 7Иосиф
хăйĕн хуçин çуртĕнче хăйпе пĕрле хурал
аллинче ларакан фараонăн аслă çыннисенчен çапла ыйтнă: мĕншĕн паян сирĕн
сăнăр салхуллă? тенĕ. 8Вĕсем ăна каланă:
эпир тĕлĕк куртăмăр; ăна ăнлантарса паракан çын çук, тенĕ. Иосиф каланă: ăна
ăнлантарса каласси Турăран мар-и вара?
мана каласа кăтартăр-ха, тенĕ.

9Эрех парса тăракансен пуçлăхĕ хăйĕн
тĕлĕкне Иосифа каласа кăтартнă, ăна каланă: эпĕ тĕлĕк куртăм: акă манăн умăмра иçĕм çырли йывăçĕ ларать пек; 10йывăçĕн виçĕ турат пек; йывăçĕ ӳссе çитĕнчĕ, çеçке çурчĕ пек, çырлисем те ӳссе,
пиçсе çитрĕç пек; 11фараон курки манăн
аллăмра пек; эпĕ çырлисене татса илтĕм
те, сĕткенне фараон куркине пăчăртаса
юхтартăм та куркине фараон аллине тыттартăм пек, тенĕ. 12Иосиф ăна каланă:
тĕлĕкӳ акă мĕне пĕлтерет: виçĕ турат
вăл — виçĕ кун; 13виçĕ кунран фараон
сана асла кăларĕ те сана каялла хăвăн
вырăнна тавăрĕ, эсĕ вара хăв ун патĕнче
эрех парса тăнă чухнехи ĕлĕкхи йăлапа
фараонăн куркине унăн аллине тыттарăн; 14хăвна аван пулсассăн, мана асна
илсем, маншăн ырă ĕç тусам, ман çинчен фараон умĕнче сăмах хушсам, мана
çак çуртран хăтарсам: 15мана еврейсен
çĕрĕнчен вăрласа килчĕç; эпĕ кунта та
хама тĕрмене лартмалли ĕç нимĕн те
туман, тенĕ.

16Çăкăр парса тăракансен пуçлăхĕ,
Иосиф лайăх ăнлантарнине курса, ăна
каланă: эпĕ те тĕлĕк куртăм: акă манăн пуç тăрринче виçĕ çатан кунтă пек;
17çиелти кунтăра çăкăр пĕçерекен пĕçерсе хунă, фараон çиекен тĕрлĕрен çимĕç
пек, ăна манăн пуç тăрринчи кунтăран
[çӳлти] вĕçен кайăксем сăхаççĕ пек, тенĕ.

[20] Пс 104:18. **[21]** Ăсл 10:14. Ап ĕçс 7:10. **[23]** Пулт 39:3. Пс 1:3.
40-мĕш сыпăк. [3] Пулт 39:20. **[5]** Дан 2:1, 29. Мф 27:19. **[6]** Пулт 41:8. **[8]** Пулт 41:16. Дан 2:27–28.
[12] Пулт 41:25. **[14]** Неем 5:19; 13:31. Лк 23:42. **[15]** Пулт 37:28.

18Иосиф [ăна] хуравласа каланă: ку акă
мĕне пĕлтерет: виçĕ кунтă вăл — виçĕ
кун; 19виçĕ кунран фараон санăн пуçна
касса таттарĕ те сана йывăç çине çакта-
рĕ, [çӳлти] вĕçен кайăксем санăн ӳтне
сăха-сăха тăпăлтарĕç, тенĕ.
20Виççĕмĕш кунне, хăй çуралнă кун,
фараон мĕнпур тарçишĕн ĕçкĕ-çикĕ ту-
нă, хăйĕн тарçисем хушшинче вăл эрех
парса тăракансен пуçлăхĕпе çăкăр парса
тăракансен пуçлăхне аса илнĕ; 21вара
эрех парса тăракансен пуçлăхне ĕлĕк-
хи вырăнне тавăрнă, лешĕ ĕнтĕ фараон
аллине курка тыттарнă; 22çăкăр парса
тăракансен пуçлăхне, Иосиф вĕсене кала-
са кăтартнă пек, [йывăç çине] çактарнă.
23Эрех парса тăракансен пуçлăхĕ Иосифа
аса илмен, вăл ăна маннă.

41 1Икĕ çул иртсессĕн фараон тĕлĕк
курнă: акă вăл çырма хĕрринче тă-
рать пек; 2акă çырмаран илемлĕ, мăнтăр
ӳтлĕ çичĕ ĕне тухнă та хăмăшлăхра çисе
çӳре пуçланă; 3акă вĕсем хыççăн çырма-
ран тата çичĕ ĕне тухнă, хăйсем начар,
ырхан ӳтлĕ пулнă, вĕсем çырма хĕррине
леш ĕнесем патне пырса тăнă; 4начар,
ырхан ӳтлĕ ĕнесем илемлĕ çичĕ мăнтăр
ĕнене çисе янă. Фараон вăранса кайнă,
5унтан каллех çывăрса кайнă та тепĕр
хут тĕлĕк курнă: акă пĕр хăмăлран çичĕ
тутă та паха пучах ӳссе тухнă; 6акă вĕсем
хыççăн çичĕ выçă пучах, тухăç çилĕпе
типсе кайнăскерсем, ӳссе тухнă; 7выçă
пучахсем çичĕ тулли те тутă пучаха çисе
янă. Фараон вăранса кайнă та ку тĕлĕк
пулнине ăнласа илнĕ. 8Ирхине фараонăн
чунĕ шикленсе ӳкнĕ, вăл вара Египетри
мĕнпур асамçăпа мĕнпур ăсчаха чĕнтерсе
илтернĕ те вĕсене хăйĕн тĕлĕкне каласа
кăтартнă; анчах çав тĕлĕке фараона ни-
кам та ăнлантарса парайман.
9Эрех парса тăракансенĕн пуçлăхĕ фа-
раона кала пуçланă: эпĕ халĕ хамăн çы-
лăхăмсене аса илетĕп; 10фараон хăйĕн
чурисене çилленнĕччĕ те мана тата çă-
кăр парса тăракансенĕн пуçлăхне, пат-
ша сыхлавçисен пуçлăхĕн çуртне хупса,
хурал аллине панăччĕ; 11пĕр каçхине
эпир — эпĕ те, вăл та — тĕлĕк куртăмăр,
кашнийĕ хăйне уйрăм пĕлтерĕшлĕ тĕлĕк
курчĕ; 12пирĕнпе пĕрле унта пĕр çамрăк
еврей, патшамăр сыхлавçисен пуçлăхĕн
чури, пурччĕ; эпир ăна хамăр тĕлĕксене
каласа патăмăр та, вăл пире харпăр хăй
тĕлĕкне кура ăнлантарса пачĕ; 13вăл пи-
ре епле каласа ăнлантарчĕ, çаплах пул-
са тухрĕ: эпĕ хамăн вырăна таврăнтăм,
лешне çакса вĕлерчĕç, тенĕ.
14Фараон вара çын янă та Иосифа чĕн-
терсе илнĕ. Ăна васкасах тĕрмерен ил-
се тухнă. Вăл çӳçне кастарнă, тумтирне
улăштарнă, унтан фараон патне пынă.
15Фараон Иосифа каланă: эпĕ тĕлĕк кур-
тăм, анчах ăна никам та ăнлантарса па-
раймасть; эпĕ сан çинчен тĕлĕк ăнлантар-
ма пĕлет тенине илтрĕм, тенĕ. 16Иосиф
фараона хуравласа каланă: манран кил-
мест ку; фараон ырăлăхĕшĕн Турă ка-
ласа парĕ, тенĕ. 17Фараон вара Иосифа
каланă: эпĕ тĕлĕк куртăм: акă çырма
хĕрринче тăратăп пек; 18акă çырмаран
илемлĕ, мăнтăр ӳтлĕ çичĕ ĕне тухрĕ те
хăмăшлăхра çисе çӳре пуçларĕ; 19акă вĕ-
сем хыççăн çырмаран тата çичĕ ĕне тухрĕ,
хăйсем начар, илемсĕр, ырхан ӳтлĕ; эпĕ
пĕтĕм Египет çĕрĕнче вĕсем пек начар
ĕне курманччĕ; 20начар, ырхан ĕнесем
малтанхи çичĕ мăнтăр ĕнене çисе ячĕç;
21мăнтăррисем вĕсен ăшне кĕрсе кайрĕç,
анчах мăнтăррисем вĕсен ăшне кĕни па-
лăрмарĕ те: лешĕсем унченхи пекех ыр-
хан тăрса юлчĕç. Вара эпĕ вăранса кай-
рăм. 22Унтан татах тĕлĕк куртăм: акă пĕр
хăмăлтан çичĕ тулли те паха пучах ӳссе
тухрĕ; 23акă вĕсем хыççăн тухăç çилĕпе
типсе кайнă çичĕ пушă та выçă пучах ӳссе
тухрĕ; 24выçă пучахсем çичĕ паха пучаха
çисе ячĕç. Эпĕ çакна асамçăсене каласа
патăм, анчах никам та мана ăнлантарса
параймарĕ, тенĕ.

[19] Пулт 41:13. **[20]** Мк 6:21. **[22]** Пулт 40:19. **[23]** Ам 6:6.
41-мĕш сыпăк. [1] Дан 2:1. **[6]** Иез 17:10. **[8]** Пулт 40:7. Дан 2:3. Тух 7:11. **[10]** Пулт 40:3. **[11]** Пулт 40:8. **[13]** Пулт 40:19. **[14]** Пс 104:20. **[16]** Дан 2:30. Мф 10:20. 1 Кор 15:10. **[21]** Пулт 41:4.

25Иосиф фараона каланă: фараонăн тĕлĕкĕсем пĕр тĕлĕкех: Турă Хăй мĕн тăвассине фараона пĕлтернĕ. 26Çичĕ паха ĕне вăл — çичĕ çул; çичĕ паха пучах та — çичĕ çул: пĕр тĕлĕкех ку; 27лешĕсем хыçĕнчен тухнă çичĕ ырхан та начар ĕне вăл — çичĕ çул, тухăçран вĕрекен çилпе типсе кайнă çичĕ пушă пучах та — çичĕ çул, выçлăх çулĕсем вĕсем. 28«Турă Хăй мĕн тăвассине фараона кăтартнă» тесе, эпĕ фараона çавăнпа каларăм ĕнтĕ. 29Акă пĕтĕм Египет çĕрĕнче ытлă-çитлĕ, тулăхлă çичĕ çул пулĕ; 30вĕсем хыççăн çичĕ çул выçлăх пулĕ, вара Египет çĕрĕнче ытлă-çитлĕ, тулăхлă пулнă çулсем пĕтĕмпе манăça тухĕç, çĕре выçлăх типĕтсе ярĕ, 31выçлăх çитнĕ пирки çĕр çинче ĕлĕкхи тулăх çулсем асран кайĕç, мĕншĕн тесессĕн выçлăхĕ питĕ хаяр пулĕ. 32Тĕлĕк фараона икĕ хут курăнни çакă чăнах Турă сăмахĕ иккенне, çакна Турă часах тăвассине пĕлтерет. 33Халĕ ĕнтĕ фараон ăслăтăнлă çын суйласа илтĕр те ăна Египет çĕрĕн пуçлăхĕ туса хутăр. 34Фараон çĕре пăхса тăракан çынсем суйласа лартма хуштăр, ытлă-çитлĕ çулсенче — çичĕ çул хушши — Египет çĕрĕнчи [пĕтĕм çимĕçĕн] пиллĕкĕмĕш пайне пуçтарса пыма хуштăр; 35вĕсем çитес ăнăçлă çулсенче пур тĕрлĕ тырă-пулă пухчăр, ăна фараон аллине парса, кайран çимешкĕн хуласенче упраса усраччăр; 36çĕр выçлăхпа ан пĕттĕр тесессĕн, çак тырă-пулă Египет çĕрĕ çинче пулас çичĕ выçлăх çул валли сыхлăха пултăр, тенĕ.

37Çакă фараона та, унăн тарçисене те пурне те кăмăлне килнĕ. 38Фараон хăйĕн тарçисене каланă: ку çын ăшĕнче Турă Сывлăшĕ пур, эпир çакăн пек çын тупайăпăр-и? тенĕ. 39Унтан фараон Иосифа каланă: çакна пурне те сана Турă пĕлтернĕ, çавăнпа сан пек ăслă-тăнлă çын çук; 40эсĕ манăн килĕм пуçлăхĕ пулăн, манăн пĕтĕм халăхăм санăн сăмахна итлесе тăрĕ; патшара ларнăран çеç эпĕ санран аслă пулăп, тенĕ. 41Фараон Иосифа тата каланă: акă эпĕ сана пĕтĕм Египет çĕрне пуç туса лартатăп, тенĕ. 42Фараон вара хăйĕн пӳрнинчен çĕррине хывса илнĕ те ăна Иосиф пӳрнине тăхăнтартнă; ăна виссон тумтир тумлантарнă, мăйне ылтăн вăчăра çакса янă; 43ăна хăйĕн иккĕмĕш урапи çине лартса çӳреме хушнă, унăн умĕнчен: чĕркуçленĕр! тесе кăшкăрса пыма хушнă. Ăна пĕтĕм Египет çĕрне пуç туса хунă. 44Фараон Иосифа каланă: эпĕ фараон; санран ирĕк илмесĕр пĕтĕм Египет çĕрĕнче никам та аллине те, урине те хускатмĕ, тенĕ. 45Фараон Иосифа Цафнаф-панеах ятлă хунă, ăна Асенефăна — Илиополь хули апăсĕн Потиферăн хĕрне — качча илсе панă. Вара Иосиф Египет çĕрĕ тăрăх кайнă.

46Фараон — Египет патши — умне тăнă чухне Иосиф вăтăр çулта пулнă. Иосиф фараон патĕнчен кайнă та пĕтĕм Египет çĕрĕ тăрăх çӳресе тухнă. 47Тулăхлă çулсенче — çичĕ çул хушши — çĕр вара пĕр пĕрчĕрен пĕр ывăç парса тăнă. 48Египет çĕрĕнче çичĕ çул хушши [ăнса] пулнă тĕрлĕ тырпула Иосиф пухсах пынă, тырра хуласене пухса хунă; кашни хулана ун таврашĕнчи хирсенчен тырă пухса хунă. 49Иосиф темĕн чухлĕ тырă пухнă, вăл тинĕсри хăйăр пек нумай пулнă, тырра шутлама хисеп çитменнипе вăл ăна шутлама та пăрахнă.

50Выçлăх çулсем çитиччен Иосифăн икĕ ывăл çуралнă, вĕсене ăна Асенефа — Илиополь хули апăсĕн Потиферăн хĕрĕ — çуратса панă. 51Аслă ывăлне Иосиф Манассия ятлă хунă, [вăл каланă:] мĕншĕн тесессĕн Турă мана хам курнă пĕтĕм хуйхăм-суйхăма, аттемĕн пĕтĕм кил-çуртне манмалла турĕ, тенĕ. 52Тепĕр ывăлне Ефрем ятлă хунă, [вăл каланă:] мĕншĕн тесессĕн хам асап курнă çĕршывра Турă мана ĕрчевлĕ турĕ, тенĕ.

53Египет çĕрĕнче ытлă-çитлĕ, тулăхлă çичĕ çул иртсе кайнă та, 54Иосиф каланă пек, çичĕ выçлăх çул çитнĕ. Пур çĕрте те выçлăх пулнă, пĕтĕм Египет çĕрĕ çеç

[26] Пулт 40:12. **[30]** 4 Пат 8:1. **[40]** Пс 104:21. 1 Мак 2:53. Ап ĕçç 7:10. **[41]** Ăсл 10:14. **[42]** Эсф 3:10. Иез 16:11. Дан 5:29. **[46]** Пулт 37:2. **[50]** Пулт 46:20; 48:5, 20. **[54]** Пс 104:16.

тырăллă пулнă. [55]Пĕтĕм Египет çĕрĕ те выçлăх тӳсе пуçласассăн, халăх фараона йăлăнса тырă ыйта пуçланă. Фараон вара Египет çыннисене пурне те: Иосиф патне кайăр та вăл мĕн каланине тăвăр, тенĕ. [56]Пур çĕрте те выçлăх пулнă; Иосиф пĕтĕм кĕлете уçнă та Египет çыннисене тырă сута пуçланă. Египет çĕрĕнче выçлăх хаярлансах пынă. [57]Пур çĕршывран та Египета Иосифран тырă илме пынă, мĕншĕн тесессĕн пĕтĕм çĕр çинче выçлăх хаярлансах пынă.

42 [1]Иаков Египетра тырă пур тенине пĕлнĕ те вăл хăйĕн ывăлĕсене каланă: эсир мĕн пăхса тăратăр? тенĕ. [2]Тата каланă: акă эпĕ Египетра тырă пур тенине илтрĕм; çавăнта кайăр та хамăра пурăнма, хамăр вилесрен çавăнтан тырă илсе килĕр, тенĕ. [3]Вара Иосифăн вунă пиччĕшĕ Египета тырă туянма тухса кайнă, [4]Вениамина, Иосифăн шăллĕне, Иаков унăн пиччĕшĕсемпе пĕрле яман, вăл: ăна инкек-мĕн ан пултăр, тенĕ. [5]Израиль ывăлĕсем çавăнта килнĕ ытти çынпа пĕрле тырă илме пынă, мĕншĕн тесессĕн Ханаан çĕрĕнче выçлăх пулнă.

[6]Çав çĕршывра Иосиф пуçлăх пулнă; вăл çав çĕрти пĕтĕм халăха тырă сутса тăнă. Иосифăн пиччĕшĕсем пынă та ăна çĕре ӳксе пуççапнă. [7]Иосиф хăйĕн пиччĕшĕсене курнă та вĕсене палласа илнĕ; анчах вĕсене палламан пек тунă, вĕсемпе сиввĕн каласнă, вăл вĕсене: эсир ăçтан килтĕр? тенĕ. Вĕсем: Ханаан çĕрĕнчен тырă туянма килтĕмĕр, тенĕ. [8]Иосиф хăйĕн пиччĕшĕсене палласа илнĕ, анчах лешĕсем ăна паллайман. [9]Иосиф вара вĕсем çинчен курнă тĕлĕкĕсене асне илнĕ те вĕсене каланă: эсир — вăрттăн пăхса çӳрекенсем, эсир çак çĕрĕн хӳтлĕхсĕр вырăнĕсене пăхса кайма килнĕ, тенĕ. [10]Вĕсем каланă: çук, ырă хуçамăр, санăн чурусем апат туянас тесе килнĕ; [11]эпир пурсăмăр та пĕр çын ачисем; эпир тӳрĕ çынсем; санăн чурусем нихăçан та вăрттăн пăхса çӳрекен пулман, тенĕ. [12]Вăл вĕсене каланă: çук, эсир çак çĕрĕн хӳтлĕхсĕр вырăнĕсене пăхса кайма килнĕ, тенĕ. [13]Вĕсем каланă: эпир, санăн чурусем, вуниккĕн пĕртăванччĕ, эпир Ханаан çĕрĕнчи пĕр çыннăн ывăлĕсем, акă халĕ кĕçĕнни хамăр аттепе юлчĕ, пĕри çухалчĕ, тенĕ. [14]Иосиф вĕсене каланă: эсир вăрттăн пăхса çӳрекенсем тесе, çавнах каларăм ĕнтĕ сире; [15]акă епле сăнаса пăхас сире: фараон пурăнăçĕпе тупа туса калатăп: кĕçĕн шăллăр çакăнта килмесессĕн, эсир кунтан тухаймăр; [16]хăвăртан пĕрне килне ярăр, вăл шăллăра илсе килтĕр, ыттисене кунта тытса юлĕç; вара эсир тĕрĕс калани палăрĕ; фараон пурăнăçĕпе тупа тăватăп: апла пулмасассăн, эсир вăрттăн пăхса çӳрекенсем пулатăр, тенĕ. [17]Вара вĕсене виçĕ кунлăха хурал аллине панă.

[18]Виççĕмĕш кунне Иосиф вĕсене каланă: эпĕ Турăран хăратăп, эсир акă мĕн тăвăр, вара чĕрĕ юлăр: [19]эсир тӳрĕ çынсем пулсассăн, пĕр тăванăр хăвăра хупса лартнă çуртрах юлтăр; ыттисем кайăр, килĕр-йышăр выçă ларасран тырă леçсе парăр; [20]хăвăр сăмахăрсем тӳрре тухчăр тесессĕн, сирĕн вилмелле ан пултăр тесессĕн, шăллăра ман патăма илсе килĕр, тенĕ. Вĕсем çапла тунă та. [21]Вĕсем пĕрпĕрне каланă: шăллăмăра хирĕç çылăха кĕнĕшĕнех эпир асап куратпăр; вăл пире тархасланă чухне эпир унăн чунĕ асапланнине куртăмăр, çапах [ăна] итлемерĕмĕр; çавăншăнах çак хуйхă çитрĕ те пире, тенĕ. [22]Рувим вĕсене хуравласа каланă: эпĕ сире: ачана хирĕç çылăха ан кĕрĕр тесе каламарăм-и? анчах эсир итлемерĕр; акă унăн юнне хамăртан шыраççĕ, тенĕ. [23]Хăйсем вара Иосиф ăнланса тăнине пĕлмен; унпа вĕсем тăлмач урлă каласнă. [24][Иосиф] вĕсем патĕнчен пăрăнса кайнă та йĕрсе янă. Унтан вĕсем патне пырса вĕсемпе каласнă; кайран вĕсем хушшинчен Симеона уйăрса илсе, ăна вĕсен куçĕ умĕнчех çыхтарнă. [25]Унтан Иосиф вĕсен

[55] Ин 2:5. **[56]** Пулт 42:6. **[57]** Пулт 12:10.
42-мĕш сыпăк. [1] Ап ĕçс 7:12. **[4]** Пулт 43:5. **[6]** Пулт 37:7, 9; 41:40, 56. **[7]** Пулт 43:7; 44:19. **[9]** Пулт 37:5, 9. **[13]** Пулт 37:33; 44:20. **[15]** Пулт 43:5; 44:23. **[20]** Пулт 43:8. **[21]** Пулт 37:25. **[22]** Пулт 37:21–22.

миххисене тырă тултарма хушнă, вĕсем тӳленĕ кĕмĕле кашнийĕн миххине каялла чикме, вĕсене çул çине апат-çимĕç парса яма хушнă. Çапла тунă та.

26Вĕсем хăйсен тыррине ашакĕсем çине тиенĕ те унтан тухса кайнă. 27Çĕр каçма чарăнсассăн, вĕсенчен пĕри ашакне апат парас тесе миххине салтнă та хăйĕн кĕмĕлĕ михĕре çиелтех выртнине курах кайнă, 28вара хăйĕн тăванĕсене каланă: манăн кĕмĕле каялла парса янă; акă вăл манăн миххĕмрех, тенĕ. Вĕсен чĕри шуйханса ӳкнĕ, вĕсем чĕтресе пĕр-пĕрне каланă: Турă пире мĕн турĕ капла? тенĕ.

29Вĕсем Иаков патне, хăйсен ашшĕ патне, Ханаан çĕрне çитнĕ те хăйсем мĕн курнине пурне те ăна каласа панă, вĕсем каланă: 30çав çĕрте пуç пулса тăраканĕ пирĕнпе сиввĕн калаçрĕ, пире çав çĕре вăрттăн пăхса çӳрекенсем вырăнне хучĕ. 31Эпир ăна каларăмăр: эпир тӳрĕ çынсем; эпир нихăçан та вăрттăн пăхса çӳрекен пулман; 32эпир хамăр аттемĕрĕн ывăлĕсем, эпир вуникĕ тăван; пĕри çухалчĕ, кĕçĕнни халĕ аттемĕрпе пĕрле Ханаан çĕрне юлчĕ, терĕмĕр. 33Çав çĕрте пуçлăх пулса тăраканĕ пире каларĕ: эсир тӳрĕ çынсем иккенне эпĕ акă епле пĕлĕп: хăвăрăн пĕр тăванăра эсир ман патăма хăварăр, килĕр-йышăр выçă ларасран ыттисем тырă илсе кайăр, 34ман патăма кĕçĕн шăллăра илсе килĕр; эпĕ вара эсир тӳрĕ çынсем иккенне, вăрттăн пăхса çӳрекенсем маррине пĕлĕп; тăванăра хăвăрах парăп, эсир ĕнтĕ çак çĕрте çӳреме те пултарăр, терĕ, тенĕ.

35Вĕсем миххисене пушатма тытăннă та, акă кашнийĕн миххинче кĕмĕл çыххи, хăйĕн кĕмĕлĕ, выртать. Кĕмĕл çыххийĕсене вĕсем хăйсем те, вĕсен ашшĕ те курнă, пурте хăраса ӳкнĕ. 36Иаков, ашшĕ, вĕсене каланă: эсир мана ачамсемсĕр тăратса хăвартăр: Иосиф çук, Симеон та çук, Вениамина та илсе каяс тетĕр, — ĕнтĕ пĕтĕм инкек манăн пуçăм çине! тенĕ. 37Рувим хăйĕн ашшĕне çапла тесе каланă: эпĕ Вениамина сан патна илсе килмесессĕн, манăн икĕ ывăлăма вĕлер; ăна халĕ манăн аллăма пар, эпĕ ăна сана каялла тавăрса парăп, тенĕ. 38Иаков каланă: манăн ывăлăм сирĕнпе пĕрле каяймĕ, мĕншĕн тесессĕн унăн пиччĕшĕ вилчĕ, вăл пĕччен юлчĕ; эсир каяс çул çинче ăна пĕр-пĕр инкек пулас пулсассăн, эсир мана ватăлмалăх кунăмра хуйхăртсах тупăка кĕртетĕр, тенĕ.

43 1Çĕр çинче выçлăх хаярлансах çитнĕ. 2Вĕсем Египетран илсе килнĕ тыррине çисе пĕтерсессĕн, ашшĕ вĕсене каланă: татах кайăр, хамăр валли кăштах тырă илсе килĕр, тенĕ. 3Иуда ăна çапла тесе каланă: леш çын пире татсах каласа хучĕ, хăвăрпа пĕрле шăллăр пулмасассăн, манăн куçăм умне ан курăнăр, терĕ. 4Эсĕ шăллăмăра пирĕнпе пĕрле яр-сассăн, сана тырă илсе килсе парăпăр, 5ямасассăн — каймастпăр, мĕншĕн тесессĕн леш çын пире: хăвăрпа пĕрле шăллăр пулмасассăн, манăн куçăм умне ан курăнăр, терĕ, тенĕ. 6Израиль каланă: çав çынна хăвăрăн тата кĕçĕн шăллăр пур тесе мана мĕншĕн çав тĕрлĕ усал тумалла пулнă-ши сирĕн? тенĕ. 7Вĕсем каланă: вăл çын пирĕн çинчен, пирĕн йăх-кăк çинчен ыйтса тĕпчерĕ, вăл: аçăр курăнать-и-ха? тата сирĕн тăванăр пур-и? терĕ. Эпир ăна çапла ыйтнăран каласа патăмăр. Эпир вăл «шăллăра илсе килĕр» теессе пĕлнĕ-им-ха? тенĕ. 8Иуда хăйĕн ашшĕне Израиле каланă: кĕçĕн ачуна манпа пĕрле яр, эпир тăрăпăр та кайăпăр, эпир те, эсĕ те, пирĕн ачамăрсем те сывă пулăпăр, вилмĕпĕр; 9уншăн эпĕ явап тытăп, ăна эсĕ манăн аллăмран ыйтса илĕн; эпĕ ăна сан патна илсе килмесессĕн, ăна санăн куçу умне тăратмасассăн, эпĕ санăн умăнта пĕтĕм кунçулăм тăршшĕпе айăплă пулăп; 10чăрманкаласа тăман пулсассăн, ĕнтĕ икĕ хут та кайса килнĕ пулăттăмăр, тенĕ.

11Израиль, ашшĕ, вĕсене çапла каланă: апла пулсассăн акă мĕн тăвăр: хăвăрпа

[35] Пулт 43:18, 21; 44:1. **[36]** Пулт 37:33. **[37]** Пулт 46:9. **[38]** Пулт 37:35; 44:29–31.
43-мĕш сыпăк. [2] Пулт 44:25. **[3]** Пулт 42:20. **[5]** Пулт 42:4, 15. **[7]** Пулт 42:7; 44:19. **[9]** Пулт 44:32.

пӗрле çак çӗр çимӗçӗсене илсе кайӑр та
çав çынна бальзам тата пыл, стиракса
тата латӑн, фисташка тата миндаль мӑй-
ӑрӗ парне парӑр; 12аллӑра кӗмӗл, урӑх
кӗмӗл, илӗр, унччен миххӗрсене каялла
чиксе янӑ кӗмӗле хӑвӑр аллӑрпах тавӑр-
са парӑр: тен, ку астӑваймасӑр пулнӑ
пулӗ; 13хӑвӑрӑн шӑллӑра та илӗр, вара
каллех çав çын патне тӑрса тухса кайӑр;
14Пурне те Тума Пултаракан Турӑ сире
çав çынран ырӑлӑх тупма патӑр: вӑл
сире тепӗр тӑванӑра та, Вениамина та
парса ятӑрччӗ, манӑн ачамсемсӗр тӑрса
юлмалла пулсассӑн, ачамсемсӗрех тӑрса
юлам эппин, тенӗ. 15Вара çав çынсем çак
парнесене илнӗ, аллине икӗ хут ытла
кӗмӗл илнӗ, Вениамина та илнӗ, вара
тапранса Египета тухса кайнӑ та Иосиф
умне пырса тӑнӑ.

16Иосиф, вӗсем хушшинче Вениамина
[хӑйӗн пӗртӑванне, хӑйӗн амӑшӗн ывӑл-
не] курсассӑн, хӑйӗн çурт пуçлӑхне кала-
нӑ: çак çынсене пӗ̆рте илсе кӗр те мӗнле
те пулин выльӑх пусса пӗçерсе-хатӗрлесе
хур, çак çынсем кӑнтӑрла манпа пӗрле
апатланӗç, тенӗ. 17Çынни Иосиф каланӑ
пек тунӑ, вӑл ку çынсене Иосиф çуртне
илсе кӗнӗ. 18Ку çынсем хӑйсене Иосиф
çуртне илсе кӗнинчен хӑраса ӳ̆кнӗ, вӗсем
каланӑ: ӗнтӗ пире унччен хамӑр михӗ-
сене каялла чиксе янӑ кӗмӗлшӗн илсе
кӗчӗç, пире тӑрӑнса, пире тапӑнасшӑн
та пире чурана илесшӗн, пирӗн ашаксе-
не те илесшӗн, тенӗ. 19Вӗсем Иосиф çур-
чӗн пуçлӑхӗ патне пынӑ та пӗ̆рт алӑкӗ
умӗнче унпа сӑмах тапратса 20каланӑ:
эй ырӑ хуçамӑр, итле-ха: эпир унччен те
тырӑ илме килнӗччӗ, 21ун чухне çакӑн
пек пулса тухрӗ: çӗр каçма чарӑнтӑмӑр
та, хамӑр михӗсене салтрӑмӑр та — акӑ
кашнийӗн миххинче, çиелтех, хӑйӗн кӗ-
мӗлӗ, кӗмӗлӗ эпир виçсе панӑ чухлехчӗ,
эпир ӑна хамӑр аллӑмӑрпах каялла та-
вӑрса паратпӑр; 22тырӑ илме вара эпир
урӑх кӗмӗл илсе килтӗмӗр, унччен пирӗн
кӗмӗле пирӗн михӗсене кам чиксе янине
эпир пӗлместпӗр, тенӗ. 23Вӑл каланӑ: лӑп-
ланӑр, ан хӑрӑр; сирӗн миххӗрсене Тур-
рӑр, хӑвӑр аçӑрӑн Турри, мул хурса янӑ;
сирӗн леш кӗмӗлӗр ман пата çитрӗ, тенӗ.
Унтан вӑл вӗсем патне Симеона илсе пы-
нӑ. 24Çав çын вӗсене Иосиф пӗ̆ртне илсе
кӗнӗ те шыв панӑ, вӗсем урисене çунӑ;
вӗсен ашакӗсене те апат панӑ. 25Кӑнтӑрла
тӗлне, Иосиф килнӗ çӗре, вӗсем парне-
сем хатӗрлесе хунӑ, вӗсем ӗнтӗ хӑйсем
çавӑнта çӑкӑр çиессине илтнӗ.

26Иосиф килне таврӑннӑ; вӗсем хӑйсен
аллинчи парнисене унӑн килне илсе пы-
нӑ та ӑна çӗре ӳ̆ксе пуççапнӑ. 27Вӑл вӗ-
сенчен сывлӑхӗ çинчен ыйтса пӗлнӗ те
каланӑ: хӑвӑр каланӑ ватӑ аçӑр сывах-и?
пурӑнать-и-ха вӑл? тенӗ. 28Вӗсем каланӑ:
санӑн чуру, пирӗн аттемӗр, сывӑ тӑрать,
пурӑнать-ха, тенӗ. [Вӑл: çав çынна Турӑ
пилленӗ, тенӗ.] Вӗсем чӗркуçленнӗ, çӗре
ӳ̆ксе пуççапнӑ. 29[Иосиф] пуçне çӗклесе
пӑхнӑ та Вениамина — хӑйӗн пӗртӑванне,
хӑйӗн амӑшӗн ывӑлне — курса каланӑ:
эсир мана каланӑ кӗçӗн шӑллӑр çакӑ-и?
тенӗ. Унтан: Турӑ ырӑлӑхӗ санпа пӗрле
пултӑр, ывӑлӑм! тенӗ. 30Иосиф васкаса
тухса кайнӑ, мӗншӗн тесессӗн шӑллӗне
юратнипе унӑн чун-чӗри вутла хыпса ил-
нӗ, вӑл йӗрсе яма хатӗр пулнӑ; вӑл, шалти
пӗ̆лӗмне кӗрсе, çавӑнта йӗнӗ. 31Унтан пит-
не-куçне çуса тухнӑ та кӑмӑлне пусарса:
çиме парӑр, тенӗ. 32Апатне Иосифа хӑйне
уйрӑм, кусене хӑйсене уйрӑм, унпа пӗрле
апатланакан Египет çыннисене хӑйсене
уйрӑм панӑ, мӗншӗн тесессӗн Египет çын-
нисем еврейсемпе пӗрле çимеççӗ, Египет
çыннисемшӗн ку ирсӗр ӗç шутланать.
33Вӗсем унӑн умӗнче асли аслине кура,
кӗçӗнни кӗçӗннине кура ларса тухнӑ,
çак çынсем пӗр-пӗринпе тӗлӗнсе ларнӑ.
34Иосиф вӗсене хӑйӗн сӗтелӗ çинчи апата
партарса тӑнӑ, Вениамин пайӗ ыттисен
пайӗнчен пилӗк хут ытларах пулнӑ. Вӗ-
сем ӗçнӗ, унпа пӗрле чылаях ӗçнӗ.

[14] Пулт 42:24. Руфь 1:8. 2 Пат 2:6. **[21]** Пулт 42:27. **[23]** Пулт 42:25. **[24]** Пулт 18:4; 19:2. Лк 7:44. **[26]** Пулт 37:7, 9. **[29]** Пулт 42:13. **[30]** Пулт 45:2. **[32]** Тух 8:26. Тов 1:11. Дан 1:8. **[34]** Пс 103:15. Юрӑ 5:1. Агг 1:6.

44 [1][Иосиф] хăйĕн çурт пуçлăхне
хушса каланă: çак çынсенĕн мих-
хисене хăйсем йăтса кайма пултарнă та-
ран тырă тултар, кашнийĕн кĕмĕлне ка-
ялла хăйĕн миххине хур, [2]кĕçĕннийĕн
миххине вара хăй илнĕ тырăшăн тӳленĕ
кĕмĕлпе пĕрле манăн куркама, кĕмĕл
куркама, чиксе хур, тенĕ. Лешĕ Иосиф
каласа хунă пекех тунă. [3]Ирхине, тул
çутăлсассăн, ку çынсене хăйсене те, вĕ-
сен ашакĕсене те кăларса янă. [4]Вĕсем
хуларан аякках та каяйман, Иосиф хăйĕн
çурт пуçлăхне каланă: кай та хăваласа
çит çав çынсене, хăваласа çитсессĕн кала
вĕсене: мĕншĕн эсир ырăшăн усалпа та-
вăратăр? [мĕншĕн манăн кĕмĕл куркана
вăрларăр?] те. [5]Ара, ку манăн хуçамăн
курки мар-и? вăл унпа ĕçмест-и? ун çине
пăхса юмламасть-и? Эсир капла начар
турăр, те, тенĕ.

[6]Лешĕ вĕсене хăваласа çитнĕ те çак сă-
маха каланă. [7]Вĕсем ăна каланă: пирĕн
хуçамăр мĕншĕн çапла калать-ха? Çук,
санăн чурусем ун пек ĕç тăвас çук. [8]Акă
эпир хамăр михĕсенче тупнă кĕмĕле те
сана Ханаан çĕрĕнчен каялла илсе килсе
патăмăр: епле-ха эпир санăн хуçу çуртĕн-
чен кĕмĕл е ылтăн вăрлама пултарнă?
[9]Хăвăн чурусем хушшинче [курка] камра
тупăнĕ, çав çынна вилĕм çиттĕр, эпир те
хамăр хуçамăр чурисем пулăпăр, тенĕ.
[10]Вăл каланă: юрĕ; хăвăр епле каларăр,
çапла пултăр: [куркана] илекенĕ манăн
чура пулĕ, ыттисем айăплă пулмăр, тенĕ.
[11]Вĕсем харпăр хăй миххине хăвăртрах
çĕре антарса лартнă та уçса хунă. [12]Вăл
вĕсене аслинчен пуçласа кĕçĕннине çити-
чченех ухтарса тухнă; курка Вениамин
миххинче тупăннă. [13]Вĕсем хăйсен çийĕн-
чи тумтирĕсене туртса çурнă та, харпăр
хăй çĕклемне ашакĕ çине тиесе, каялла
хулана таврăннă.

[14]Иудăпа унăн тăванĕсем Иосиф çуртне
пынă, Иосиф ун чухне килĕнчех пулнă-ха,
вĕсем ун умне çĕре ӳкнĕ. [15]Иосиф вĕсене
каланă: эсир капла мĕн турăр? ман пек
çын çакна сисме пултарасса эсир пĕл-
мен-и-мĕн? тенĕ. [16]Иуда каланă: хамăр
хуçамăра пирĕн мĕн калас-ха? мĕн теес-
ха? мĕнле тӳрре тухас-ха? Турă санăн
чурусен суйине тупрĕ; акă эпир пурсăмăр
та, камăн аллинче курка тупнă — çавă
та, хамăр хуçамăрăн чури пулатпăр, тенĕ.
[17]Анчах [Иосиф] çапла каланă: çук, эпĕ
апла тăвассăм çук; камăн аллинче курка
тупăннă, çавă манăн чура пулĕ, эсир лăп-
ланса хăвăр аçăр патне кайăр, тенĕ.

[18]Иуда ун патне çывăха пынă та каланă:
эй хуçамăм, хăвăн чуруна хамăн хуçама
сăмах калама парсамччĕ, хăвăн чуруна
ан çилленсемччĕ: эсĕ фараонпа пĕрех-
çке. [19]Манăн хуçамăм хăйĕн чурисенчен:
сирĕн аçăр е тăванăр пур-и? тесе ыйтса-
ччĕ. [20]Эпир хамăр хуçамăра каларăмăр:
пирĕн ватăлса çитнĕ аттемĕр пур, [унăн]
ватăлмалăх кунĕнче çуралнă кĕçĕн ыва-
лĕ пур, унăн пĕртăванĕ вилчĕ, вăл вара
амăшĕнчен пĕчченех тăрса юлчĕ, ашшĕ
ăна юратать, терĕмĕр. [21]Эсĕ хăвăн чурусе-
не каларăн: илсе килĕр ăна ман патăма,
курам ăна, терĕн. [22]Эпир хамăр хуçамă-
ра каларăмăр: ача хăйĕн ашшĕне пĕччен
хăвараймасть, вăл ашшĕнчен уйăрăлса
кайсассăн, ашшĕ вилет, терĕмĕр. [23]Анчах
эсĕ хăвăн чурусене каларăн: сирĕнпе пĕр-
ле кĕçĕн шăллăр килмесессĕн, эсир урăх
манăн куçăм умне ан курăнăр, терĕн.
[24]Эпир, санăн чуру патне, хамăр аттемĕр
патне, çитсессĕн, ăна хамăр хуçамăрăн
сăмахне каласа патăмăр. [25]Пирĕн атте:
татах кайăр, кăштах тырă илсе килĕр,
терĕ. [26]Эпир каларăмăр: пирĕн кайма
юрамасть; пирĕнпе пĕрле кĕçĕн шăллă-
мăр пырсассăн кайăпăр, мĕншĕн тесессĕн
пирĕнпе пĕрле кĕçĕн шăллăмăр пулмаса-
ссăн, пирĕн çав çыннăн куçне курăнма
юрамасть, терĕмĕр. [27]Санăн чуру, пирĕн
атте, пире каларĕ: эсир манăн арăмăм
мана икĕ ывăл çуратса панине пĕлетĕр;
[28]пĕри мана пăрахса кайрĕ, эпĕ: ăна тис-

44-мĕш сыпăк. **[4]** Пс 37:21. **[9]** Пулт 31:32. **[13]** Пулт 37:29. **[19]** Пулт 43:7. **[20]** Пулт 42:13. **[23]** Пулт 43:5. **[25]** Пулт 43:2. **[28]** Пулт 37:33.

кер кайăк çурса пăрахрĕ ахăр, терĕм; эпĕ
ăна çак таранчченех курмарăм; [29]кăна та
куçăм умĕнчен илсе кайсассăн, ăна пĕр-
пĕр инкек пулас пулсассăн, эсир мана
ватăлмалăх кунăмра хуйхăртсах тупăка
кĕртетĕр, терĕ. [30]Халĕ эпĕ санăн чуру
патне, хамăрăн аттемĕр патне, çитсес-
сĕн, унăн чунĕ юратакан ачи пирĕнпе
пĕрле пулмасассăн, [31]вăл ачи çуккине
курĕ те вилсе выртĕ; çапла санăн чурусем
санăн чуруна, хамăрăн аттемĕре, ватăлм-
малăх кунĕнче кулянтарса тупăка кĕр-
тĕç. [32]Çитменнине тата эпĕ, санăн чуру,
ачашăн атте умĕнче явап тытма пултăм,
эпĕ: ăна сан патна илсе килмесессĕн,
[ăна санăн куçу умне тăратмасассăн,] эпĕ
аттем умĕнче пĕтĕм кунçулăм тăршшĕпе
айăплă пулăп, терĕм. [33]Çапла ĕнтĕ эпĕ,
санăн чуру, ача вырăнне хам хуçамăм
чури пулса юлам, ача вара хăйĕн пиччĕшĕ-
семпе пĕрле кайтăр, [34]мĕншĕн тесессĕн,
ача манпа пĕрле пулмасассăн, эпĕ аттем
патне епле каям? апла эпĕ аттеме çитсе
çапнă хурлăха курмалла пулатăп, тенĕ.

45 [1]Иосиф вара текех чăтса тăрай-
ман, хăй тавра тăракан мĕнпур
çын умĕнчех: ман патăмран пурне те
кăларса ярăр! тесе кăшкăрса янă. Хăйне
тăванĕсене паллаттарнă чухне Иосиф па-
тĕнче никам та пулман. [2]Вăл уласа йĕрсе
янă, çакна Египет çыннисем те илтнĕ, фа-
раон çуртĕнчисем те илтнĕ. [3]Иосиф хăйĕн
тăванĕсене каланă: эпĕ — Иосиф, манăн
аттем сывă-и-ха? тенĕ. Анчах тăванĕсем
ăна хирĕç нимĕн те чĕнеймен: вĕсем ун
умĕнче аванмарланса тăнă.

[4]Вара Иосиф хăйĕн тăванĕсене каланă:
ман патăма çывăхарăр-ха, тенĕ. Вĕсем
çывăха пырса тăнă. Вăл каланă: эпĕ —
Иосиф, хăвăр Египета сутса янă тăванăр;
[5]анчах халĕ ĕнтĕ ан кулянăр, мана кунта
сутса янăшăн ан ӳкĕнĕр: мана Турă си-
рĕн пурăнăçăра упрама сирĕн умăртан
янă; [6]çĕр çинче икĕ çул выçлăх пырать:
тата пилĕк çул [юлать], çак çулсенче су-
халамĕç те, вырмĕç те; [7]сире çĕр çин-
чен пĕтерес мар тесе, сирĕн пурăнăçăра
тĕлĕнмелле хăтарса хăварас тесе, Турă
мана сирĕн умăртан ячĕ. [8]Çапла, мана
кунта эсир яман, Турă янă, Вăл мана
фараон ашшĕ туса хучĕ, унăн пĕтĕм ки-
лĕ-çурчĕн пуçлăхĕ турĕ, пĕтĕм Египет
çĕрне тытса тăраканĕ турĕ. [9]Хăвăртрах
аттем патне кайăр та калăр ăна: санăн
ывăлу Иосиф çапла калать, тейĕр: Турă
мана пĕтĕм Египет пуçлăхĕ туса лартрĕ;
ман патăма кил, ан вăрахла; [10]эсĕ Гесем
çĕрĕнче пурăнăн; эсĕ те, санăн ывăлусем
те, ывăлусен ывăлĕсем те, вак выльăху
та, шултăра выльăху та, санăн мĕн пурри
йăлтах ман çывăхра пулĕ; [11]сана çавăн-
та тăрантарса усрăп, мĕншĕн тесессĕн
выçлăх тата пилĕк çул пулмалла, эсĕ,
санăн кил-йышу, санăн мĕн пурри ва-
ра çука юлмĕ, тейĕр. [12]Çакна сире хам
чĕлхе-çăварăмпа каланине сирĕн куçăр
та, манăн пĕртăванăм Вениамин куçĕ те
курать; [13]аттеме манăн Египетри пĕтĕм
чапăм çинчен, хăвăр мĕн курни çинчен
пурне те каласа парăр, аттеме хăвăртрах
кунта илсе килĕр, тенĕ. [14]Вăл Вениамина,
хăйĕн шăллĕне, мăйĕнчен ыталаса илсе
йĕрсе янă; Вениамин та унăн мăйĕнчен
уртăнса йĕнĕ. [15]Вăл хăйĕн пур тăванне
те чуптуса тухнă, вĕсене ыталаса йĕнĕ.
Унтан тăванĕсем унпа калаçнă.

[16]Иосиф тăванĕсем килни çинчен фара-
он çуртне те хыпар çитнĕ, фараон хăй
те, унăн чурисем те çакăншăн кăмăллă
пулнă. [17]Фараон Иосифа каланă: хăвăн
тăванусене кала: эсир акă çапла тăвăр:
выльăхăрсем çине [тырă] тийĕр те Хана-
ан çĕрне кайăр, те; [18]хăвăр аçăра, килĕр-
йышăра илĕр те ман патăма тухса килĕр;
эпĕ сире Египет çĕрĕнче чи лайăх [вы-
рăн] парăп, эсир паха çĕр çимĕçĕ çисе
пурăнăр, те. [19]Сана тата калама хушатăп:
çапла тăвăр: хăвăр ачăрсем валли, хăвăр
арăмăрсем валли Египет çĕрĕнчен чаплă
урапасем илсе кайăр, аçăра илĕр те кунта

[29] Пулт 42:38. **[31]** Пулт 37:35. **[32]** Пулт 43:9.
45-мĕш сыпăк. [1] Ап ĕçс 7:13. Пулт 42:7. **[4]** Ап ĕçс 7:13. **[5]** Пулт 50:20. **[8]** Ăсл 10:14. Пулт 50:20. **[9]** Ап ĕçс 7:14. **[10]** Пулт 46:28. **[14]** Пулт 33:4; 46:29. **[15]** Тух 4:27. **[18]** Пулт 47:6, 11. Пс 144:14; 147:3.

килӗр; [20]хăвăр япалăрсене ан хӗрхенӗр,
эпӗ сире пӗтӗм Египет çӗрӗнчи чи лайăх
япаласене парăп, те, тенӗ.
[21]Израиль ывăлӗсем çапла тунă та. Фа-
раон хушнипе Иосиф вӗсене чаплă урапа-
сем панă, çул çине мӗн кирлине парса
янă, [22]улăштарса тăхăнма пурне те тум-
тир панă, Вениамина вара виççӗр сикль
кӗмӗл тата улăштарса тăхăнма пилӗк
тумтир панă; [23]ашшӗ валли те вунă ашак
çине Египет çӗрӗнчи чи лайăх япаласем
тиесе янă, ашшӗ валли çула тухмашкăн
вунă ама ашак çине тырă, çăкăр тата
тӗрлӗ апат-çимӗç тиесе янă. [24]Вара тă-
ванӗсене ăсатса янă, вӗсем кайнă. Вӗсе-
не: çул çинче ан хирӗçӗр, тенӗ. [25]Вӗсем
Египетран тухса кайнă та Иаков патне,
хăйсен ашшӗ патне, Ханаан çӗрне пырса
çитнӗ, [26]вара ăна çапла каласа пӗлтернӗ:
[санăн ывăлу] Иосиф чӗрӗ, халӗ вăл пӗ-
тӗм Египет çӗрӗнче пуçлăх пулса тăрать,
тенӗ. Анчах унăн чӗри вăрка пуçланă, вăл
вӗсене ӗненме те пултарайман. [27]Вӗсем
ăна хăйсене Иосиф каласа янă сăмахсе-
не пурне те каласа панă, вăл ӗнтӗ хăйне
илсе каймашкăн Иосиф парса янă чаплă
урапасене те курнă, вара Иаковăн, вӗ-
сен ашшӗн, чунӗ хӗпӗртесе кайнă, [28]вара
Израиль каланă: [мана ку] çитет ӗнтӗ,
Иосиф ывăлăм чӗрӗ иккен-ха; хам вили-
ччен кайса курам ăна, тенӗ.

46 [1]Хăйӗн мӗн пуррине йăлтах илсе,
Израиль тапранса тухнă, Вирсави-
яна çитнӗ те хăйӗн ашшӗн Исаакăн Тур-
рине парнесем кӳнӗ. [2]Израиле çӗрле Турă
курăннă, ăна каланă: Иаков! Иаков! тенӗ.
Вăл: эпӗ кунтах, тенӗ. [3]Турă каланă: Эпӗ
Турă, санăн аçун Турри; Египета кайма
ан хăра, Эпӗ унта санран аслă халăх кă-
ларăп; [4]Эпӗ санпа пӗрле Египета пырăп,
Эпех сана каялла илсе тухăп. Санăн куç-
на Иосиф хăй аллипе хупӗ, тенӗ. [5]Иаков
Вирсавияран тапранса кайнă; Израиль
ывăлӗсем хăйсен ашшӗне Иакова, хăй-
сен ачи-пăчине, хăйсен арăмӗсене фараон
Иакова илсе пыма парса янă чаплă ура-
пасем çине лартса илсе кайнă. [6]Вӗсем
хăйсен выльăхӗ-чӗрлӗхне тата Ханаан
çӗрӗнче пуçтарнă пурлăхне илсе Египета
çитнӗ,— Иаков хăй те, унпа пӗрле унăн
мӗнпур йăхӗ те çитнӗ. [7]Вăл хăйпе пӗрле
хăйӗн ывăлӗсене, ывăлӗсен ывăлӗсене,
хăйӗн хӗрӗсене, хӗрӗсен хӗрӗсене, хăйӗн
мӗнпур йăхне Египета ертсе килнӗ.
[8]Египета çитнӗ Израиль ывăлӗсен ячӗ-
сем çаксем: Иаковпа унăн ывăлӗсем.
Иаковăн малтанхи ывăлӗ Рувим. [9]Рувим
ывăлӗсем: Ханох тата Фаллу, Хецрон
тата Харми. [10]Симеон ывăлӗсем: Иему-
ил тата Иамин, тата Огад, тата Иахин,
тата Цохар, тата Ханаан арăмӗн ывăлӗ
Саул. [11]Левий ывăлӗсем: Гирсон, Кааф
тата Мерари. [12]Иуда ывăлӗсем: Ир тата
Онан, тата Шела, тата Фарес, тата Зара;
Ирпа Онан Ханаан çӗрӗнчех вилнӗ. Фа-
рес ывăлӗсем Есром тата Хамул пулнă.
[13]Иссахар ывăлӗсем: Фола тата Фува, Иов
тата Шимрон. [14]Завулон ывăлӗсем: Серед,
Елон тата Иахлеил. [15]Çаксем Лия Иакова
Месопотамире çуратса панă ывăлӗсем,
Лия тата Дина ятлă хӗрне çуратса панă.
Ывăлӗсемпе хӗрӗсем мӗнпурӗ вăтăр виçӗ
чун пулнă. [16]Гад ывăлӗсем: Цифион тата
Хагги, Шуни тата Эцбон, Ери тата Аро-
ди, тата Арели. [17]Асир ывăлӗсем: Имна
тата Ишва, тата Ишви, тата Бриа, тата
вӗсенӗн йăмăкӗ Серах. Бриа ывăлӗсем:
Хевер тата Малхиил. [18]Кусем Лаван хăйӗн
хӗрне Лийăна парса янă Зелфăн ывăлӗ-
сем; Зелфа Иакова вунултă чун çуратса
панă. [19]Рахилӗн, Иаков арăмӗн, ывăлӗсем:
Иосиф тата Вениамин. [20]Египет çӗрӗнче
Иосифăн Манассияпа Ефрем çуралнă,
вӗсене ăна Асенефа — Потиферăн, Или-
ополь хули апăсӗн, хӗрӗ — çуратса панă.
[21]Вениамин ывăлӗсем: Бела, Бехер тата
Ашбел; [Бела ывăлӗсем:] Гера тата На-
аман, Ехи тата Рош, Муппим тата Хуп-

[21] Ап ӗçç 7:14. **[28]** Пулт 46:30.
46-мӗш сыпăк. [1] Тух 1:1. Йыш 20:15. Аст 10:22. **[4]** Пулт 50:1. **[5]** Ап ӗçç 7:15. **[6]** Нав 24:4. Пс 104:23. Ис 52:4. **[8]** Тух 1:1–2; 6:14. Йыш 26:5. 1 Çулс 5:1, 3. **[10]** 1 Çулс 4:24. **[11]** 1 Çулс 6:1. Тух 6:16. Йыш 3:17. **[12]** Пулт 38:2–3. 1 Çулс 2:3; 4:1. **[13]** 1 Çулс 7:1. **[14]** Йыш 26:26. **[16]** Йыш 26:15. **[17]** 1 Çулс 7:30. **[20]** Пулт 41:50–52. **[21]** 1 Çулс 7:6; 8:1.

пим, тата Ард. 22Кусем Рахиль Иакова
çуратса панă ывăлёсем, пурё вунтăватă
чун. 23Дан ывăлё: Хушим. 24Неффалим
ывăлёсем: Иахцеил тата Гуни, тата Иецер,
тата Шиллем. 25Кусем Лаван хăйён хёр-
не Рахиле парса янă Валлăн ывăлёсем;
вăл Иакова пурё çичё чун çуратса панă.
26Иаковпа пёрле Египета пынисем, ун-
ран çуралса ўснисем, Иаков ывăлёсен
арăмёсене шутламасассăн, пурё утмăл
ултă чун. 27Иосифăн Египетра çуралнă
ывăлёсем икё чун. Иаковăн [хăйпе пёр-
ле] Египета куçнă килё-йышё мёнпурё
çитмёл [пилёк] чун.

28Иосиф Гесем çулне кăтарттăр тесе,
Иаков Иудăна хăй умёнчен Иосиф патне
янă. Вёсем Гесем çёрне çитнё. 29Иосиф
хăйён чаплă урапине кўлтернё те хăйён
ашшёне Израиле кётсе илмешкён Гесем
çёрне кайнă; ашшёне курсассăн, ăна ыта-
ласа илнё те унăн ытамёнче чылайччен
йёнё. 30Израиль Иосифа каланă: халё ён-
тё, санăн сăнна курнă хыççăн, эсё чёрех
иккенне курнă хыççăн, манăн вилсессён
те юрать, тенё. 31Иосиф хăйён тăванёсене,
ашшён кил-йышне каланă: эпё каям та
фараона хыпар тăвам, ăна: манăн Ханаан
çёрёнче пурăнакан тăванăмсем, манăн
аттемён килё-йышё ман патăма килчёç,
теем; 32çак çынсем — сурăх кётўçисем, вё-
сем выльăх ураскан çынсем; вёсем хăйсен
вак выльăхне те, шултăра выльăхне те,
хăйсен мён пуррине йăлтах илсе килнё,
теем. 33Фараон сире чёнтерсе: эсир мён ёç
туса пурăнатăр? тесе ыйтсассăн, 34хăвăра
Гесем çёрне вырăнаçтарччăр тесе, эсир
çапла калăр: эпир, санăн чурусем — ха-
мăр та, пирён аттесем те — мён ачаран-
пах выльăх пăхатпăр, тейёр. Мёншён тесе-
ссён сурăх кётекен кирек кам та Египет
çыннисемшён ирсёр, тенё.

47 1Иосиф вара фараон патне пы-
нă та хыпар тунă, вăл каланă:
манăн аттем, манăн тăванăмсем хăйсен
вак выльăхёпе, шултăра выльăхёпе, хăй-
сен мён пуррине йăлтах хăйсемпе пёрле
илсе Ханаан çёрёнчен килчёç; акă ёнтё
вёсем халё Гесем çёрёнче, тенё. 2Вăл
хăйён тăванёсенчен пиллёкёшне фара-
он умне илсе пырса тăратнă. 3Фараон
унăн тăванёсене каланă: эсир мён ёç-
лесе пурăнатăр? тенё. Вёсем фараона
каланă: эпир, санăн чурусем — хамăр
та, пирён аттесем те — сурăх кётўçисем,
тенё. 4Вёсем фараона тата каланă: Ханаа-
ан çёрёнче хаяр выçлăх, унта хамăрăн,
санăн чурусен, выльăхне кётме кётўлёх
çук, çавăнпа эпир çак çёрте пурăнас те-
се килтёмёр; ёнтё хăвăн чурусене Гесем
çёрне вырăнаçма ирёк парсамччё, тенё.
5Вара фараон Иосифа каланă: аçупа тă-
ванусем сан патна килнё; 6Египет çёрё
санăн умăнта; хăвăн аçупа тăванусене
çак çёре чи лайăх вырăна вырăнаçтар;
вёсем Гесем çёрёнче пурăнччăр; вёсем
хушшинче пултаруллă çынсем пуррине
пёлетён пулсассăн, вёсене манăн выльăх-
чёрлёхе тёрёслесе тăракансем ту, тенё.
7Иосиф хăйён ашшёне Иакова илсе пынă
та фараон умне тăратнă; Иаков фараона
пилленё. 8Фараон Иакова каланă: эсё
пурăнан кунçул миçе çул пулать ёнтё?
тенё. 9Иаков фараона каланă: эпё çёр
çинче çўре пуçлани çёр вăтăр çул ёнтё;
эпё пурăннă кунçул сахал та телейсёр
пулчё, хамăн аттесем çўресе ирттернё
кунçула çитеймерё, тенё. 10Вара Иаков
фараона пилленё те ун патёнчен тухса
кайнă. 11Иосиф хăйён ашшёпе тăванёсе-
не вырăнаçтарнă, вёсене, фараон хушнă
пек, Египет çёрёнчи чи лайăх çёрте, Раам-
сес çёрёнче, вырăн панă. 12Иосиф хăйён
ашшёне, тăванёсене, ашшён пётём кил-
йышне — кашни кил-йыша мён чухлё
кирлё, çав таран — тырă парса тăнă.

13Пётём çёр çинче тырă пулман, мён-
шён тесессён выçлăх хаярланнăçемён ха-
ярланса пынă; выçлăхпа Египет çёрё те,

[23] Йыш 26:42. **[24]** Йыш 26:48. 1 Çулс 7:13. **[27]** Тух 1:5. Аст 10:22. Ап ёçс 7:14. **[29]** Пулт 33:4; 45:14. **[30]** Пулт 45:28. Лк 2:29–30. **[31]** Пулт 47:1. **[34]** Пулт 47:6, 27; 43:32.

47-мёш сыпăк. **[1]** Пулт 46:31. Ап ёçс 7:14–15. **[3]** Пулт 46:33–34. **[6]** Пулт 34:10. **[9]** Пс 118:19. Евр 11:13; 13:14. **[11]** Тух 1:11. **[12]** Сир 49:17.

Ханаан çĕрĕ те хăрăнса çитнĕ. 14Иосиф
Египет çĕрĕнчи тата Ханаан çĕрĕнчи мĕн-
пур кĕмĕле, тырăшăн тӳленĕ кĕмĕле, пĕ-
тĕмпех пуçтарнă та фараон килне панă.
15Египет çĕрĕнче те, Ханаан çĕрĕнче те
кĕмĕл юлман. Египет çыннисем пурте
Иосиф патне пынă та каланă: пире ты-
рă парсамччĕ; кĕмĕл пĕтнипе халĕ ĕнтĕ
пирĕн сан умăнтах вилмелле-и? тенĕ.
16Иосиф каланă: кĕмĕлĕр пĕтрĕ пулсас-
сăн, выльăхăра хăваласа килĕр, эпĕ сире
выльăхăршăн [тырă] парăп, тенĕ. 17Вĕсем
хăйсен выльăхне Иосиф патне хăваласа
пынă; Иосиф вĕсене лашисемшĕн, вак
выльăх кĕтĕвĕсемшĕн, шултăра выльăх
кĕтĕвĕсемшĕн, ашакĕсемшĕн тырă панă;
çав çулхине вăл вĕсене мĕнпур выльăхĕ-
шĕн тырă парса тăнă. 18Ку çул иртсе кай-
нă; вĕсем тепĕр çулхине те ун патне пынă
та каланă: кĕмĕл пĕтнине, пирĕн выльăх
кĕтĕвĕсем хуçамăр аллине куçнине эпир
хамăр хуçамăртан пытараймастпăр; ĕнтĕ
хамăр ӳтсĕр пуçне, хамăр çĕрсĕр пуçне
хуçамăр умĕнче пирĕн нимĕн те юлмарĕ;
19мĕншĕн пирĕн хамăрăн та, хамăрăн çĕ-
рĕмĕрсен те санăн куçу умĕнчех пĕтес-ха?
тырăшăн пире хамăра та, пирĕн çĕрсене
те ил, вара эпир çĕрĕ-мĕнĕпех фараон
чурисем пулăпăр, эсĕ пире вăрлăх пар,
эпир чĕрĕ юлар, вилер мар, çĕр пушанса
ан юлтăр, тенĕ.
20Вара Иосиф пĕтĕм Египет çĕрне фа-
раон валли туяннă: выçлăх аптăратса
çитернипе Египет çыннисем пурте хăйсен
хирĕсене сутса янă. Çĕр фараона пулнă.
21Вăл халăха та Египетăн пĕр вĕçĕнчен
пуçласа тепĕр вĕçне çитичченех чура туса
хунă. 22[Иосиф] апăссен çĕрне çеç туян-
ман, мĕншĕн тесессĕн апăссене фараон
çĕрĕнчен пай татса панă, вĕсем фараон
татса панă çĕртен тăранса пурăннă; ça-
вăнпа вĕсем хăйсен çĕрне сутман. 23Вара
Иосиф халăха каланă: акă эпĕ халĕ сире
хăвăра та, сирĕн çĕрĕре те фараон валли
илтĕм; акă сире вăрлăх, çĕре акса ту-
хăр; 24вырса илсессĕн, пиллĕкĕмĕш пайне
фараона парăр, тăватă пайĕ хăвăра хире
акса хăварма, хăвăра, хăвăр килĕртисене
тăранса пурăнма, хăвăр ачăрсене тăран-
са пурăнма юлĕ, тенĕ. 25Вĕсем: эсĕ пире
вилĕмрен хăтартăн; ĕнтĕ хамăр хуçамăр
куçĕ умĕнче ырăлăх тупар, фараон чури
пулар, тенĕ. 26Иосиф çакна Египет çĕрĕн-
чи саккун туса хунă, вăл çак кунченех
çапла пырать: пиллĕкĕмĕш пая фараона
памалла, апăссен çĕрĕнчен çеç фараона
памалла мар, мĕншĕн тесессĕн ку — фа-
раон çĕрĕ мар.
27Израиль Египет çĕрĕнче, Гесем çĕрĕн-
че, пурăннă, ку çĕр вĕсен пулнă, вĕсем
ĕрченĕ, питĕ йышлăланса çитнĕ. 28Иаков
Египет çĕрĕнче вунçичĕ çул пурăннă;
Иаковăн ĕмĕрĕ, вăл пурăннă кунçул, çĕр
хĕрĕх çичĕ çул пулнă.
29Израилĕн вилес вăхăчĕ çитнĕ, вăл хă-
йĕн ывăлне Иосифа чĕнсе илнĕ те ăна
каланă: эпĕ санăн куçу умĕнче ырăлăх
тупрăм пулсассăн, аллуна манăн пĕççĕм
çине хур та: «сана ырă тăвăп, тĕрĕс пулăп,
сана Египетра пытармăп» тесе тупа ту;
30эпĕ хамăн аттесемпе пĕрле выртам; эсĕ
мана Египетран илсе тухăн та аттемсене
пытарнă вырăна пытарăн, тенĕ. Иосиф:
эсĕ каланă пек тăвăп, тенĕ. 31Тата каланă:
мана тупа ту, тенĕ. Иосиф ăна тупа ту-
нă. Вара вырăн çинче выртакан Израиль
пуçне тайса илнĕ*.

48 1Кăштах вăхăт иртсессĕн Иосифа
каланă: акă санăн аçу чирлĕ выр-
тать, тенĕ. Вăл хăйпе пĕрле икĕ ывăлне,
Манассияпа Ефрема, илнĕ [те Иаков пат-
не кайнă]. 2Иакова хыпар туса каланă:
акă сан патна Иосиф ывăлу килет, тенĕ.
Израиль хăйĕн халне пухса вырăнĕ çине
тăрса ларнă. 3Иаков Иосифа каланă: Пур-
не те Пултаракан Турă мана Лузра — Ха-
наан çĕрĕнче — курăнса, мана пиллерĕ,
4Вăл мана каларĕ: акă Эпĕ сана ĕрчетĕп,
сана йышлă тăвăп, санран темĕн чухлĕ

* Грекла куçарнинчен: туйин çӳл вĕçне пăхса пуçне тайса илнĕ.

[27] Тух 5:5. Пс 104:24. **[29]** Пулт 24:2; 50:5. **[30]** Пулт 23:19; 50:13. **[31]** Пулт 50:5. Евр 11:21.
48-мĕш сыпăк. [3] Пулт 28:13. **[4]** Пулт 13:16; 35:11–12; 41:52.

тӗрлӗ халăх кăларăп, çак çӗре сан хыççăн
килес тăхăмна ӗмӗрлӗхе еткерлӗхе парăп,
терӗ. 5Халӗ ӗнтӗ санăн икӗ ывăлу — сана
Египетра çуратса панăскерсем, эпӗ сан
патна Египета киличчен çуралнăскер-
сем — манăн ывăлсем вӗсем; Рувимпа
Симеон пекех, Ефремпа Манассия манăн
пулӗç; 6вӗсем хыççăн çуралас ачусем вара
санăн пулӗç; вӗсем хăйсен пиччӗшӗсен
ячӗпе вӗсен еткер çӗрне ята кӗрӗç. 7Эпӗ
Месопотамирен таврăннă чухне Ханаан
çӗрӗнче, çул çинче, Ефрафăна çитесси
кăшт çеç юлсассăн, манăн Рахилӗм [са-
нăн аннў] вилчӗ, эпӗ ăна унта Ефрафă-
на — хальхи Вифлеема — каякан çул хӗр-
рине пытарса хăвартăм, тенӗ.

8Израиль Иосиф ывăлӗсене курнă та:
кусем камсем? тенӗ. 9Иосиф хăйӗн ашшӗ-
не каланă: кусем — Турă мана кунта панă
ывăлăмсем, тенӗ. [Иаков] каланă: вӗсене
ман патăма çывăхарах илсе кил-ха, вӗсе-
не пиллем эпӗ, тенӗ. 10Ватăлнипе Израи-
лӗн куçӗ йăвашланнă; вăл витӗрех курай-
ман. Иосиф вӗсене ун патне илсе пынă,
Израиль вӗсене чуптуса, ыталаса илнӗ.
11Израиль Иосифа каланă: эпӗ санăн сăн-
на курасса сунманччӗ; акă Турă мана са-
нăн ачусене те кăтартрӗ, тенӗ. 12Иосиф,
вӗсене Иаков чӗрçийӗ патӗнчен аяккарах
тăратса, ашшӗне çӗре ӳксе пуççапнă.
13Унтан Иосиф [хăйӗн ывăлӗсене] иккӗш-
не те çавăтнă та Ефрема хăйӗн сылтăм
аллипе тытса Израилӗн сулахай аллине
хирӗç, Манассияна сулахай аллипе тытса
Израилӗн сылтăм аллине хирӗç пырса
тăратнă. 14Анчах Израиль хăйӗн сылтăм
аллине тăснă та ăна Ефрем пуçӗ çине,
кӗçӗннин пуçӗ çине, хунă, сулахаййине
Манассия пуçӗ çине хунă. Манассия мал-
танхи ывăл пулнă пулин те, çавна пӗлсех
вăл аллисене çапла хунă. 15Вăл Иосифа
пиллесе каланă: манăн Авраампа Иса-
ак аттемсем Турă умӗнче çӳренӗ, çав Ту-
рă, мана мӗн çуралнăранпа çак кунччен
пăхса усракан Турă, 16мана пур тӗрлӗ
усалтан хăтарса тăракан Ангел çак ача-
сене пиллетӗр; манăн ятăмпа Авраампа
Исаак аттемсен ячӗсем вӗсем çинче пулч-
чăр, вӗсем çӗр çинче темӗн чухлӗ ӗрче-
се-хунаса кайччăр, тенӗ.

17Иосиф хăйӗн ашшӗ сылтăм аллине
Ефрем пуçӗ çине хунине курнă; вăл ça-
каннăн пăшăрханса ӳкнӗ. Вара вăл аш-
шӗн аллине тытнă та ăна Ефрем пуçӗ
çинчен Манассия пуçӗ çине илсе хума
тăнă, 18Иосиф хăйӗн ашшӗне каланă: эй
аттем, апла мар, малтанхи — акă, хăвăн
сылтăм аллуна унăн пуçӗ çине хурсам,
тенӗ. 19Анчах ашшӗ килӗшмен, вăл: пӗ-
летӗп, ывăлăм, пӗлетӗп; унран та халăх
тухӗ, вăл та аслă пулӗ; анчах унăн шăл-
лӗ унран аслăрах пулӗ, унăн вăрлăхӗн-
чен йышлă халăх тухӗ, тенӗ. 20Çав кун
вăл вӗсене çапла каласа пилленӗ: сирӗн
ятăрсем Израильшӗн пиллӗх пек пулӗç,
Израиль ывăлӗсем: «Турă сана Ефремпа
Манассия пек тутăр» тесе пиллӗç, тенӗ.
Вара Ефрема Манассияран аслă туса ху-
нă. 21Израиль Иосифа каланă: акă эпӗ
вилетӗп; Турă сирӗнпе пӗрле пулӗ, си-
ре хăвăр açăрсен çӗрне каялла тавăрӗ;
22сана эпӗ, хăвăн тăванусенчен ирттерсе,
пӗр пай ытларах çӗр паратăп, эпӗ ăна
аморрейсен аллинчен хам хӗçӗмпе, хам
уххăмпа туртса илтӗм, тенӗ.

49 1Иаков хăйӗн ывăлӗсене чӗнсе ил-
нӗ те каланă: пухăнăр, эпӗ сире
килес кунсенче хăвăра мӗн пулассине ка-
ласа хăварам.

2Эй Иаков ывăлӗсем, пуçтарăнăр та ит-
лӗр, хăвăр açăра, Израиле, итлӗр.

3Эй Рувим, малтанхи ывăлăм манăн!
эсӗ — манăн тӗрекӗм, вăй-халăмăн мал-
танхи çимӗçӗ эсӗ, пысăк чыслă, пысăк
хăватлă эсӗ; 4анчах эсӗ шыв пек чарусăр
кӗрлерӗн, халӗ ӗнтӗ асли, çӳлти пулай-
мăн: эсӗ açу вырăнӗ çине хăпартăн, çапла
хăпарса, манăн вырăнăма ирсӗрлетрӗн.

5Симеонпа Левий — пӗртăвансем, вӗсе-
нӗн хӗçӗсем — хаярлăх хӗçӗсем; 6манăн

[5] Пулт 41:50–52. **[7]** Пулт 35:19. **[9]** Пулт 33:5; 27:4. **[10]** Пулт 27:1. 1 Пат 3:2; 4:15. **[14]** Мф 19:15. Евр 11:21. **[16]** Пулт 31:29. **[19]** Аст 33:16. **[20]** Руфь 4:11. Аст 33:17. Иер 31:20. **[22]** Нав 24:32. Ин 4:5.
49-мӗш сыпăк. [1] Аст 33:1. **[3]** Пулт 29:32. Аст 21:17. **[4]** Пулт 35:22. 1 Çулс 5:1. **[5]** Пулт 34:25. Иудифь 9:2. **[6]** Пулт 34:26.

чунăм вĕсен канашне ан кĕтĕр, манăн
мухтавăм вĕсен пухăвне ан пĕлтĕр; вĕсем,
çилли тулса çитсессĕн, ар çынна вĕлер-
чĕç, кăмăлне чараймасăр вăкăр шăнăрне
касса татрĕç; [7]вĕсен çилли ылханлă, мĕн-
шĕн тесен тискер вăл, хаярлăхĕ те ылхан-
лă, мĕншĕн тесен усал вăл; вĕсене Иаков
ывăлĕсем хушшинче салатăп, Израиль
ывăлĕсем хушшинче сапалăп.

[8]Эй Иуда! сана тăванусем аслăласа мух-
тĕç. Аллу — тăшманусен ĕнсийĕ çийĕн-
че; сана хăвăн аçун ывăлĕсем пуççапĕç.
[9]Çамрăк арăслан эсĕ, Иуда, ывăлăм, çĕк-
лентĕн, тупăшу тĕлĕнче тăратăн. Лапчăн-
чĕ вăл, выртрĕ, арăслан пек, арăслан ами
пек выртать: ăна кам тăратайĕ? [10]Килĕш-
терекенни киличчен, халăхсем Ăна пар-
ăниччен Иудăран пуçлăх туйи каймĕ, ун
варĕнчен саккун паракан çуралсах тăрĕ.
[11]Вăл ашакĕн тихине иçĕм турачĕ çум-
не кăкарать, чи паха иçĕм турачĕ çумне
ашакĕн ывăлне кăкарать; вăл хăйĕн тум-
тирне эрехпе çăвать, хăйĕн тумне иçĕм
çупкăмĕн юнĕпе çăвать; [12][унăн] куçĕсем
эрехпе çуталса тăраççĕ, [унăн] шăлĕсем
сĕтпе шуралнă.

[13]Завулон тинĕс хĕрринче пурăнĕ, ка-
рапсем чарăнакан тĕлте пурăнĕ, Сидон
таран унăн çĕрĕ.

[14]Иссахар — тĕреклĕ ашак вăл, шыв юп-
писем хушшинче выртакан ашак; [15]вăл
канăç аваннине, çак çĕр илемлине курчĕ:
хулпуççине çĕклем йăтма пĕшкĕртрĕ, хыр-
çă тӳлемешкĕн ĕçле пуçларĕ.

[16]Дан, Израилĕн пĕр йăхĕ пулнă май,
хăй халăхне сут туса тăрĕ; [17]Дан çул çин-
чи çĕлен, сукмак çинчи аспид пулĕ, вăл
ут урине сăхĕ те, юланутçи каялла кай-
са ӳкĕ. [18]Эй Турă, Эсĕ пулăшасса шанса
тăратăп!

[19]Гад — ăна халăх ушкăнĕ хĕстерĕ, анчах
вăл ăна хыçĕнчен хăваласа хӳтерсе ярĕ.

[20]Асирăн тырри-пулли питĕ тулăх; вăл
патша валли çимĕç парса тăрĕ.

[21]Неффалим — çӳллĕ теревинф, хитре
турачĕсене сарса ларать*.

[22]Иосиф — тулăх çимĕç кӳрекен йывăç
хунавĕ, çăлкуç тĕлĕнче ӳсекен, çимĕç кӳ-
рекен йывăç хунавĕ; унăн турачĕсем хӳ-
мерен те çӳллĕрех ӳссе сарăлаççĕ; [23]ăна
кӳрентерчĕç, перекенсем ăна печĕç, ăна
хирĕç тăчĕç, кураймарĕç, [24]анчах уххи
унăн çирĕп пулчĕ, алли унăн тĕреклĕ пул-
чĕ: хăватлă Туррăн — Иаков Туррин — ал-
ли вăй панипе, Кĕтӳçĕ, Израиль тĕрекĕ
пулăшнипе çапла пулчĕ. [25]Вăл — сан аçу-
нăн Турри, Вăл сана пулăшса тăтăр; Вăл —
Пурне те Пултаракан Турă, Вăл сана пил-
летĕр, сана çӳлтен тӳпе пиллĕхĕпе, аялти
тĕпсĕр авăрсен пиллĕхĕпе, сĕтлĕ кăкăр
пиллĕхĕпе, вар пиллĕхĕпе, [26]хăвăн аçу
пиллĕхĕпе пиллетĕр, çак пиллĕх авалхи
тусен пилĕнчен те, ĕмĕрхи сăртсен сипе-
тĕнчен те аслăрах; вăл Иосиф пуçĕ çинче
пултăр, тăванĕсем хушшинчен суйласа
илнĕскерĕн лĕпки çинче пултăр.

[27]Вениамин — çăткăн кашкăр: ирхине
хăй тытнине çийĕ, каçпала тупăшне тă-
пăлтарĕ.

[28]Израилĕн мĕнпур вуникĕ йăхĕ çакă;
вĕсенĕн ашшĕ вĕсене мĕн калани çакă;
вăл вĕсене пилленĕ, кашнине хăйне ти-
вĕçлĕ пиллĕх панă. [29]Вăл вĕсене çапла
хушса хăварнă: эпĕ хамăн канăçлă ха-
лăхăмпа пĕрлешетĕп; мана хет çыннин
Ефронăн хирĕнчи сăрт хăвăлне хамăн
аттемсем çумне пытарăр, [30]çак сăрт хă-
вăлне — Ханаан çĕрĕнчи, Мамре çыва-
хĕнчи Махпела хирĕнчи [сăрт хăвăл-
не] — Авраам хирĕ-мĕнĕпех хăй валли
хет çыннинчен, Ефронран, вилнисене
пытармашкăн туяннă пулнă; мана çав
сăрт хăвăлне пытарăр; [31]унта Авраам-
па унăн арăмне Саррăна пытарнă; унта

* Çапла ăнлантарни те пур: Неффалим — кĕрнеклĕ ту качаки; вăл — паха каларăш ăсти.

[7] Нав 19:1; 21:3. **[8]** 1 Çулс 4:27, 38, 41. **[9]** Йыш 24:9. **[10]** 1 Çулс 5:2. Ин 1:45; 5:46. Мф 2:6. **[11]** Ис 63:1–2. **[12]** Ӳлĕм 1:14. **[13]** Нав 19:10. **[14]** Тӳре 5:15. **[15]** Аст 33:18. **[16]** Тӳре 13:25. **[17]** Тӳре 18:1. **[18]** Пс 118:166. Лк 2:30. **[19]** Йыш 32:17. **[20]** Аст 33:24. **[21]** Тӳре 4:6. **[22]** Пулт 48:16. **[24]** Аст 33:17. **[26]** Аст 33:16. **[27]** Тӳре 20:21, 25, 31. **[28]** Сир 44:26. **[29]** Пулт 25:8; 47:30. **[30]** Пулт 23:16–17; 50:13. Ап ĕçс 7:16. **[31]** Пулт 25:9; 35:29.

Исаакпа унăн арăмне Ревеккăна пытарнă; çавăнтах эпĕ Лийăна пытартăм; 32çав
хире, çав хирти сăрт хăвăлне хетсенчен
туяннă, тенĕ. 33Иаков хăйĕн ывăлĕсене
çапла пиллесе тухнă, унтан урине вы-
рăн çине хунă та вилнĕ, хăйĕн канăçлă
халăхĕпе пĕрлешнĕ.

50 1Иосиф хăйĕн ашшĕ çине ӳксе
ăна чуптăва-чуптăва йĕнĕ. 2Унтан
Иосиф хăйĕн эмелçĕ-тарçисене ашшĕне
ырă шăршăллă çусем сĕрсе тирпейлеме
хушнă; эмелçисем Израиле ырă шăршăл-
лă çусем сĕрсе тирпейленĕ. 3Вăл вилни
хĕрĕх кун çитнĕ: ырă шăршăллă çусем
сĕрсе тирпейлесси çав вăхăта пырать;
Египет çыннисем уншăн çитмĕл кун хур-
ланса хӳхленĕ.

4Иаковшăн хӳхлес кунсем иртсессĕн,
Иосиф фараон таврашĕнчи пуçлăхсене
каланă: эпĕ сирĕн умăрта ырăлăх тупрăм
пулсассăн, эсир фараона çапла каласа
парăр: 5аттем мана çапла тупа тутарчĕ:
акă эпĕ вилетĕп; мана çавăнта, Ханаан
çĕрĕнчи хам алтса тунă тупăклăха, пы-
тарăр, терĕ. Эпĕ халĕ кайăттăм та аттене
пытарса каялла таврăнăттăм тесе калать,
тейĕр, тенĕ. [Иосиф сăмахĕсене фарао-
на каласа панă.] 6Вара фараон каланă:
açу тупа тутарнă пек ту: кай та ăна пы-
тарса кил, тенĕ. 7Иосиф хăйĕн ашшĕне
пытарма кайнă. Унпа пĕрле фараонăн
мĕнпур тарçи, унăн килĕнчи аслă çынсем,
Египет çĕрĕнчи мĕнпур аслă çын кайнă,
8Иосиф килĕнчи мĕнпур çын, унăн пич-
чĕшĕсем, ашшĕ килĕнчи çынсем пурте
кайнă. Гесем çĕрĕнче ачисене çеç, вак
выльăхĕпе шултăра выльăхне çеç хăвар-
нă. 9Иосифпа пĕрле урапаллă çарсемпе
утлă çарсем пынă, çапла халăх питех те
йышлă пулнă. 10Вĕсем Иордан хĕрринчи
Горен-гаатад патне çитнĕ те çавăнта
питĕ хытă макăрнă, темĕн тĕрлĕ йĕнĕ;
Иосиф ашшĕшĕн унта çичĕ кун хушши
хӳхленĕ. 11Çав çĕрте пурăнакансем, хана-
ансем, Горен-гаатад патĕнче хӳхленине
курнă та каланă: ку Египет çыннисем
ытла та татăлса йĕреççĕ! тенĕ. Çавăнпа
ăна [вăл вырăна] «Египет çыннисен Иор-
дан хĕрринчи хӳхлевĕ» теççĕ. 12Иаков
ывăлĕсем вара хăйсенĕн ашшĕне хăй ка-
ласа хăварнă пек тирпейленĕ; 13ывăлĕсем
ăна Ханаан çĕрне илсе кайнă та Махпела
хирĕнчи сăрт хăвăлне пытарнă, Мамре
çывăхĕнчи çав вырăна Авраам хăй валли
хирĕ-мĕнĕпех хет çыннинчен, Ефронран,
вилнисене пытармашкăн туяннă пулнă.
14Ашшĕне пытарнă хыççăн Иосиф хăй те,
унăн тăванĕсем те, унпа пĕрле унăн аш-
шĕне пытарма пынă çынсем те пурте ка-
ялла Египета таврăннă.

15Иосиф тăванĕсем хăйсен ашшĕ вилнĕ
хыççăн каланă: Иосиф пире курайми пул-
сассăн, хăйне усал тунăшăн пире тавăрма
шухăш тытсассăн, мĕн пулать-ха? тенĕ.
16Вĕсем Иосиф патне çапла калама çын
янă: хăй вилес умĕн açу çапла пиллесе
хăварчĕ: 17Иосифа çапла калăр: тăванусем
сана усал тунăччĕ, эсĕ вĕсен айăпне, вĕ-
сен çылăхне каçар, тейĕр, терĕ. Халĕ ĕнтĕ
хăвăн açу Туррийĕн чурисен айăпĕсене
каçарсам, тенĕ. Хăйне çапла каланă чухне
Иосиф йĕрсе тăнă. 18Тăванĕсем хăйсем те
пынă, вĕсем унăн умне ӳксе ăна каланă:
акă эпир санăн чурусем пулатпăр, тенĕ.
19Иосиф каланă: ан хăрăр, эпĕ Турăран
хăратăп; 20акă эсир мана хирĕç усал шу-
хăш тытнăччĕ; анчах та Турă халĕ мĕн
пулнине тумашкăн — йышлă халăх пу-
рăнăçне сыхласа хăвармашкăн — сирĕн
усал шухăшăра ырра çавăрчĕ; 21эппин,
ан хăрăр: эпĕ сире те, сирĕн ачăрсене
те тăрантарса усрăп, тенĕ. Вăл вĕсене
лăплантарнă, вĕсен кăмăлне килмелле
каласнă.

22Вара Иосиф хăй те, унăн ашшĕн ки-
лĕ-йышĕ те Египетра пурăннă; мĕнпурĕ
Иосиф çĕр те вунă çул пурăннă; 23Иосиф
Ефрем ачисене виççĕмĕш сыпăк таранч-
ченех курнă, Манассия ывăлĕн Махирăн
ывăлĕсем те Иосиф чĕрçи çинех çуралнă.

[33] Ап ĕçс 7:15.
50-мĕш сыпăк. [1] Пулт 46:4. **[5]** Пулт 47:29. **[10]** Сир 22:11. **[13]** Ап ĕçс 7:16. Пулт 23:17. **[17]** Пулт 26:24; 31:42. **[20]** Пулт 45:5. **[22]** Пулт 41:46. **[23]** Йыш 32:39.

24Иосиф хăйĕн тăванĕсене каланă: эпĕ
вилетĕп, Турă сирĕн пата килетех, Вăл
сире çак çĕртен Авраама, Исаака тата
Иакова тупа туса пама пулнă çĕре илсе
тухĕ, тенĕ. 25Иосиф Израиль ывăлĕсене
тупа тутарса каланă: Турă сирĕн пата
килсессĕн, манăн шăммăмсене кунтан
илсе тухăр, тенĕ. 26Иосиф çĕр вунă çулта
вилнĕ. Ăна ырă шăршăллă çусем сĕрсе
Египет çĕрĕнче арчана хурса пытарнă.

Моисейĕн иккĕмĕш кĕнеки

ТУХНИ

1 1Иаковпа [хăйсен ашшĕпе] пĕрле,
кашнийĕ хăйĕн [пĕтĕм] килĕ-йышĕ-
пе пĕрле Египета пырса кĕнĕ Израиль
ывăлĕсенĕн ячĕсем акă: 2Рувим, Симеон,
Левий тата Иуда, 3Иссахар, Завулон та-
та Вениамин, 4Дан тата Неффалим, Гад
тата Асир. 5Иаковран çуралнисем пурĕ
çитмĕл [пилĕк] чун пулнă; Иосиф ун чух-
не Египетра пулнă ĕнтĕ. 6Иосиф та, унăн
пур тăванĕ те вилнĕ, вăл сыпăк пĕтĕм-
пе вилсе пĕтнĕ; 7Израиль ывăлĕсем вара
хунаса-ĕрчесе кайнă, çав тери йышлăлан-
са, вăйлăланса пынă, çав çĕр вĕсемпе
тулса çитнĕ.

8Египет çĕрĕнче ĕнтĕ Иосифа пĕлмен
урăх патша ларнă, 9вăл хăйĕн халăхне
каланă: акă Израиль ывăлĕсен халăхĕ
йышлă, пирĕнтен вăйлăрах; 10унран чее-
рех пулар, вăл текех ан ĕрчейтĕр; унсăрăн
вăл, вăрçă хускалас пулсассăн, пирĕн
тăшмансемпе пĕрлешĕ те, пире хирĕç
тăрса, [пирĕн] çĕртен тухса кайĕ, тенĕ.
11Ĕнтĕ Израиль халăхне йывăр ĕçпе хав-
шатмашкăн ăна ĕçлеттерекен пуçлăхсем
суйласа лартнă. Израиль ывăлĕсем вара
фараона сых ятне хатĕрленине тытмалли
хуласем — Пифомпа Раамсес хулисене
[тата Он хулине, урăхла Илиополь пу-
лать] — лартса панă. 12Анчах халăх хăй-
не хавшатнăçемĕн тата йышлăланса пы-
нă, тата ытларах ĕрчесе кайнă, [Египет
çыннисем] ĕнтĕ Израиль ывăлĕсенчен
шиклене пуçланă. 13Çавăнпа та Египет
çыннисем Израиль ывăлĕсене пĕр хĕр-
хенмесĕр пусахласа ĕçлеттернĕ, 14Египет
çыннисем Израиль ывăлĕсене пĕр хĕрхен-
месĕр, йывăр ĕç ĕçлеттерсе — тăм ĕçĕ
тутарса, кирпĕч çаптарса, хирти тĕрлĕ
ĕçе ĕçлеттерсе, кирек мĕнле ĕç тутарнă
чухне те пĕр хĕрхенмесĕр, пусахласа ĕç-
леттерсе — вĕсен пурăнăçне чăтмалла
мар туса çитернĕ.

15Египет патши еврей арăмĕсен эпи кар-
чăкĕсене — вĕсенчен пĕри Шифра, тепĕ-
ри Фуа ятлă пулнă — çапла хушнă, 16[вĕ-
сене] çапла каланă: эсир еврей арăмĕсене
ача çураттарнă чухне астусах тăрăр: ывăл
çуралас пулсассăн — ăна вĕлерĕр, хĕр
пулсассăн — пурăнтăр, тенĕ. 17Анчах эпи
карчăксем Турăран хăранă, вĕсем Египет
патши хушнă пек туман, ачасене чĕрĕ
хăварнă. 18Египет патши эпи карчăксене
чĕнтерсе илнĕ те вĕсене каланă: эсир
мĕншĕн çапла тăватăр, ачасене чĕрĕ хă-
варатăр? тенĕ. 19Эпи карчăксем фараона
каланă: еврей арăмĕсем Египет арăмĕсем
пек мар; вĕсем сывлăхлă, вĕсем хăйсем
патне эпи карчăк пырса çитичченех çу-
ратаççĕ, тенĕ. 20Çакăншăн Турă эпи кар-
чăксене ырăлăх кăтартса тăнă, халăхĕ
вара йышлăланса, çав тери вăйлăланса
пынă. 21Эпи карчăксем Турăран хăраса
пурăннăшăн Вăл вĕсенĕн килне-çуртне
ăнăçлăх парса тăнă.

[24] Евр 11:22. **[25]** Тух 13:19. Нав 24:32.
1-мĕш сыпăк. **[1]** Пулт 46:8. Ап ĕçс 7:15. **[2]** Пулт 46:8. Тух 6:14. **[6]** Пулт 50:26. **[7]** Ап ĕçс 7:17. Пс 104:24. **[12]** Пс 104:24. **[13]** Аст 26:6. Иудифь 5:11. **[16]** Ăсл 18:5. **[21]** 1 Пат 2:35.